№ 3550, 3551, 355, 3507

# ИЛЕМЛЁ ЛИТЕРАТУРА

1943

1

Окончание кн. 3 (15) – см. в середине книги 2 (14), после стр. 88

№ 3550

# ЙĂЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРА

ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕН СОЮЗĔ
КĂЛАРАКАН АЛЬМАНАХ

4-МĔШ ÇУЛ ТУХАТЬ

*ПĔРРЕМĔШ КĔНЕКЕ*

1(13)

Обязательный контрольный экземпляр
ЧУВАШСКАЯ КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР • 1943

# ТУПМАЛЛИ


Стр.

Н-ски дивизири чăваш боецĕсемпе командирĕсем чăваш халăхне. Çыру . . . . . . . . 3

**М. Данилов-Чалдун.**—Фронтри блок-нотран . . . . . . . . 19

**Уйăп Мишши.**—Хура çăхансем (*сăвă*) . . . . . . . . 33

**А. Васильев.**—Тăван халăха (*сăвă*) . . . . . . . . 34

**Аркадий Эсхель.**—Вут чулĕ (*сăвă*) . . . . . . . . 35

**Хветĕр Уяр.**—Сунарçă. Шурлăхри вилĕм (*калавсем*) . . . . . . . . 36

**Стихван Шавлы.**—Ялав (*Сăвă*) . . . . . . . . 45

**Ан. Анат**—тăван çĕр . . . . . . . . 47

**К. Пайраш.**—Тĕлпулу (*калав*) . . . . . . . . 52

**А. Алга.**—Чăваш ачине (*сăвă*) . . . . . . . . 66

**И. Тукташ.** Прозăллă сăвăсем . . . . . . . . 67

**Турхан.**—Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕсем . . . . . . . . 70

**Ухсай Якковĕ.**—Хуркайăксем . . . . . . . . 75

**Фронтри юмор** . . . . . . . . 77


---


**Редактор** А. ЭСХЕЛЬ.

НТ209. Заказ № 1055 Подписано к печати 6.VIII. 1943 г.
Количество печ. знак. в 1 п. л. 40206 Тираж 3.000 экз. Объем 5 п. л.

Типография № 2 Управления Полиграфии при СНК ЧАССР,
гор. Алатырь.

# Н-СКИ ДИВИЗИРИ ЧӐВАШ БОЕЦĔСЕМПЕ КОМАНДИРĔСЕМ ЧӐВАШ ХАЛӐХНЕ ЯНӐ ÇЫРУ

Тӑван халӑх, савнӑ халӑх,
Чаплӑ кунсене ялан,
Ĕмĕр-ĕмĕр асӑнмалӑх
Чĕререн сана салам!

Ӑмӑрткайӑк, тӑван халӑх,
Ху ӳстернĕ чĕпсенчен
Йышӑн эсĕ чун-хавалла
Çырӑва Дон хĕрринчен.

Дон пек çутӑ, Атӑл евĕр
Сарлака кӑмӑлпалан
Çырнӑ сӑмахсем кĕрлеччĕр,
Саралтӑр хĕрӳ салам!

Ял-ял урлӑ, хир-хир урлӑ
Кайтӑр вӑл пӳртрен пӳрте,
Салама итлетĕр улӑх,
Çеçенхир, вӑрман,—пурте!

Пирĕн çакӑ юрӑ ирттĕр
Çичĕ пĕлĕт хушшинчен,
Кӑнтӑрла та, каç та, ир те
Пултӑр халӑх умĕнче.

Вĕлкĕшсе ялав хӑпартӑр
Куславкка уйхирĕнче,
Çиçтĕр вӑл Çĕрпӳ, Улатӑр,
Етĕрне, Вӑрнар çинче.

Эх, тӑван çĕршыв, аннемĕр,
Шан пире, ĕнен пире:
Аслӑ Атӑлӑн илемĕ
Сывӑ пулĕ ĕмĕрех!

Савнӑ халӑх, ӑмӑрткайӑк,
Сан хӑва сӑпку çинче
Ӳснĕ улӑп пек Чапаев,
Ишнĕ Атӑл шывĕнче.

Чĕр юна тумлам-тумламӑн
Хĕрхенмесĕр тӑкрӑмӑр,
Тӑкӑпӑр, анчах та хамӑр
Çĕршыва хӑтарӑпӑр.

Ир те, каç та, кӑнтӑрла та,
Сивĕ чух, тӑман чухне
Пуля, мина та граната
Чикĕпĕр тӑшман пырне.

Пӑшала татах та хытӑн
Тытӑпӑр эпир алла,
Сталиншӑн, Тӑван Çĕршывшӑн
Утӑпӑр малтан мала.

* * *

Савнӑ халӑх, эх, аннемĕр,
Чĕререн сава-сава
Вуласам пĕр сиктермесĕр
Пирĕн çакӑ çырӑва.

Шартлама хаяр хĕл кунĕ
Тӑнӑ чух, Дон хĕрринче
Çыртӑмӑр таса юр хӳнĕ
Дзотсенче, блиндажсенче.

Чи тискер тӑшман окопĕ
Умĕнче, малти ретре,
Çыртӑмӑр; кĕрхи йĕпе пек
Сирпĕнсе тӑчĕ етре.

Çĕр ракета та пĕр уйăх
Çутă сапнă каçсенче
Çыртăмăр эпир, Дон уйĕ
Чĕтĕренĕ кунсенче.

Эх, аннемĕр, савнă халăх,
Пĕл эс вăрçă хирĕнче
Ачусем хĕрсе хастарлăн
Кĕрешсе пыни çинчен.

Печĕ пирĕн артиллери,
Ӳхĕрчĕç самолётсем.
Шур хута эпир тĕрлер-и!?—
Терĕмĕр хĕпĕртесе.

Çыравăн кашни сăмахĕн
Вăйĕнче пур пирĕн юн.
Юмахри пек урхамаххăн
Çĕнтерӳ килет-и йӳн?

Çакă çырăва шăрça пек
Шăрантарнă çынсенчен
Вилнисем те пулĕç,—чапĕ
Пурăнĕ чĕресенче.

Хирсенче тумланнă паттăр
Геройсен чĕр юнĕпе
Çырнă çак çыру хăпартăр,
Асамат кĕперĕ пек.

* * *

Манмăпăр эпир июнĕн
Çирĕм иккĕмĕш кунне,
Астăвăпăр халăх юнĕ
Айăпсăр тăкăннине.

Молотов сасси кĕрлерĕ,
Сарăлчĕ çав кун хыпар:
Вăр-хурах, тĕнче тискерĕ,
Сапса ячĕ шĕл-кăвар.

Мăкăрланчĕ хӳхĕм Киев,
Çулăм сикрĕ Минск çинче,
Сăрханчĕ юн çийĕн-çийĕн
Ялсенче, хуласенче.

Ушкăн-ушкăн ирсĕр кайăк,
Пĕлĕте лапах витсе,
Килчĕ вил çăханĕ майăн
Акăш-макăш ӳлесе.

Эх, çĕршыв, Совет çĕршывĕ!
Куртăн хурлăх та асап.
Юнлă пулчĕ Днепр шывĕ.
Килчĕ вăр-хурах асса.

Тапăнчĕ тăшман ултавлăн,
Систермесĕр, ăнсăртран.
Хирĕç тухрĕ пирĕн халăх
Çурçĕртен кăнтăр таран.

Асăран та аслă Сталин
Йыхравне илтсе эпир,
Пĕр çын пек, пурте хастарлăн
Харăс тăтăмăр çав ир.

— Манăн ывăлсен хăвачĕ
Çапнине, фашизм, пĕл!—
Терĕ халăх, тумлантарчĕ.
Тăхăнтăмăр сăр шинель.

Шыв пек тикĕс ӳснĕ тырă
Сывпуллашрĕ пуç тайса:
Вăрçă çулĕ пултăр ырă,
Юнлă та, анчах таса.

— Нимĕçе вĕлер, тăванăм!—
Терĕ халăх çавă ир,—
Кĕр вута, анчах тăшманăн
Салтакне тапта та ир!

— Нимĕçе пер хĕрхенмесĕр!—
Тесе çырнă енчĕкне
Парнелерĕ чип-чипер хĕр
Кăвар куçлă йĕкĕтне.

— Нимĕçе вĕлер, тăванăм!—
Терĕ хăй упăшкине
Куççульне шăлса хĕрарăм,
Юлчĕ тăлăххăн килне.

— Нимĕçе вĕлер, аттеçĕм!—
Терĕç пирĕн ачасем.
— Нимĕçе вĕлерер!—теççĕ
Вăрмансем, çеçенхирсем.

Каш-кашла, Вăрнар вăрманĕ,
Шавлăр, Елчĕк хирĕсем!
Нимĕçе хирме тухман-и
Аслă Атăл ачисем!..

Савнӑ халӑх, ӑмӑрткайӑк,
Сартӑмӑр ҫунатсене,
Чӗппӳсем, эпир, нумайӑн
Вӗҫрӗмӗр тӑшман ҫине.

* * *

Эх, ҫӗршыв, Совет Ҫӗршывӗ,
Эх, аннемӗр, чунӑмӑр!
Тӑшмана ҫӗнсе чӗр-сывӑ
Пурӑнма хастарлантар!

Хуп-хура тусан ҫӗкленнӗ
Кӑн-кӑвак пӗлӗт таран,
Ҫавраҫил вӗрмест, — ҫӗленӗн
Чашкӑрса килет тӑшман.

Хурҫӑран та хытӑ хурҫӑ
Пул, ҫӗршыв, тӑван анне!
Лапчӑт эсӗ сӗмсӗр, пуҫсӑр
Ҫич юта, фашистсене!

Ҫӗр ҫинчен те, шыв ҫинчен те,
Сывлӑшран, шыв айӗнчен,—
Пинӗ-пинӗпе вилсен те,—
Шурӗ нимӗҫ, тапӑнчӗ.

Кашни шит тӑван тӑпрашӑн,
Кашни ҫуртшӑн, йывӑҫшӑн,
Сӑпкари кашни ачашӑн,
Кашни хӗрӗн чысӗшӗн,

Хамӑр шывшӑн та вӑрманшӑн,
Пурте хамӑрӑн, тесе,
Ҫапӑҫрӑмӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн
Улӑп пек паттӑрӗсем.

Пинӗпе вӗсем, нумайӑн
Хӗрлӗ Ҫар ӗретӗнче!
Эх, ҫӗршывӑм, ӑмӑрткайӑк,
Сан вӑю геройсенче!

* * *

Эх, ҫӗршыв, тӑван аннемӗр,
Хамӑр ҫиллӗмӗр ҫинчен
Калама сӑмах ҫитмест-мӗн,—
Юн вӗрет чӗресенче.

Хӗрӳсем мӑшкӑл кураҫҫӗ,
Немӑн шывӗ хӗрринче
Макӑраҫҫӗ, макӑраҫҫӗ
Инҫетре Дунай ҫинче...

Макӑраҫҫӗ, ирӗн-каҫӑн
Ҫурҫӗре, Мускав енне
Куҫ хурса кӗтсе тӑраҫҫӗ
Ҫӑлӑнӑҫ килессине.

Аслӑ вӑрҫӑ вучӗ витӗр
Хӗрлӗ Ҫар малтан мала
Пырӗ ҫапӑҫса, вӑл ҫитӗ,—
Вӗлкӗшӗ хӗрлӗ ялав.

Пирӗн халӑхӑн куҫҫулӗ
Юхнӑшӑн тавӑрӑпӑр.
Нимӗҫ урчӗ... Шалҫи тулӗ!
Аслати пек ҫапӑпӑр.

Аслӑран та аслӑ Сталин,
Ҫут хӗвелӗмӗр, атте
Чӗннипе эпир хастарлӑн
Пулӑпӑр пулас тӗлте.

* * *

Пуҫ усмарӗ пирӗн халӑх
Чи хӑрушӑ кунсенче,
Ӗмӗр-ӗмӗр асӑнмалӑх
Вӑй пуҫтарчӗ чӗринче.

Аслӑран та аслӑ Сталин
Ватӑ Кремльтен приказ
Парсанах, хӑват хускалӗ!
Халӑх кӗтрӗ ир те каҫ.

Мускава таптапӑп!—терӗ
Хурҫӑ тумлӑ вӑр-хурах.
Пухӑнчӗ тӑшман тискеррӗн
Кӗрхи пӗлӗт пек хура.

Курӑнмасть хӗрри те вӗҫӗ,
Ҫук виҫме сарлакӑшне.
Эх, ҫӗршыв, миҫе дивизи
Килчӗ сан чӗрӳ ҫине?..

Хӗвеле вил йытӑ тирӗ,
Ҫук, витеймӗ, ан та тив!
Чӗркуҫҫи ҫинче-и пирӗн
Халӑх улӑп—коллектив?..

Ҫут мерченлӗ хӗрлӗ ҫӑлтӑр
Кремль хӳмисем ҫинче
Сар хӗвелӗн йӑлтӑр-йӑлтӑр
Ҫуннине курать тӗнче.

Хĕрлĕ çăлтăра çĕр ванчăк
Салатма Мускав çине
Килчĕ Гитлер—юнлă анчăк,
Юхтарса сĕлекине.

Эх, çĕршыв, тăван аннемĕр,
Эсĕ анлă та, анчах,
Хĕрлĕ Çар, çĕршыв илемĕ,
Утăм чухлĕ те ан чак!

Каялла çул çук. Мускавăн
Сарлака урамĕсем
Умĕнчех тăраççĕ тарăн
Блиндажсем те окопсем.

Вилĕпĕр, анчах та юлтăр
Хуласен хули—Мускав,
Ун çинче çуталтăр çăлтăр.
Вĕлкĕштĕр хăмаç ялав.

Хурçăран та хытă хурçă
Пул, çĕршыв, тăван анне!
...Ой, мĕн чухлĕ Гитлер хучĕ
Полкисен виллисене!..

* * *

Паттăр вăхăт! Кашни кунĕ
Халь те чаплă, малашне
Чаплăран та чаплă çунĕ,
Çырăнĕ историне.

Çав кунсен кашни сехечĕ
Курăнĕ çулталăк пек,
Ма тесен, çĕнӳ тивлечĕ
Тулнă халăх юнĕпе.

Хĕвеланăç хĕрлĕ тейĕн,—
Юнлă пулчĕ аслă уй...
Çитĕ вăхăт, эпопея
Çырĕ тепĕр Лев Толстой.

Фашистсен çарне хаяррăн
Вакласа тăкса, эпир
Утрăмăр пурте пĕр харăс
Кăнтăрла та, каç та ир.

Юлташсем вилсен, виç утăм
Утса ӳкрĕç çĕр çине,
Тепĕр хут тăрас пек хыттăн
Тăсрĕçĕ аллисене.

Хирсене салтак масарĕ,
Арăш-пирĕш ушкăн танк
Хăварса, тăшман тармар-и?—
Тарчĕ пирĕн Мускавран.

Нимĕç пуçĕ те шинелĕ
Татăк-кĕсĕк сирпĕнчĕ,
Тăпрапа пĕрле илемлĕ
Йăтăнчĕ уйхирсенче.

Шăннипе шалт ĕнтĕркенĕ
Фрицсене нӳхрепсенчен
Сĕтĕрсе эпир силленĕ
Шартлама хĕл сиввинче.

Вĕсене эпир кăтартнă
Территори мĕнлине,
Пĕр халăç çĕр татса панă,
Çапнă, чикнĕ çĕр айне.

Ирхине сухаçă кайтăр
Сарлака çеçенхире,
Юрласа вăл сухалатăр
Нимĕç пăнтăхнă çĕре.

Сар шăмми тухсассăн,—çаптăр
Çиленсе шур чул çине,
Е шалча çине вăл çактăр
Хăратма чакаксене.

* * *

Мухтансам, чăваш уйхирĕ!
Ӳхĕр, Атăл, хĕпĕрте!
Ачусем тăшмана хирĕç
Кĕрешеççĕ пур çĕрте.

Савнă халăх, ăмăрткайăк,
Харсăр санăн чĕппӳсем
Хуть ăçта пулсан та, лайăх
Янтăраççĕ ячĕсем.

Хамăра çуратнă вырăн
Лăпкă халĕ, инçетре,
Тенĕ шухăш пулмĕ ырă,
Выртмĕ пирĕн чĕрере.

Кăнтăр-и е пултăр çурçĕр,
Пысăк-и вăл е пĕр шит,
Пурпĕр хамăрăн тăван çĕр,
Хамăр ĕçĕн тар шăрши.

Белорусс йĕрсен, чăвашăн
Куçĕнче вĕри куççуль.
Çинĕ чух пире пĕр кашăк,
Ӳтнă чух пире пĕр çул.

Пĕрле тупнă пĕр телейĕн
Çырлине астивнĕ чух
Е чăваш-и, е ирçе-и,—
Туслă пулнă, пулнă чун.

Пĕр-пĕрне савса мухтанă
Вырăс та латыш, узбек,
Савăннă, пĕрле юрланă,
Çывăрнă эпир пĕр пек.

Украина куççулленчĕ,
Белорусс тӳсет типшар.
Çапăçма чăваш çĕкленчĕ,
Вăркăнать вăрçа тутар.

Тăван халăх, савнă халăх,
Чăвашсем эпир—матур.
Фронтсене пăхса ил халĕ,
Юхнă пирĕн юн та пур.

Ленинград панче тумланă,
Тăкăннă Мускав çĕрне,
Чăваш юнĕ мухтавланă
Севастополь хăйăрне.

Украинăн аслă уйĕ
Астăвать чăвашсене.
Сар хĕвел те кĕмĕл уйăх
Курнă пирĕн ĕçсене.

Çутă Днепр, лăпкă Немăн
Хумĕсен айне кĕрсе
Çывăраççĕ халь чăвашăн
Паттăр вилнĕ ачисем.

Пĕлĕтсем шывне илеççĕ
Аякри Дунай çинчен,
Кунталла юхса килеççĕ
Хĕвеланăçĕ енчен.

Хулăм пĕлĕтсем нумайăн
Çумăр ячĕç сан çине.
Савнă халăх, ăмăрткайăк,
Туйрăн-и шыв ăшшине?

Вилнисем çинче хумханнă
Лăпкă шывăн саламне
Йышăн эсĕ хăвăн анлă
Кăкăрна, чĕрӳ патне.

Савнă халăх, тăван халăх,
Ачусем эпир—матур.
Тăшмана çапса ватмалăх
Пирĕн вăй та, юн та пур.

* * *

Çич юта хĕлле тылланă,
Хирнĕ хыççăн çĕр çине
Килчĕ ешĕлне тумланнă
Ырă, çутă çуркунне.

Тап-таса хумсем ача пек,
Сăпкари пек ярăнчĕç.
Çуркуннен ем-ешĕл чапĕ
Сарăлчĕ уйхирсенче.

Вăрçă вучĕпе аманнă
Йывăç чĕрĕлчĕ ансат,
Çулçи тухрĕ, пулчĕ анлă,
Çитĕнчĕ папкаланса.

Ашкăрчĕ хупах, сар курăк
Нимĕç виллисем çинче,
Хурт-кăпшанкă йăва турĕ
Фашистсен пуç шăмминче.

Снарядсем фрица туй тунă
Вырăнта, окопсенчен
Тикĕсленнĕ çĕрсенче
Шăтрĕ лăс пек çăра тулă.

Кăмрăклă, анчах тăван
Çурта пăхсам,—кăвакарчăн
Мамăкран çемçе йăва
Çавăрчĕ, чĕпсем кăларчĕ.

Тар-тăруп шăршисĕр кунăн
Сывлăшĕ епле хитре!
Вăрманта сасси—куккукăн,
Тăррисен—шăп пĕлĕтре.

Ӳхĕрсе хĕлле кĕрлетчĕ
Ирсĕр мина пуç çинче,—
Путене халь чĕп кăларчĕ
Нимĕç хурçă каскинче,

Эх, çĕршыв, тăван аннемĕр,
Ирĕк пурнăç тĕнчере
Чи паха мĕн, чи чечен мĕн,
Эх, мĕн лайăх ирĕкре!

Çутçанталăк та йăлт уçă,
Сарăлса чечекленет,
Вăрманта ем-ешĕл çулçă
Васкаса чиперленет.

Халĕ, ирĕклĕх килсен,
Хир-хир урлă, ял-ял урлă
Янратса юрлаççĕ юрă,
Юмахри пекех, хĕрсем.

Шăл çыртса эпир хастарлăн
Çапăçса тăвансене
Çăлтăмăр,—эх, питĕ хаклă
Ирĕк пурнăç çынсене!

Малалла! Çул вăрăм халĕ.
Нимĕç вилтĕр! Аркатса
Кайăпăр. Пире шан, халăх!
Вăрçă юнлă... Хĕç таса!

Малалла халь пирĕн утăм.
Кĕт, Одесса! Кĕт, Литва!
Çĕклĕпĕр хĕвел пек çутă,
Юн пек хĕрлĕ ялава!

* * *

Çуркунне шап-шур тĕтре
Улăхсем çине ӳксен,
Тĕпсĕр-йĕрсĕр пĕлĕтре
Йĕрсе иртрĕç тăрнасем.

Хыпарларĕç кăнтăрта
Нимĕçсен асапĕнче,
Акăш-макăш сăнчăрта
Халăх тарăхни çинчен.

Юмахри пекех чечен
Садсенче халь шăпчăксем
Юрламаççĕ ирçинче
Янăравлă юрăсем.

Ĕлĕк, ăшă çил вĕрсен
Ӳхĕрнĕ кипариссен
Çийĕнче халь вилесем—
Пирĕн халăх çыннисем.

Хура тинĕс хĕрринче
Халăхăн телейĕ çук,
Урнă нимĕç аллинче
Тăкăнать вĕри куççуль.

Йынăшса йĕре-йĕре
Тăсрĕç хурлă юрăсем
Янкăр уçă пĕлĕтре
Кĕмĕл саслă тăрнасем.

Вĕсем тарнă тарăхса
Нимĕç мурĕ патĕнчен,
Ярăнаççĕ карăнса
Аслă Атăл çийĕнче.

Вĕсене илтсен, питех,
Чĕререн хурлантăмăр,
Симĕс сăнлă пĕлĕте
Пăхрăмăр, каларăмăр:

—Шинеллĕ тусăрсем,
тăнлатпăр
Хурланнă йывăр сассăра,
Пăшалсене патвар тытатпăр
Тĕреклĕ, çирĕп алăра.

Хуллен-хуллен эсир иртетĕр,
Ĕшеннĕ мĕн çунатăрсем.
Чуна татса çӳлте йĕретĕр,
Эсир, мăнтарăн тăрнасем!

Хĕвеллĕ кăнтăрăн асапĕ
Тулса хумхатнă чĕрере,
Кил-çуртсăр юлнă ачасем пек,
Макратăр тĕпсĕр тӳпере.

Çунат сулса пире чĕнетĕр:
Мала! Мала! Мала!—тесе,
Полксем çинчен эсир вĕçетĕр,
Кĕмĕл пек саслă тăрнасем!

Çунат сулма пăрахăр, ларăр
Илемлĕ Атăл хĕррине,
Шывра чӳхенĕ те тасатăр
Çунатăрсен тĕкĕсене.

Полксем, полксем, полксем
шăваççĕ.
Тусан куратăр çул çинче.
Штыксем илемлĕ ялтăраççĕ
Ирхи хĕвелĕн çуттинче

Тăван çĕршыв çинче пĕр чун та
Фашист таврашĕ юлмиччен
Салтак чĕри кăвар пек çунтăр
Мухтавлă вăрçă хирĕнче!

Шăваймĕ чĕр тăшман çĕленĕн,
Саланĕç унăн шăммисем.
Тасалĕ çĕр!.. Пире ĕненĕр,
Янравлă саслă тăрнасем!

* * *

Кăкăр çÿллĕш тутлă курăк
Ÿснĕçемĕн ÿснине
Пăхăр халĕ, витĕр курăр,—
Мухтăр халăх пурлăхне!

Чип-чипер хĕрсем тухаççĕ
Ирхине сар хĕвелпе;
Çависем ян-янăраççĕ,
Илтĕнеççĕ юрă пек.

Шурă пĕлĕт пек кăтраллă
Сурăх тухнă кĕтÿпе,—
Хĕрлĕ паттăра чăлхалăх
Çăм ÿсет сехечĕпе.

Ĕнесен çилли чара пек
Тулнă, сĕчĕ çăп-çăра.
Акă пирĕн тылăн чапĕ,
Акă çу Хĕрлĕ Çара!

Боецсем савса туртмалăх,
Пăхăр чĕлĕмре çунма,
Блиндажра ялан хăватлăн
Çĕлĕк пек мăкăрланма,—

Сарăлса нумай туратлă
Ахăрса ÿсет табак.
Ăна туртĕ пирĕн халăх,
Тĕтĕм пулĕ кăн-кăвак.

Эх, çĕршыв, тăван аннемĕр,
Вĕрирен вĕри сан кун!
Уралта совет этемĕ
Шăрататъ хурçă-чукун.

Иксĕлми пуян тăван çĕр
Рудинчен пулса каять
Фронталла татти-сыпписĕр
Мина, пуля та снаряд.

Йышлă-йышлă пин бригада,
Йĕрĕнчĕк тăшман пуçне
Нимĕрме, парать граната
Паттăрсен аллисене.

Савăт хапхинчен хăватлăн,
Чулсене сĕве-сĕве,
Кĕрлесе тухать çĕр тонлă
Хурçă улăп —танк Ка-ве.

Çĕпĕртен те, Уралтан та
Ирсĕр çичĕ ют çине
Бомба, бомба, бомба антăр,
Чиктĕр чĕр тăпра айне.

Хамăр алă, хамăр тунă
Хурçă кайăксем инçе
Ярăнаççĕ, пин-пин тонна
Вилĕм кашнин чĕрнинче.

Эх, çĕршыв, умра тăратăн
Эсĕ паттăр та хитре,
Яланах хĕрсе тапатăн
Пирĕн харсăр чĕрере.

Аслăран та аслă Сталин
Пысăк вăрçă уйхирне
Ăсатса ярать ак халĕ
Теветкел полкисене.

* * *

Çаврăçил вĕрмест, çанталăк
Янкăр уçă та уяр.
Пĕлĕтсем витмен сасартăк
Ешĕл тырăллă уя.

Кăмака çинчи пек ăшă
Çуллахи ачаш тĕнче.
Çук, анчах ытла хăрушă
Лăпкă Дон таврашĕнче.

Хуп-хура тусан та çулăм
Ялкăшать урса анчах,
Сар чечеклĕ тăвăр çулăн
Хĕрринче выртать ача.

Хурçă çăхансем ÿлеççĕ,
Шурă пĕлĕт хушшинчен
Сирпĕнсе анса переççĕ
Пысăк пулеметсенчен.

Бомба хыççăн бомба ӳкрĕ
Çын çине; хуралт çине
Тăкăнать, вара мĕн пурĕ
Саланать пин пĕрчĕнех.

Çил çинче çӳрет йӳçенкĕ
Çуннă çурт-йĕрĕн шăрши.
Мăшкăлларĕ нимĕç танкĕ
Сан çĕрне, тăван çĕршыв!..

Куртăмăр эпир Воронеж,
Кив хула кĕлленнине,
Куртăмăр эпир Воронеж
Куççульпе çăвăннине.

Илтрĕмĕр эпир Воронеж
Çыннисем макăрнине.
Туйрăмăр эпир Воронеж
Йывăр хурлăх чăтнине.

Шупашкар пекех Воронеж,
Шупашкар пекех тăван.
Вилĕпĕр, анчах илеймĕ
Ăна çичĕ ют, тăшман.

...Йӳçĕ тĕтĕм, аслă çулăм
Пăтрашса тăнă чухне
Вилесен купийĕ урлă
Кĕтĕмĕр вăрçă хирне.

Шăхăрса ӳкет те бомба—
Тăпрана йăтса аллать,
Каялла перре те ан пăх,
Малалла çеç, малалла!

Каялла чакма çук вырăн,
Хамăрăн хирсем кайра
Шыв пек тикĕс, чап пек ырă
Хумханаççĕ шăрăхра.

Фашистсем тăрса тӳп-тӳрĕ,
Пĕтĕм пĕвĕпе тăрса
Килчĕç, килчĕç,—нимĕç мурĕ
Хăратасшăн ахăрса.

Петĕмĕр эпир хаяррăн,
Çултăмăр эсрелсене,
Хытă тăтăмăр, пĕр харăс
Тиртĕмĕр штыксем çине.

Хамăр тус вилсен, ун урлă,
Лĕп юна аша-аша,
Утрăмăр эпир, сатурлăн
Сыхласа Воронежа.

Июльте эпир Воронеж
Чысĕшĕн кĕрешнине
Кĕнеке тăрăх вĕренĕç
Ачасемĕр малашне.

* * *

Элĕксем, Васлей Антонов,
Старшина, чăваш çинчен
Ыр сăмах çӳрет, вăл тунă
Паттăр ĕç—чĕлхесенче.

Коммунист, матур разведчик,
Урнă нимĕç сехрине
Хăпартса, кĕрсе çӳретчĕ
Яланах тăшман тылне.

Вăл кунта хисеплĕ снайпер,
Пысăк чыс Антонова!
Уншăн халĕ хĕпĕртетпĕр,
Тивĕçлĕ вăл мухтава.

Çирĕмшерĕн, хĕрĕхшерĕн
Нимĕç самолечĕсем
Тапăнсан, тинкер тĕллерĕ,
Ячĕ вутлă пульăсем.

Çулăмланнă хăмăр „Юнкерс"
Тăсрĕ тĕтĕм ярăмне,
Чăлаш-чалăш, кĕрĕс-мерĕс
Персе анчĕ çĕр çине.

Элĕксем Васлей Антонов
Çăхана винтовкăпа
Çырлахтарчĕ,— ячĕ унăн
Тухрĕ чăн-чăнах чапа.

Çĕрĕн-кунĕн тискер кайăк
Çамкине çурать самант
Шеп сунарçă Николаев,
Шăхасан ачи, сержант.

Снайперсем çинчен кĕскенĕн
Çыртăмăр. Çыру перре.—
Геройсем нумай-çке пирĕн,
Йышлă-çке дивизире.

* * *

Манмĕ ĕмĕрне Воронеж
Июльти çапăçăва!
Çыннисем унпа мухтанĕç,
Кĕртĕç юрăпа сăвва.

Мина, пуля вĕççĕр-хĕрсĕр
Çумăр евĕр çунă чух,
Пĕр самант та шикленмесĕр
Тапрĕ пирĕн харсăр чун.

Вилĕм витĕр, тĕтĕм витĕр,
Вилнисем урлă каçса
Иртрĕмĕр эпир,—хура çĕр
Йăсăрланчĕ арпашса.

Пирĕнпе майор Петренко,
Афанасьев комиссар
Таччăн пычĕç, пĕр ĕретĕн,
Çума çумăн, юнашар.

Пирĕнпе Донбасс шахтерĕ
Павел Ульшин, капитан,
Тимленсе пĕрле çӳрерĕ,
Çирĕ пĕр котелокран.

Командир Энтри Гаврилов
Курчĕ вут та, курчĕ кĕл.
Юхма Патăр'ел таври вăл,
Вăл Крепков пек теветкел.

Ывăлу Гаврилов пирĕн
Чапла йĕкĕт, лейтенант.
Хĕпĕрте, Юхма уйхирĕ,
Янтăрат юрра ян-ян!

Пулчĕ вăхăт, кăнтăрла та
Сар хĕвеллĕ çутă кун
Курăнмарĕ, пирĕн ату
Айĕ пулчĕ хĕрлĕ юн.

Пычĕ нимĕç, тухрĕç ӳсĕр
Виçĕ хут атакăна.
Автомат татти-сыпписĕр
Сăрăлтатрĕ,—тӳс кăна!

Арăслан пек чăрсăр, хытă
Тытăçса, çапа-çапа
Çирпĕтрĕмĕр, урнă йытă
Шăл хайрарĕ-çке çапах.

Командир Энтри Гаврилов,
Амансан та, пирĕнпе
Пычĕ, йыхăрчĕ пире вăл
Кăмăллă сăмахĕпе.

Чупрăмăр тата чавсаллăн
Шурăмăр тăшман çине.
Савнă халăх, таван халăх,
Пар вăйна ачусене!

Сар хĕвеллĕ кун çанталăк
Кĕрхи каç пек хуп-хура.
Карăнса юпа-юпаллăн
Хăпарать çӳле тăпра.

Пуç йăтма та çук. Тăшманăн
Вучĕ пăрлă çумăр пек.
Çамрăкскер, Вавилов Гена
Тăчĕ пĕтĕм пĕвĕпе.

Пулемет çине граната
Вăркăтрĕ. Вилессинчен
Çăлăнса çĕкленчĕ рота
Малалла çĕр çумĕнчен.

Кăкăрне ватса ун витĕр
Тухрĕç пульăсем нумай.
Ĕмĕрех ятне чап витĕ,—
Ӳкрĕ ӳпĕнсе герой.

Вилчĕ паттăр çамрăк йĕкĕт
Аллине мала тăсса.
Савнă хĕрĕ, ĕнтĕ ан кĕт
Хапхăна вăл уçасса.

Ун çине кашни пĕр ывăç
Хуп-хура çĕр сапрăмăр.
Асăнмалăх чĕрĕ йывăç
Вăрçă хыççăн лартăпăр.

Тус тăпри çинче чи таччăн
Алпа аллăн тăтăмăр,
Уншăн хытă тавăрмашкăн
Эпĕр тупа турăмăр.

Командир Энтри Гаврилов
Чĕнчĕ тепĕр хут пире.
Кайрăмăр татах та вăйлăн
Вут та тĕтĕм витĕрех.

Юлташсем ӳксен, тăмарĕç.
Йышăнчĕ çĕр вĕсене.
Вилнисен чапне Воронеж
Илчĕ хăй чĕри патне.

Геройсен чапне ачашшăн
Сар, Çĕршыв, инçе, инçе!..
Вилĕмсĕр палли чăвашăн
Пур Воронеж хирĕнче.

* * *

Тĕксĕм пĕлĕт мар хăрушă
Аннă лăпкă Дон çине.
Халăх çук. Ялсем пуш-пушă.
Йывăр сасă илтĕнет.

Эрешмен пекех хĕреслĕ
Нимĕç танкĕ ӳхĕрчĕ
Тăкăс хăмăшлă, чечеклĕ
Çутă Донăн хĕрринче.

Автансем те авăтмаççĕ
Ĕлĕкхи пек ирхине.
Çăтă нимĕçсем чыхаççĕ
Пирĕн халăх пурлăхне.

Хамăра савса чуптунă,
Енчĕк панă хĕрсене
Пусмăрланă, мăшкăл тунă,
Çакнă юпасем çине.

Ĕлĕк юрăсем кĕрленĕ
Вырăнта халь кĕл кăна.
Авалтан кунта пемен-и,
Вакламан-и тăшмана?!..

Çакăнта Мĕтри Донскойăн
Теветкел хусахĕсем
Çĕнтермен-и? Пит нумайăн
Тăкăнман-и монголсем?..

Вырăс хĕçĕ—çутă уйăх—
Çиçнĕ, çиçĕ тепĕр хут.
Куликовăн аслă уйĕ
Парĕ çиçĕм, парĕ вут.

Çурхи шыв сиксе сулмаклăн
Харсăр, чăрсăр вăркăнать.
Çавăн пек, юратнă халăх,
Кайрăмăр атакăна!

* * *

Каçхине ытла та шăпчĕ,
Вăрçă çук пекех тĕнче
Лăпкăччĕ, юрлатчĕ шăпчăк
Çĕмĕртлĕх тĕмескинче.

Пуçсене пусатчĕ ыйăх
Çичĕ пăтлă йывăр пек.
Дон çинче ишетчĕ уйăх
Кĕмĕл тĕслĕ шевлипе.

Çăлтăрсен çутти çиçетчĕ
Çулçăсем çинче хитре.
Вĕркелетчĕ пулемечĕ
Нимĕçсен хутран-ситрен.

Тутăхми хĕç пек çут уйăх
Пĕлĕт витĕр ишнине
Курнă Куликовăн уйĕ,
Савнă унăн çуттине.

Пурçăн та ука йĕнерлĕ
Утаман Донской авал
Çакă уйăха тинкернĕ,
Малалла çĕкленĕ ал.

Уйăха тăшман ан куртăр
Вырăс çĕре çийĕнче!—
Йăлт çĕкленнĕ çивĕч пуртă
Пирĕн халăх аллинче.

Çичĕ ют чăнах та урăх
Пăхайман, ун куçĕнчен
Шăтнă та хумханнă курăк
Вырăс çилĕ айĕнче.

Степан Разин утаманăн
Тусĕсем пăха-пăха
Кĕр-кĕрленĕ, асăрханă
Кĕмĕл сăнлă уйăха.

Ытарма çук каç аванччĕ,
Çичĕ çăлтăр çуннипе
Леш енче тăшман пăхатчĕ
Каçăртса çăткан куçне.

Çакă каç итлет мĕн нимĕç
Пирĕн шăпчăк сассине.
Хăлхине хупла, çап, нимĕр,
Шăтарса кăлар куçне!

Ҫакӑ ҫӗр эпир хӑватлӑн
Кайрӑмӑр атакӑна.
Ишрӗ, ишрӗ пин-пин алӑ,
Каҫрӑмӑр эпир Дона.

Ҫӗр кисренчӗ, ҫӗр чӗтрерӗ,
Вутла ҫумӑр сирпӗнчӗ.
Ҫапӑҫу кӗр-кӗр кӗрлерӗ
Лӑпкӑ Дон улӑхӗнче.

Мина е снаряд ансассӑн,
Шыв ҫӗкленчӗ пӗркӗнсе.
Юлташсем ҫухалчӗҫ сассӑр,—
Юлчӗҫ юн тумламӗсем.

Йӗп-йӗпе эпир пӑшаллӑ
Тухрӑмӑр ҫыран хӗрне,
Ҫиллӗ-тӑвӑллӑн, патварлӑн
Чупрӑмӑр тӑшман ҫине.

Ҫитрӗ ир. Ҫанталӑк пулчӗ
Сар хӗвеллӗ те уяр.
Чи малта хӑюллӑн пычӗ
Паттӑр Хлебников майор.

Етӗрне ачи Голицын,
Политрук, кӑвар чӗре,
Сталиншӑн, Тӑван Ҫӗршывшӑн
Ертсе кайрӗ вӑл пире.

Юлашки вӑйӗ-хӑвачӗ
Пур таран вӑл тӑшмана
Сайратса пырса йӑванчӗ...
Чап—ӑна! Мухтав—ӑна!

Манмӑпӑр эпир нихҫан та
Кравченко лейтенанта,
Ун ҫинчен ҫыру шӑрантӑр,
Юлтӑр, халӑх, асӑнта!

Амансан та, арӑсланӑн
Ертрӗ хӑйӗн ротине,
Тӑкрӗ йӗрӗнчӗк тӑшманӑн
Наркӑмӑш пекех юнне.

Йывӑр вӑхӑт килчӗ. Нимӗҫ
Хупӑрларӗ, тапӑнчӗ.
—Парӑн, вырӑс, парӑн!—терӗҫ
Сасӑсем мӗн пур енчен.

—Эх, Ҫӗршыв, Тӑван Ҫӗршывӑм,
Пурӑн!—терӗ лейтенант,—
Юн пӗтмен-ха, эпӗ сывӑ,
Ме, тӑшман, эппин тӑран!

Пуля хыҫҫӑн пуля ячӗ
Иртӗхнӗ тӑшман ҫине.
Кӗрӗслетрӗ пистолечӗ.
Юлашки ак, вӑл—хӑйне...

Эх, Ҫӗршыв, тӑван аннемӗр,
Сан чысушӑн пурнӑҫа
Парнелетпӗр, кӗрешетпӗр,
Кирлӗ чух хурса пуҫа.

Пӗр самант та лӑпланмарӗ
Дон хӗррийӗ пӗр ӗрет.
Вилӗм чӗлхипе шавларӗ
Пулемет те миномет.

Иртрӗ кун. Ҫӗкленчӗ уйӑх
Тӗтӗм витӗр касхине,
Курчӗ сарлака Дон уйӗ
Юнланса хӗрелнине.

Ой, мӗн чухлӗ вилнӗ нимӗҫ
Хупнӑ ӗмӗтсӗр куҫне,
Нихӑҫан та ӗнтӗ курмӗҫ
Мӗнешкел кас хитрине.

Макӑрччӑр, куҫҫуль юхтарччӑр
Мӑнтӑр нимӗҫ пикисем,
Хӑртӑнса эппин вакланччӑр
Калта евӗр чӗрисем!

Ирхине тӗтре чаршавӗ
Сирӗлнӗ-сирӗлменех,
Сар хӗвел, куҫне чарса вӑл,
Пӑхрӗ ҫапӑҫу хирне.

Ӗлӗк аслӑ Куликовӑн
Уйхирне вӑл курнӑ-ши?..
Ҫил вӗрет. Перет тӑшманӑн
Ҫӗрекен виле шӑрши.

Днепр ҫийӗн, Киев урлӑ
Иртнӗ хулӑм пӗлӗтсем
Ярӑнаҫҫӗ те хӗнхурлӑн
Тӑсӑлаҫҫӗ мӗлкисем.

Пӗлӗтсем, иртсе ан кайӑр,
Чарӑнӑр Дон хӗрринче,
Уйхире ҫуса тасатӑр
Вилнӗ нимӗҫ шӑршинчен!

* * *

Командир, Канаш чӑвашӗ,
Павӑл Ильиных ҫинчен
Чаплӑ сас ҫӳрет ачашшӑн
Ҫурҫӗр-кӑнтӑр фронтӗнче.

Тӑван халӑх, савнӑ халӑх,
Унӑн ыр хушаматне
Ӗмӗр-ӗмӗр асӑнмалӑх
Ҫырса хур чӗрӳ патне.

Ильиных, хӑватлӑ паттӑр,
Пирӗн ирӗк самана
Телейне сыхланӑ харсӑр,
Панӑ хӑй вӑйне ӑна.

Ленин ҫулӗ тӑрӑх Павӑл
Утнӑ—кӑмӑллӑ салтак,
Пынӑ ҫирӗппӗн тӑрса вӑл
Чи хӑюллӑ, чи малта.

Граждан вӑрҫинче аманнӑ
Вӑл тӑватӑ хут, юнне
Тӑкнӑ хӗрхенмесӗр анлӑ,
Аслӑ ҫапӑҫу хирне.

Манмӑпӑр лутра ҫеҫ пӳлӗ
Аслӑ сержанта эпир,—
Юрӑра шӑранӗ, юлӗ
Ҫырӑ куҫлӑ командир.

Дон хӗрри. Ҫап-ҫамрӑк хырлӑх,
Сар хӗвел. Пӗчӗк блиндаж,
Ҫавӑнта тухса Дон урлӑ
Каҫнӑ Ильиных юлташ.

Вӑл пӗччен хавасль кайнӑ
Ешӗл топӑллӗ яла,
Ҫӗмӗртсем ӑна пуҫ тайнӑ,
Суннӑ ырӑ ҫул мала.

Нимӗҫсем ӑна сасартӑк
Хупӑрланӑ: „Парӑн, русс!"
Ик гранатуна кӑлар та,
Ильиных, пуҫна ан ус!

—Хӗрлӗ Ҫарӑн командирӗ
Парӑнать-и тыткӑна!—
Тенӗ вӑл, ӑсатнӑ хирӗҫ
Пуля, пуля тӑшмана.

Автомачӗ ун кӗрленӗ,
Курӑк пек нимӗҫсене
Сӑтӑрнӑ, ҫапса ҫӗленӗ,
Пӑталанӑ ҫӗр ҫумне.

Пӗр алли аманнӑ унӑн,
Сылтӑмми аманнӑ ун.
Упаленнӗ, Павӑл шунӑ,
Вӑйӗ чакнӑ, юхнӑ юн.

Эх, Ҫӗршыв, тӑван аннемӗр
Пулӑшсам, парсам вӑйна,
Пар тата хӑват тумламӗ
Суранланнӑ ывӑлна!

Ильиных ак суллахайӑн
Пенӗ, пенӗ, чарӑнман.
Сирпӗнсе нумай-нумайӑн
Ӳкнӗ, антӑхнӑ тӑшман.

Пуля пӗтнӗ. Пӗр граната
Нимӗҫ йыттисем ҫине
Вӑркӑннӑ та ҫӗр-ҫӗр татӑк
Тӑрӑннӑ салтаксене.

Вӑйӗ чакнӑ командирӑн.
Юхнӑ юн. Суран нумай.
Хатӗрле хисеплӗ вырӑн,
Чаплӑлат, Ҫӗршыв, ан ман!

Нимӗҫсен сӑрӑ ҫӗленӗн
Хӗсӗннӗ хаяр унки.
Павӑла, Канаш, илтен-и?
—Сывӑ юл, юратнӑ кил!

Тутисем ун сивӗнеҫҫӗ.
Юн юхать. Нумай суран.
Нимӗҫсем тата килеҫҫӗ.
Умӗнчех ак-ак тӑшман.

Пар, Ҫӗршыв, хӑват тата та
Кӑшт кӑна, вилме кӑна.
Ильиных тӑрать. Граната
Пӗрчӗн-пӗрчӗн саланать...

Вăрçă иртĕ. Пурнăç савăк
Пулĕ пирĕн çĕр çинче.
Гранитран шăратнă Павăл
Тăрĕ Донăн хĕрринче!

* * *

Мухтанма пулать чăвашăн
Ачисем матуррипе.
Сталиншăн, Тăван Çĕршывшăн
Кĕрешеççĕ пинĕпе.

Мĕнешкел сăмах тупар-ши?
Юррăмăр, янра паян!
Пур хастарлă Саша Паршин
Хамăрăн Кувакинран.

Комсомолец вăл, разведчик,
Хÿхĕм çамрăк сăвăçă.
„Чĕлхесем" тытма çÿретчĕ,
Шикленмесĕр нихăçан.

Хир-хир тăрăх, хир-хир урлă
Хырăмпа шуса кăна,
Çук тесен те, вăл çĕр çухрăм
Иртнĕ, пенĕ тăшмана.

Тупăк тупрĕ йышлă нимĕç
Саша Паршин пульлинчен.
Чап юрри, янра, çÿле вĕç
Çулăм пек герой çинчен!

Шăмăршă уйхирĕ, савăн,
Хĕпĕрте! Санра—телей!
Харсăр улăпу пур санăн,
Вăл—Можаев Василей.

Вăл—разведчик. Халĕ паллă
Унăн ячĕ фрончĕпе.
Тăван халăх, савнă халăх,
Ÿснĕ вăл сан сĕтÿпе.

Фрицсене тытать Можаев
Çухинчен те пырĕнчен;
Аллине çакланнă кайăк
Чĕтĕрет ун умĕнче.

Çывăх тусĕ Васçилейĕн
Николай Фролов сержант.
Вăрçăри этем телейĕ—
Туслăхра. Тусна хыт шан!

Теветкел, сатур та паттăр
Фролова хисеплесе,
Елчĕк çыннисем, мухтанăр,
Юрлăр, Елчĕк хĕрĕсем!

Яковлев Петюк сержантăн
Ĕçĕсем дивизире
Юлмĕç манăçа нихçан та,—
Ыр сăмах ялан çÿрет.

Çитмĕл çичĕ хут та пулĕ
Кĕнĕ вăл çапăçăва,
Чунĕпе сыхлать вăл вирлĕ
Хăй юратнă çĕршыва.

Хытăран та хытă пынă
Çапăçу пĕррехинче.
Ÿхĕрсе хаплатнă мина,
Çунă хурçă сĕлпĕрчĕк.

Вăрçă хирĕнче аманнă
Стрюков—вырăс-лейтенант,—
Савăрса илме хăтланнă
Чĕрĕллех ăна тăшман.

Яковлев, Вăрнар чăвашĕ,
Юн юхсан та аллинчен,
Юлташне йăтса ачашшăн
Хунă çурăмĕ çине.

Кĕпине çурса вăл çыхнă
Лейтенантăн суранне,
Хурçă çумăр витĕр тухнă
Хамăр окопсем патне.

Вырăспа чăваш йĕкрешĕн,
Пиччĕшпе шăллĕ пекех,
Вилĕме ялан çĕнесшĕн
Ыталаннă ик йĕкĕт.

Пĕр-пĕрне вис хут чуптунă
Кăн-кăвак тутисемпе:
Сурансем тÿрленччĕр! — çунă
Савăнса куççулĕпе.

Хурçăран та çирĕп, хытă
Туслă пирĕн çынсене
Ÿкереймĕ нимĕç-йытă
Пусмăр сăнчăрĕ айне.

* * *

Тăван халăх, савнă халăх,
Сан ятна кĕрешӳре
Çĕклерĕмĕр асăнмалăх
Çӳллĕрен те çӳлерех.

Йăтăпăр тата та çӳллĕ,
Çырăпăр историне,
Пулăпăр тата хĕрӳллĕ,
Ямăпăр чăваш ятне.

Вăрçă хирĕнче хăравçă
Пулнине чăваш тесен,
Каснă евĕр ыратаççĕ
Пирĕн харсăр чĕресем.

Пĕр хăравçă пулчĕ пирĕн,
Çын çӳп-çапĕ, йĕрĕнчĕк,
Тăшмана тăмарĕ хирĕç
Аслă вăрçă хирĕнче.

Шăл çыртса хăюллă, хытă
Кăшкăрса атакăна
Кайнă чух, пытанчĕ йытă
Вутсăр, хӳтĕ вырăна.

Ӳсĕр нимĕçсем хăрушшăн,
Вăйлăн тапăннă чухне
Ун окопĕ юлчĕ пушă,
Хăй вăл тарчĕ инçене.

Нимĕç пульлинчен тарсан та,
Хамăр халăх çиллинчен
Тараймарĕ вăл—çухалтăр
Пирĕн чыслă çĕр çинчен!

Сарлака Тăван Çĕршывăн
Юнсăр ырă хирĕнче
Тырă ӳснĕ чух, вăл сывă
Çывăрнă тӳшек çинче.

Çапăçса çынсем туяннă
Ăрăскалăн çимĕçне
Çинĕ те, мулкач-куянăн
Пурăннă лăпкă чухне.

Чи тискер тăшман хаяррăн
Çĕршыва туллана чух
Каялла-и эсĕ тарăн,
Виçĕ пуслăх ирсĕр чун?

Кĕрешекенĕ сансăр пулĕ.
Ан варла тăван çĕре!
Акă тахăр грамлă пуля
Çамкунтан сана пĕрре!

Пытармасăр юлчĕ ӳчĕ,
Çăрăнчĕ тусан айне.
Ситĕр ун ӳтне çĕр хурчĕ,
Йыт кышлатăр шăммине!

* * *

Ир те каç пире кĕтетĕр,
Аннесем те арăмсем!
Каччăрсем валли тĕрлетĕр
Хӳхĕм енчĕк, савнисем!

Килĕпĕр киле, Çĕршывăн
Уйĕ-хирĕ тăшманран
Тасалса чечен те сывă,
Савăнăçлă хăпарсан.

Фашистсен шăмшакĕ витĕр
Шăтнă курăк хирсене
Сырăнса кĕççе пек витĕ
Хуп-хура окопсене.

Снарядсем хĕрсе кĕрленĕ
Вырăнта шăпланĕ ир,
Шăпчăк юрлĕ те илемлĕ
Пулĕ тар шăршисĕр хир.

Тĕтĕм витĕр, çулăм витĕр
Çитĕпĕр çитес çĕре,
Пирĕн хĕç хăвачĕ витĕ,
Ваклĕ ирсĕр Гитлĕре.

Çитĕ вăхăт, праçник килĕ,
Тухĕ пирĕн урама,
Нимĕç амăш, нимĕç кинĕ
Пуçлĕ йыт пек улама.

Çитĕ вăхăт, Гитлер пуçĕ
Тăрăнĕ шалçа çине.
Çитĕ вăхăт, алăк уçĕ,
Салтак кĕрĕ хăй килне.

Шыв та сывлăш йăлт тасалĕ
Пыйтлă нимĕç шăршинчен,
Кĕрлесе трамвай хускалĕ
Киев урамĕсенче.

Нимĕç ларнă сак-тенкелĕн
Хăмине вĕри шывпа
Çавĕç,—хăнасем йĕркеллĕн
Пухăнĕç çĕнĕ вăйпа.

Ун чухне, çĕнтерне хыççăн,
Курăпăр ял-йышсене,
Ларăпăр мухтав пек уçă
Сарлака кĕрекене.

* * *

Малалла эпир пăхатпăр
Тĕтĕм, çулăм витĕрех,
Пĕр самант та тăхтамасăр
Ыратса çунать чĕре.

Украина, Украина,
Сан çеçенхирӳсене
Тăканнă куççуль, юн çунă
Хулăм кăкăру çине.

Сан чечен çĕрӳ чăвашшăн
Хамăр çĕр пекех пире,
Юрату эпир ачашшăн
Илнĕ Çеçпĕл Мишширен.

Ирхине килмест саркайăк
Çеçпĕлĕн тăпри çине,
Тертленсе хĕрсем нумайăн
Юхтараççĕ куççульне.

Аслă Çеçпĕл, халăх чапĕ,
Патриот, кăвар чĕре,
Çĕнтерӳ сехечĕ çапĕ,
Çитĕ эс выртан çĕре.

Сарлака Чернигов уйĕ
Тепĕр хут ешернине
Курăн эсĕ, Çеçпĕл, туйăн,
Сисĕн ирĕк килнине.

Эсĕ туйăн: Хĕрлĕ Çарăн
Йышăнче тăванусен
Мĕнешкел янраççĕ харăс
Теветкел утăмĕсем.

Эсĕ, савнă Çеçпĕл, шантăн
Хамăр халăх паттăрне,
Малалла чĕнсе янратрăн
Вилĕмсĕр юррусене.

Чунăмăр, поэт, пире кĕт,
Çитĕпĕр-ха сан патна;
Сирпĕнĕ фашист тĕрекĕ,
Вилĕм тытĕ тăшмана.

* * *

Малалла кайма Дон карчĕ
Пирĕншĕн яка кĕпер,
Унăн пăрĕ кăвакарчĕ,
Кăвакарчăн кусĕ пек.

Вăхăт-вăхăт арăш-пирĕш
Ӳхерсе тăрать тăман.
Хĕллене тăраймĕ хирĕç
Автомат йăтса тăшман.

Пуçтарать вăл çĕтĕк-çатăк,
Çыхкалать питне-куçне,
Эрзацран çĕленĕ атă
Хытарать урисене.

Вырăс хĕлĕ пит хăрушшăн
Ахăрать тăшман çинче,
Хатĕрлет фрица виç аршăн
Каснă çĕр тӳремсенче.

Пирĕншĕн епле хĕл кунĕ
Уçă, сивĕ, тап-таса!
Хĕрлĕ Çар боецĕн юнĕ
Вылянать хастарланса.

Пирĕн халăх ĕнтĕркет-и
Хамăр вырăс сиввинче! —
Вăй шăрантăр, вăй кĕрлетĕр
Çăмăл йĕлтĕрсем çинче.

Кăкăра юрпа çăватпăр,
Нар пек хĕрлĕ тĕс кĕртсе,
Сил-тăман атя улатăр,
Йăтăнччăр кервен кĕртсем!

Улпута тухма шутланă
Шăннă нимĕç сехрине
Хăпартса, памасть хĕл канăç
Кăнтăрла та ирхине.

Пирĕн мина та снаряд та
Çетĕк-çатăк тăшмана
Пĕр парать те, ватăр-ватăр,
Татăк-кĕсĕк вăркăтать.

Кăмрăк пек тĕксĕм хура çĕр
Ăнсăртран пыра-пыра
Фрицсене пĕр хĕрхенмесĕр
Какайлатпăр блиндажра.

Çухаран тытса килетпĕр
Нимĕçе окопĕнчен,—
Йĕркипе пире пĕлтертĕр
Хăйĕн тусĕсем çинчен!

Нимĕçе хĕлле хăрушă,
Тăрантать тăхлан парне.
Хушăран юрлать „Катюша"
Вутлă вăрăм юррине.

Хĕл сивви шăнтса пытарĕ
Хулăм шурă юр айне.
Донăн шывĕпе юхтарĕ
Çутă ырă çуркунне.

Лăпкă Дон курак-чакакĕ
Нимĕçĕн сап-сар çÿçне
Пĕрчипе пуçтарĕ акă
Ăшăтса хăй йăвине.

* * *

Асларан та аслă Сталин,
Полководец сăмахне
Чĕрере тытатпăр халĕ,
Пурнăçлатпăр приказне.

Çут хĕвел, тăван аттемĕр
Ĕртнипе эпир ялан
Тăшмана çапса çĕнмесĕр
Нихăçан та чарăнман.

Граждан вăрçинче унпаччĕ,
Стройкăра унпа эпир.
Çапăçма пире вăй пачĕ
Аслă Сталин, командир.

Çывăхран та çывăх Сталин,
Çут хĕвелĕмĕр, пире
Ĕртнипе кĕрсе хастарлăн
Пытăмăр кĕрешÿре.

Çĕнĕпĕр, телей хăпарĕ
Ăсамат кĕперĕ пек.
Пирĕнпе Британи çарĕ,
США та пирĕнпе.

Шанчăкăмăр пысăк пирĕн,
Пирĕнпе пĕтĕм тĕнче.
Нимĕç тарчĕ Ливи хирĕн
Типĕ хăйăрĕ çинчен.

Эх, Çĕршыв, матур тăратăн,
Гранитран шăратнă пек.
Мухтанатпăр Сталинградăн
Фронтĕнчи çĕнтерÿпе.

Каç та, ир те,—çĕрĕн-кунĕн,—
Пĕтерсе фашистсене,
Тасатăпăр Лăпкă Донăн
Сарлака çеçенхирне.

Пирĕн чĕрере присяга,
Пирĕн алăра пăшал.
Ирĕк пурнăçшăн, пĕр çакă
Чысшăн кĕрешетпĕр шалт.

Тăван халăх, ăмăрткайăк,
Эсĕ шан ачусене:
Тĕнчере пĕлеççĕ лайăх
Теветкел чăвашсене.

Вырăсăн, марин, тутарăн
Çулĕ, шухăшĕ пĕрре,
Çавăнпа пыраç хастарăн
Яланах кĕрешÿре.

Малалла! Çил вĕр, мала вĕр,
Хыпарла тăвансене:
Çитĕпĕр, çĕнÿ ялавĕ
Кĕрĕ Киев урамне!

Малалла! Çап-çутă уйăх,
Йыхравла тăвансене:
Курĕ Белорусси уйĕ
Пирĕн харсăр полксене!

Малалла! Хĕвел кăварĕ,
Пĕлтерсем тăвансене:
Çитĕ кун, уяв хăпарĕ
Кишиневăн урамне.

Малалла! Хĕвел пек пытăр
Пирĕн алăри ялав!
Аслă Сталин сывă пултăр!
Аслă Сталина—мухтав!

Чăваш боецĕсемпе командирĕсен çыруне **УХСАЙ ЯККĂВĔ** сăвăласа çырнă.

**Ку çырăва** чăваш **боецĕсемпе** командирĕсем 1942 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче митингра ырлаçа йышăннă.

М. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН

# ФРОНТРИ БЛОК-НОТРАН

## I. Вӗретнӗ шыв

Кулешово ялӗ Ака шывӗ хӗрринче ларать. Вӑл фашистсен аллине лекнӗренпе виҫӗ уйӑх ытла иртнӗ ӗнтӗ. Ҫак хушӑра яла фашист салтакӗсем пӗтӗмпех ҫаратса пӗтернӗ.

Ҫак уйӑхра Кулешово ялӗ патӗнче хӗрӳ ҫапӑҫу пулса иртрӗ. Фашистсем темиҫе кун, темиҫе ҫӗр ялтан тухасшӑн мар пулса хирӗҫ тӑчӗҫ. Ҫук, чӑтса тӑраймарӗҫ, вӗсен яла пӑрахса тухмаллах пулчӗ. Халӗ ӗнтӗ ял каллех Хӗрлӗ Ҫар аллине куҫрӗ. Чӗрӗ юлнӑ колхозниксем пире ҫав тери савӑнаҫлӑн кӗтсе илчӗҫ. Вӗсем хӑйсене ирӗке кӑларнӑшӑн Совет влаҫне, Хӗрлӗ Ҫара, Сталин юлташа тавтӑваҫҫӗ. Хайсене фашист салтакӗсем ҫаратни ҫинчен пӗр-пӗринчен ӑмӑртмалла пире каласа параҫҫӗ. Пурне те ҫырас пулсан, ҫӳҫ-пуҫ вирелле тӑрать.

Ака пирӗн умра вӑтам ҫулхи хӗрарӑм Соломонида Яковлевна. Унӑн упӑшки колхоз председателӗ пулнӑ. Вӑрҫӑ пуҫлансан ӑна Хӗрлӗ Ҫар ретне илнӗ. Соломонида Яковлевна икӗ ачипе тата 70 ҫула ҫитнӗ хуняшшӗпе тӑрса юлать. Хуняшшӗ ӗҫлеймест, вӑл чирлӗ, ялан кӑмака ҫинче ахлатса выртать. Вилӗм кӗтет. Анчах вилӗмӗ те унран таҫта тарса пытаннӑ.

Соломонида Яковлевнӑн ултӑ кӗтеслӗ ҫӗнӗ пӳрт. Ку пӳртне вӗсем иртнӗ ҫул ҫеҫ туса ӗлкӗрнӗ. Ӑшӗ таса, ултӑ кантӑклӑ, ҫутӑ, урайне сӑрланӑ. Ҫавӑнпа та кунта фашист офицерӗ пурӑнма чарӑннӑ. Офицер кӑшт-кашт вырӑсла та калаҫнӑ. Пырса кӗрсе вырнаҫсанах вӑл:

— Инке, ан хӑра манран. Эпӗ офицер. Сана усал тӑвас ҫук. Ку ял ӗнтӗ манӑн пулать. Ӑна мана фюрер пиллесе пачӗ,—тесе пӗлтерет.

Соломонида Яковлевна офицера хирӗҫ кӗскен:

— Мӗн тӑвас. Пурӑн ӗнтӗ. Эсӗ хуҫа,—тесе ҫеҫ ответлет.

Кӑмака ҫинче чирлӗ старик ахлатса выртать.

— Кам ку?—ыйтать офицер.

— Манӑн упӑшкам ашшӗ.

— Мӗншӗн ахлатать вӑл?

— Чирлӗ.

— Чирлӗ? Апла пулсан ӑна пӳртрен кӑларса пӑрахас. Вӑл мана ҫывӑрма кансӗрлет,—тет офицер.

Соломонида Яковлевна тӗлӗнсе каять:

— Ара, эсӗ мана усал тумӑп, терӗн вӗт. Чирлӗ ҫынна ӑҫта кӑларса пӑрахас? Вӑл йыт ҫури мар вӗт, ват ҫын.

— Нумай ан калаҫ! Каланă сана пĕрре: вăл мана кансĕрлет, тесе. Ҫавăнпа вăл старике ман куҫ умĕнчен тасатас пулать. Унсăрăн эпĕ ăна халех...

Соломонида Яковлевна ним те тума пултараймасть. Старике урăх вырăна куҫарса вырттарать.

Офицер пурăнма куҫсан ҫутă ҫĕнĕ пӳрт темшĕн кивелнĕ пек туйăнма пуҫлать. Тĕрме евĕр тĕттĕмĕн курăнать.

Офицер хăйне-хăй чăн-чăн хуҫа пекех тыткалать. Хуҫа арăмне тарҫă вырăнне хурать. Хăйне валли тутлă апат хатĕрлеме хушать. Шыв вĕретсе ҫурăмне ҫутарать. Нимĕн намăса та пĕлмест, хĕрарăм умĕнчех ҫарамасланать. Мăшкăл! Соломонида Яковлевна ют арҫынна мар, хăйĕн упăшки ҫарамасланнине те курман. Тӳсме ҫук хурлăх. Ирĕклĕ хĕрарăм фашист офицерĕн чури пулса тăчĕ.

Вăхăт ҫавтери майĕпен иртет. Кунсем ҫулталăк тăршшĕ туйăнаҫҫĕ. Соломонида Яковлевна ҫĕрĕ-ҫĕрĕпе ҫывăраймасть, фашист офицерĕнчен хăтăласси ҫинчен шухăшласа выртать. Хĕрлĕ Ҫар каялла ҫаврăнса килессе кĕтет.

Фашист офицерĕ патне тата ытти офицерсем те пыраҫҫĕ. Вĕсем пуҫтарăнса лараҫҫĕ те картла выляҫҫĕ. Соломонида Яковлевнăна апат хатĕрлеме хушаҫҫĕ. Вунă чăхă, пилĕк хур, вуникĕ кăвакал пурччĕ, вĕсене пурне те офицерсем пусса ҫисе пĕтерчĕҫ. Урăх нимĕн те юлмарĕ ĕнтĕ.

Офицер кашни кунах чăх ашĕ е хур ашĕ пĕҫерме хушать.

— Урăх чăхă та, хур та, кăвакал та ҫук ĕнтĕ манăн,—тет хĕрарăм.

— Эпĕ санран пуррипе ҫуккине ыйтмастăп. Мана пĕҫерсе панă пултăр, унсăрăн хăвнах йывăр пулĕ. Санăн пулмасан кӳршĕсен пур, вĕсенчен ил,—тесе хушать офицер.

— Кӳршĕсен те ҫук ĕнтĕ, вĕсенне те хăвăрăн салтакăрсемех ҫисе пĕтерчĕ.

— Манпа нумай калаҫса ан тăр эсĕ!—кăшкăрса тăкать офицер.

Хĕрарăмăн нимĕн те тума ҫук. Вăл пăхăнать. Кашни кун, кашни сехетрех ăшра курайманлăх ӳсет.

Пĕр каҫхине офицер ҫывăрма выртас умĕн:

—Мадам, ирхинене вĕри шыв хатĕрле. Манăн ҫăвăнас пулать, —тесе хушать.

— Юрĕ, хатĕр пулĕ,—килĕшет хĕрарăм.

Вăл каҫах ҫăлтан шыв кӳрсе хурать. Ҫĕрĕпе шухăшлать. Хăйшĕн вăл пит хуйхăрмасть, ачисене тăлăха хăварасран ҫавтери хурланать. Тата вată, чирлĕ хуняшшĕ пур. Ăна кам пăхĕ?

Соломонида Яковлевна ирех тăрать те, кăмакине типĕ вутăпа хутса ярать. Витре кĕрекен чугунпа шыв лартать. Хăй пĕрех харăлтатса ҫывăракан фашист офицерĕ ҫине ҫаврăна-ҫаврăна пăхать.

Акă чугун вĕреме пуҫлать. Ытла сиксе вĕренипе хĕрринчен шыв тумламĕсем сирпĕнсе ялкăшса ҫунакан кăмакари вутта лăплантараҫҫĕ.

Соломонида Яковлевна урăх тăхтаса тăмасть. Вăл витре шывлă вĕрекен чугуна тытать те, тӳрех çывăракан фашист офицерĕн пуçĕ çине сапать. Вĕри шыв çĕлен пек чашкăрса офицер ӳчĕ тăрăх юхать.

Офицер урайне чăсăлса ӳкет, вăл ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр аллисемпе çапкаланать, урисемпе тапкаланать, хĕрарăм пĕрех ун çине вĕри шыва тăкать:

— Акă, çăвăн, тасал,—тесе пăшăлтатать вăл.

Унтан хĕрарăм офицера тĕпсакайне сĕтĕрсе антарса пăрахать. Хăй каллех чугунне шыв тултарса кăмакана лартать. Чылай вăхăт иртсен тĕпсакайне анса пăхать... Офицер лăпланнă. Вăл сывламасть те, вилнĕ.

— Акă, эсĕ мана, таса хĕрарăма, мăшкăлларăн, эпĕ сана вĕренĕ шывпа ăшаларăм,—тесе шухăшлать.

Çутăлать, офицер çук. Ытти офицерсем пыраççĕ.

— Ăçта?—ыйтаççĕ.

— Вăл каçах тухса кайрĕ те, таврăнман-ха,—ответлет хĕрарăм.

Кĕтеççĕ, офицер çук. Шыраççĕ,— тупаймаççĕ. Хĕрарăмран тĕпчеççĕ. Вăл çирĕп ответлет:

— Эпĕ офицерăн хуралçи мар-çке. Ав, ыйтăр алăк умĕнче тăракан часовойран.

Часовойран ыйтаççĕ:

— Каçхине тухса кайрĕ те, таврăннине курмарăм,—тесе ответлет часовой. Кам пĕлет ăна, тен вăл пĕлет те-и, анчах хăйне айăпласран шикленсе каламасть-тăр.

Вăхăт нумай те иртмест, ял çине Хĕрлĕ Çар наступлени туса, фашистсене хуса кăларать. Халĕ ĕнтĕ Соломонида Яковлевна хăйĕн ĕçĕ çинчен Хĕрлĕ Çар боецĕсене каласа парать.

Çавăн пек хастарлă пирĕн Совет хĕрарăмĕсем, хĕçпăшалпа çеç мар, вĕри шывпа та фашистсене пĕтереççĕ. Фашист офицересемпе салтакĕсем кашни утăмрах хăйсен вилĕмĕсене тупаççĕ: Советсен çĕршывĕ аслă, вăл фашистсене пĕререн-пĕререн çатса пĕтерет.

## II. Политрук

*(Калав)*

Политрук Самсонов кăçалхи çуркунне пирвайхи хут куккук авăтнине илтсен тăна кĕчĕ:

„Чăн-ши ку е тĕлĕк-ши? Тен эпĕ вилнĕ пуль, е чĕрех-ши?.“

Вăл халĕ хăш çул, хăш уйăх, мĕнле кун паян—нимĕн те пĕлмест. Унăн шухăшĕсем пĕтĕмпех пăтранса кайнă. Куçне уçса пăхрĕ. Хăй умĕнче пĕр çамрăк хĕрарăм тата тепĕр шурă сухаллă ватă старик ларнине курчĕ. Алли-урисене хускатрĕ. Сылтăм ури туни çĕçĕпе чикнĕ пек сурса ыратать. Ĕçесси килнипе çăвар ăшĕ типсе кайнă, чĕлхи хытса ларнă, пырĕ тĕпĕнчен ват пек йӳçĕ сурчăк хăпарать.

„Мĕн пулнă мана? Ăçта эпĕ? Ку хĕрарăмпа старик камсем-ши? Мĕншĕн вĕсем ман патра?“

Хӗрарӑмпа старик хире-хирӗҫ ларнӑ та, шӑпах. Вӗсем ырӑ та, усал та чӗнмеҫҫӗ. Ҫуркуннехи ӑшӑ ҫил вӗрнипе тин ҫулҫӑ ҫурса лапсӑртатнӑ йывӑҫсем майӗпен сулланаҫҫӗ. Пӗр кӑтра туратлӑ хурӑн тӑрринче чӑпар куккук ывӑнма пӗлмесӗр авӑтать. Унӑн сасси пӗтӗм таврана илем парать. Ав, ҫакӑнтах ҫӑхансем те карӑнклатса вӗҫеҫҫӗ. Анчах вӗсен сассине илтес килмест, вӗсем ҫынна сывлӑх мар, вилӗм сунса кӑшкӑрнӑ пек туйӑнать.

„Ӑҫтан, мӗнле майпа ҫитсе ӳкнӗ эпӗ ку вӑрманваррине?"— тесе шухӑшлать политрук Самсонов. Эрех ӗҫсе ӳсӗрӗлсе ӑнтан кайман-ши вӑл? Ҫук, вӑл хӑй ӗмӗренче нихҫан та ӳсӗрӗличчен ӗҫсе курман. Эрех ӗҫекенсене те юратмасть вӑл.

Кӑтра хурӑн тӑрринчи куккук тата темиҫе хутчен ярӑнса авӑтрӗ те урӑх еннелле вӗҫсе кайрӗ.

Политрук Самсонов пуҫне ҫеклесе пӑхрӗ:

—Калӑр-ха тархасшӑн, ӑҫта эпӗ? Эсир хӑвӑр камсем пулатӑр? Мӗн пулнӑ мана?—тесе тилмӗрсе ыйтрӗ вӑл хӗрарӑмпа старикрен.

Хӗрарӑм Самсонов патнерех куҫса ларчӗ:

—Эсӗ, юлташ, вӑрманта. Эпир колхозниксем пулатпӑр. Ку манӑн атте. Астумастӑн-им, пирӗн ялта хӗрӳ ҫапӑҫу пулчӗ? Ҫав ҫапӑҫура сана суранланӑ. Юну нумай юхнипе эсӗ тӑнна ҫухатнӑ. Фашистсем хытӑ хӗснипе пирӗннисем ялтан чакрӗҫ. Эпир те аттепе нимӗҫсен аллине лекес мар тесе ялтан тухрӑмӑр. Пӑхатпӑр, эсӗ ҫул айккинче юн юхтарса выртатӑн. Эпир вара аттепе, сана ҫӗклесе, вӑрмана ҫитиччен йӑтса килтӗмӗр. Суранна тирпейлесе ҫыхрӑмӑр,—терӗ хӗрарӑм.

Политрук Самсонов тата чылай вӑхӑт мӗн пулнине шухӑшласа выртрӗ. Суранланнӑ ури ҫине пӑхрӗ; ӑна хӗрлӗ тутӑрпа чӑркаса ҫыхнӑ

— Халӗ ӑнтӗ кӑшт ҫеҫ чухлатӑп. Апла халӗ ялта нимӗҫсем?— терӗ вӑл хӗрарӑм куҫӗнчен пӑхса.

— Пирӗннисем инҫе мар чакрӗҫ. Ял тулашне ҫеҫ тухрӗҫ. Халӗ ялта пушӑ. Никам та ҫук, нимӗҫсем пырса кӗме хӑраҫҫӗ пулас,—тесе ӑнлантарчӗ хӗрарӑм.

Политрук хӑй тавра пӑхрӗ.

— Манӑн автомат ӑҫта-ши?

— Санӑн автомату акӑ. Эпӗ ӑна сана кирлӗ мар пулсан та, хама кирлӗ пулӗ, тесе илсе килтӗм. Халӗ ӗнтӗ эсӗ сурану тӳрленмесӗр вӑрҫа юрахлӑ ҫын мар. Эпӗ ватӑ пулсан та, сывӑ, тӗрӗс-тӗкел-ха. Ӑнсӑртран кунта нимӗҫсем килес пулсан, партизан отрядне те кайма пултаратӑп. Унта пӑшал кирлӗ,—терӗ старик.

— Патронсене те пуҫтартӑн-и?

— Пӗр патрон та хӑвармарӑм, пӗтӗмпех пуҫтартӑм.

— Миҫе ҫулта эсӗ, мучи?

—Ҫул сахалах мар, утмӑла ҫитрӗм. Ҫапах та сывлӑх ҫирӗп-ха. Сана ҫакӑнта хам йӑтса ҫитертӗм вӗт.

Политрук пӗр вӑхӑт шухӑша кайса выртрӗ. Суранлӑ ури ыратать пулсан та, вӑл вилӗмрен тата нимӗҫсен аллине тыткӑна

лекесрен хăтарнăшăн çав тери савăнать. Хăй умĕнчи хĕрарăмпа старик уншăн хаклăран та хаклă çынсем пек туйăнаççĕ.

— Чăн, мучи, эпĕ ĕнтĕ тек нихăçан та вăрçа юрăхлă çын пулаймăп. Çавăнпа мана пăшал кирлĕ мар пулĕ. Автомата сана пиллесе паратăп. Тавтапуç сире, мана çăлнăшăн. Халĕ ĕнтĕ эсир мана хамăрăннисем патне леçсе хăварăр. Унтан мана госпитале ăсатĕç,—терĕ политрук.

— Тăхта, халĕ сана хамăрăннисем патне леçме май çук, вăрмантан тухсан уй урлă каçмалла. Унта нимĕçсем курсан персе пăрахма пултараççĕ. Тĕттĕм пулсан йатса леçĕпĕр,—тесе пĕтерчĕ старик.

— Юрĕ эппин,—килĕшрĕ политрук.

— Юлташ, санăн ĕçессӳ килет пулĕ. Эпĕ халех шыв ăсса килем,—терĕ хĕрарăм.

— Калама та çук. Анчах мĕнпе шыв ăсса килĕн-ши?—терĕ политрук. Шыв çинчен асăнсан унăн типĕ çăварĕ пушшех типсе кайнă пек туйăнчĕ.

— Ан кулян, шыв ăсса килме савăт тупатпăр,—терĕ хĕрарăм. Çавăнтах вăл ури çине тăчĕ те старик пуçĕнчи картуса хывса илчĕ:

— Аттен картусĕ çирĕп. Пĕр тумлам та шыв юхмасть.

Вăл йывăççен хушшипе варалла анса кайрĕ.

— Чĕрĕ çын вăл—хырăм тăрантма мел тупать,—тесе юлчĕ старик.

— Чăн калатăн, мучи... Санăн хĕрӳ пултараканскер пулас. Миçе çула çитнĕ-ха вăл?

Старик юн нумай юхнипе сăнĕ шуралнă политрук çине пăхса илчĕ;

— Хамшăн аван пек. Çынсемшĕн пĕлместĕп... Çирĕм çул тултарать ĕнтĕ. Амăшĕнчен виçĕ çулта кăна юлнăччĕ. Хамах пăхса ӳстертĕм.

— Манран икĕ çул çеç кĕçĕн апла. Манăн та анне çеç килте, эпĕ те тăлăх ӳснĕ,—терĕ политрук.

Старик çамрăк политрук çине ăшă куçĕсемпе тепĕр хут пăхса илчĕ:

— Вăрçă чарăнсан, хăвна пулăшнине манмасан, тен, татах пĕрне-пĕри курăпăр-ха...

— Эсир мана пулăшнине эпĕ, мучи, виличчен те манассăм çук. Ура юсансанах, чи малтан сирĕн пата хăнана килĕп. Вăрçă çеç часрах чарăнтăрччĕ...

Çак вахăтра инçе те мар çын калаçнă сасă илтĕнчĕ. Старик ури çине сиксе тăчĕ.

— Ах, Раисăна фашистсем тытмарĕç-ши?

Политрук та тăрасшăн пулчĕ, анчах хуçăлнă ури çине пусайман пирки, тайăлса кайрĕ те, каллех çĕре ӳкрĕ.

— Ман пирки хĕр нимĕçсен аллине лекмерĕ-ши? Мĕншĕн ĕçес килнине пĕлтертĕм. Йывăр пулсан та, каç пуличчен чăтмаллаччĕ,—хăйне хăй ятларĕ политрук.

— Нимĕçсем!.. Кунталла килеççĕ. Акă, хайхи санăн автомату

халех кирлӗ пулчӗ,—терӗ старик, политрукӑн автоматне ярса тытса.

— Пеме пӗлетни?—хуллен ыйтрӗ политрук.

— Пӗлетӗп. Юлташ, эсе мӗнле те пулин ав ҫавӑнталла шу,—тесе пуҫне тайса кӑтартрӗ старик.

Политрук пӗр йӑваннӑ чӑрӑш каски хыҫнелле упаленчӗ.

— Юлташ, ме хӑвӑртрах шыв, ӗҫ. Фашист салтакӗсем ҫирӗм ҫын ытла кунталла килеҫҫӗ,—терӗ Раиса, политрука картус тулли шыв парса.

Политрук шыва пӗр канмасӑр ӗҫсе ячӗ; ҫӑмӑл пек туйӑнчӗ ӑна.

Фашист салтакӗсем ҫывӑхах ҫитрӗҫ. Старике курчӗҫ.

— Русс! Партизан!

Старик автоматран пеме пуҫларӗ.

Нимӗҫсем выртрӗҫ.

— Раиса, мел пулсан, пирӗннисене пӗлтересчӗ. Фашистсем хыҫала тухса ҫавӑрса илесшӗн пулас,—тесе пӑшӑлтатать политрук.

Фашистсем старик ҫинелле пере пуҫларӗҫ. Вӑл хирӗҫ тавӑрать.

— Юлташ, атя эпир ку вырӑнтан каяр. Атте вӗсемпе пӗччен те ҫапӑҫӗ. Пуринчен ытла—манӑн сана сыхлас килет,—тет Раиса.

— Ҫук, аҫуна пӑрахса кайма юрамасть. Ӑнсӑртран ӑна... амантсан, автоматпа эпӗ хам ӗҫлеме тивӗҫ. Утаймасан та, манӑн алӑсем сывӑ,—тет политрук.

Старик пӗчченех ҫирем фашиста хирӗҫ ҫапӑҫать. Вӗсенчен хӑшӗсем юн юхтарса выртаҫҫӗ ӗнтӗ.

— Эх, тепӗр автомат пулсан..—тарӑхать политрук.

—Виҫҫӗмӗре—виҫҫӗ пулсан тата та аванччӗ те. Ҫук вӗт. Аҫтан тупас?—тет Раиса.

Вӗсем политрукпа иккӗшӗ ҫӳллӗ каска хыҫӗпе пӑхса лараҫҫӗ. Пуҫӗсем урлӑ пульӑсем наӑласа иртеҫҫӗ.

Старик персен-персен, хӑй ҫине фашистсем кӗнине чӑтса тӑраймарӗ, каска хыҫне упаленсе пырса выртрӗ. Халӗ ӗнтӗ вӗсем виҫҫӗшӗ те пӗрле:

— Патрон сахалланать. Сана, юлташ, мӗнле хӑтарас-ши?—тесе пӑшӑлтатать старик, политрук ҫине пӑхса.

— Мучи, эсир кайӑр. Пар-ха автомата хама. Эпӗ вӗсемпе хам,—терӗ политрук.

Вӑл халӗ ури ыратнине те манса кайрӗ. Ура ҫинче утса килекен фашист салтакӗсене пӗрерӗн-пӗрерӗн персе ӳкерме пикенчӗ.

— Ҫук, эпир сана пӑрахса каймастпӑр. Вилсен те пӗрле вилетпӗр,—тет старик.

Политрук пӗр пуля сая ямасӑр перет. Юлашки пилӗк-ултӑ фашист каялла тарма пуҫларӗҫ.

Старик фашистсем тарма пуҫланине курсан, чӑтса лараймарӗ, каска хыҫӗнчен сиксе тӑчӗ те кӑшкӑрса ячӗ.

— Ур-ра!

Фашистсем шурă сухаллă старике курсан, партизансем тесе пушшех хăрарĕç пулас, тата хытăрах тарма пикенчĕç.

— Патрон та пĕтсе çитрĕ. Фашистсем те юлмарĕç,—терĕ политрук, аллинчи автоматне каска çине хурса.

— Халĕ ĕнтĕ хамăрăннисем патне кайма пултаратпăр,—терĕ Раиса.

Вĕсем ашшĕпе иккĕшĕ политрука икĕ хулĕнчен çавăтса, йывăççем хушшинелле кĕрсе кайрĕç.

Хĕвел анчĕ, каç пулчĕ, тӳпере çурла пек çĕнĕ уйăх курăнчĕ.

## III. Лизавета Егоровна

Пушево ялĕнче ĕнер нимĕçсем пулнă. Паян вăл пирĕн алла куçрĕ. Мĕнле каламалла: халĕ ĕнтĕ вăл ял мар, ялăн вырăнĕ çеç тăрса юлнă. Çурт-йĕрĕсем çунса пĕтнĕ, кăмака мăръисем çеç (ишĕлсе анайманнисем) тăрна мăййĕсем пек вăрăмăн курăнса лараççĕ, çунса пĕтеймен пĕренесем тĕтĕм кăларса выртаççĕ. Кашни колхозникĕн панулми сачĕ пулнă, вĕсем те çунса пĕтнĕ. Ялта пĕр выльăх-чĕрлĕх чунĕ те юлман, пурне те нимĕç оккупанчĕсем пуçтарса хуса кайнă.

Çынсем те курăнмаççĕ. Ăçта саланса пĕтнĕ-ши вĕсем? Тен çынсене те нимĕçсем пуçтарса хăйсемпе пĕрле илсе кайнă-ши? Тен вĕлерсе пĕтернĕ пуль? Апла тесен виллисем курăнĕччĕç.

Пăхатпăр, çунса пĕтеймен пĕренесем хушшинчен пĕр хĕрарăм пуçне çĕклесе пăхрĕ:

— Вырăссем им эсир?—тесе хурлăхлă сасăпа ыйтрĕ вăл пирĕнтен.

Эпир хĕрарăма курсан ун патне пытăмăр. Унăн пичĕ-куçĕ чĕп-чĕрĕ юн, çийĕнчи кĕпи çуркаланса пĕтнĕ.

— Вырăссем. Красноармеецсем эпир,—тет командир.

Хĕрарăм саваннипе кулса илчĕ:

— Эпĕ ĕнтĕ: эсир килместĕр пулĕ, саплипех вилме тивет, тесе, пĕтĕм шанчăкăма çухатнăччĕ. Тавтапуçах сире,—тесе ури çине тăчĕ хĕрарăм. Вăл темшĕн аллисемпе сывлăша хыпалать.

— Мĕн пулнă сана, инке?—тесе ыйтатпăр.

Хĕрарăм аллисемпе хăлаçланса, пирĕн паталла утма тăчĕ, анчах пĕрене çине такăнса йăванса кайрĕ:

— Ах, куçăмсем курмаççĕ çав ĕнтĕ манăн. Ылханлă фашистсем мана сĕм суккăр туса хăварчĕç. Сассăра илтетĕп те, хăвăра курмастăп-çке.

Эпир ăна аллинчен тытса çĕклесе тăратрăмăр. Чăнах та хĕрарăмăн икĕ куçĕ те шăтса юхнă. Куç шăрçи вырăнĕсем пушă. Куçхупанкисене çĕклесе пăхать пулин те, нимĕн те курмасть. Çута тĕнче уншăн пĕтĕмпех тĕттĕмленнĕ. Унăн куçĕсем ĕнтĕ нихăçан та юсанас çук, çута хĕвел те уншăн сĕм тĕттĕм. Вăл хăй пĕчĕк ача пек ĕсĕклесе йĕрет, анчах унăн куççулĕ тухмасть. Чĕри патĕнчен тарăхса тухакан сасси çеç вăл йĕнине пĕлтерет тата вĕри сывлăшпа типнĕ тутисем çавна калаççĕ.

Кам-ха çак хĕрарăм? Мĕншĕн ăна фашист палачĕсем ĕмĕр-ĕмĕр асапланмалла туса хăварнă? Капла суккăрлантарса хăвариччен, вĕлерне пулсан унщăн çăмăлтарах пулнă пулĕччĕ?!

— Эпĕ хамăр ялта колхозра председатель пулса ĕçлеттĕм. Манăн икĕ ывăлăм тата упăшкам Хĕрлĕ Çара кайрĕç. Эпĕ пĕччене тăрса юлтăм... Мана халăх суйласа лартнă, халăх мана шаннă. Колхоз калама та çук пуянччĕ пирĕн. Иртнĕ çул ĕçкунĕ пуçне вуншар килограмм тĕштырă, пилĕкшер тенкĕ укçа валеçсе патăмăр. Колхозниксем пуян та культурăллă пурăнма пуçланăччĕ. Фашист оккупанчĕсем килсе пĕтĕмпех пĕтерчĕç. Хама суккăр туса хăварчĕç,—тесе пуçларĕ хĕрарăм хăйĕн сăмахне.

Вăл хĕрарăмăн хушамачĕ—Губанова, ячĕ — Елизавета. Ăна колхозниксем Лизавета Егоровна,—тесе чĕнеççĕ,

Вăл çав тери хастарлă та тӳрĕ хĕрарăм пулнă. Ăна пурте юратнă. Вăл хушнине итленĕ.

— Лизавета Егоровна колхоз председателĕ çеç мар, вăл пирĕн питĕ те çывăх çын. Эпир вăл ертсе пынипе çапла ырлăхлă пурăнатпăр,—тесе мухтанă колхозниксем. Вĕсем çак хĕрарăмшăн вутра çунма, шывра путма хатĕр пулнă. Анчах ялта Лизавета Егоровнăна курайман çын та пулнă. Çав çын ăна фашистсене сутнă. Çав тăшман пирки вăл халĕ çутă тĕнчене çухатнă, ĕмĕрлĕхе суккăр пулса юлнă. Мĕн каласан та: кашни çыннăн хăйне кура тусĕсем пур, çавăнтах тăшманĕ те çапкаланса çӳрет. Анчах вăл тăшман вăхăт çитиччен тискер кайăк пек пытанса пурăнать. Вăл хăй сурăх пек йăваш курăнсан та, вăхăт çитсен сурăх тирне хывса пăрахать те, кашкăр тирне тăхăнса, асав шăлĕсемпе хире-хирĕç шаккаса, хăйĕн тискер ĕçне тума тытăнать.

Июнь уйăхĕн вĕçĕнче, пĕр ирхине Пушево ялне фашистсен карательнăй отрячĕ пырса çитет. Отряд начальникĕ—офицер, вырăсла таса калаçма пĕлекенскер, тӳрех колхоз правленине пырса кĕрет:

— Калăр-ха, кам кунта сирĕн колхозра председатель пулать? —тесе ыйтать вăл.

Правленинче Лизавета Егоровнăран пуçне тата икĕ колхозник лараççĕ. Пĕри— Сырцов Павел, тепри—Воронцов Сидор.

— Ара, ку нимĕç мар-çке, вырăс,—хăйсен хушшинче калаçса илеççĕ Сырцовпа Воронцов.

Лизавета Егоровна хăй председательне пытармасть:

— Эпĕ пулатăп председатель.

Офицер ун çине урлă та тăрăх пăхса илет:

— Аван. Халех колхозниксене пуçтар. Манăн вĕсемпе калаçмалли пур.

— Мĕн çинчен калаçасшăн апла?

— Вăл сан ĕç мар. Калана сана пĕрре: колхозниксене пуçтар, тесе. Пуçтар!—кăшкăрса тăкать офицер сасартăк.

Лизавета Егоровна колхозниксене пуçтарма канцеляринчен тухса каять.

Офицер Воронцова палласа илет:

— Сидор, эсĕ вĕт ку?

— Эпĕ паллаймарăм-çке? Эпĕ сана нимĕç офицерĕ пулĕ тесе.

— Чăн, нимĕç офицерĕ. Анчах эпĕ нимĕç мар, вырăс. Астăватăн-и Брянцев улпута?

— Астумасăр. Епле астăвас мар хамăр хуçана. Ун патĕнче манăн атте приказчикра пурăнатчĕ,—тесе тавăрать Воронцов.

— Эпĕ унăн ывăлĕ—Сергей. Мантăн-им, пĕрле выляттăмăр? Эпĕ сана час-часах хĕнеттĕм. Вăрах вăхăт иртнĕ çав ĕнтĕ. Çирĕм çул ытла вĕт... Эпĕ сана акă пирвай курсах палларăм,—тесе тутисене саркалать офицер.

— Сергей Васильевич! Вашбродь! Пăх-ха, ăçтан тĕлпултăмăр! Вот савăнăç,—хĕпĕртет Сидор.

Офицерпа Воронцов пĕрне-пĕри алă парса паллашаççĕ.

— Сирĕн яла фюрер мана пачĕ. Халĕ ĕнтĕ эсир пурсăр та манăн пулатăр. Ан хăра, эпĕ сана, Сидор, ялта староста тăвăп. Эсĕ мана халăха ĕçлеттерме пулăшăн. Килĕшетĕн пулĕ?—тет офицер.

Воронцов шухăшласа тăмасть:

— Тавтапуç сана, вашбродь, мана пысăк ĕç шанса панăшăн, —тесе тавтăвать.

Сырцов Воронцовпа офицер калаçнине итлесе тăма пултараймасть, тухса шăвать.

Вĕсем иккĕн çеç юлсан та нумайчен калаçаççĕ. Малашне мĕн-мĕн тăвасси çинчен сăмах пĕтереççĕ.

Колхозниксем часах пуçтарăнман. Вĕсем пĕрерĕн-пĕрерĕн çеç пынă.

— Колхозниксем нумайĕшĕ килте çук, уйра ĕçлеççĕ,—пĕлтернĕ Лизавета Егоровна.

— Аван, мĕн пуçтарăннипе çитĕ мана, ĕçлекенсем ĕçлеччĕр, —тет офицер.

Пуринчен ытла ватă стариксемпе карчăксем пуçтарăннă. Çамрăксенчен пĕр-икĕ çын анчах.

— Çамрăксем ăçта?—ыйтнă офицер, Лизавета Егоровна çине пăхса.

— Паллă ĕнтĕ, вĕсем пурте вăрçа кайса пĕтнĕ,—кĕскен ответленĕ Лизавета Егоровна.

Офицер колхозниксем умне тухса тăнă та сăмах калама пуçланă.

— Эсир мана паллаймастăр пулас-ха. Паллатарас. Эпĕ Брянцев улпут ывăлĕ пулатăп—Сергей Васильевич. Астăватăр-и?

— Чăнах та çавă, ашшĕ сăнлах. Каллех эпир вĕсен аллине çитсе лекрĕмĕр пулать-и? Пирĕн пĕтĕм пурлăх ăна пулать,— хăйсем хушшинче калаçса илчĕç колхозниксем.

— Вырăс çынни, епле-ха вăл нимĕç офицерĕ пулнă?—тесе хуллен ыйтнă пĕр ватă колхозница Лизавета Егоровнăран.

— Улпутсем вĕсем—пурте—фашистсем майлă,—ăнлантарнă лешĕ ăна.

— Малашне ĕнтĕ „колхоз," „совет" тенĕ япаласем пĕтрĕç. Паянтан пирĕн—нимĕçсен влаçĕ пуçланчĕ. Колхоз пурлăхĕ пĕтĕмпех манăн алла куçать. Эсир ĕçлетĕр, эпĕ уншăн сире тăрантарăп.

Ăнлантăр-и?—тесе ыйтрĕ офицер.

Ăнланмасăр, пурте лайăх ăнланнă. Анчах ирĕк пурăнма вĕреннĕ çынсен пĕртте чура пулас килмен. Çапах та ăна вĕсем улпут умĕнче уçса каламаççĕ. Пĕр Лизавета Егоровна çеç хăраман. Вăл сиксе тăнă та:

— Пĕтĕм колхоз пурлăхĕ сана пулать-и? А пире—хресченсене мĕскер?—офицер куçĕнчен тинкерсе пăхса ыйтнă вăл.

Офицер аллисене хире-хирĕç тытса йăваланă:

— Сире, хресченсене нимĕн те кирлĕ мар. Эсир ĕçлетĕр. Эпĕ сире тăрантарăп. Ăнланмалла пек?

— Ăнланмалла та, пĕтĕмпех мар,—пӳлнĕ офицера Лизавета Егоровна.

Офицер урăх нимĕн те каламан, ун вырăнне Воронцов тухса тăнă.

— Мĕн ăнланмалла марри пур вара кунта?

Лизавета Егоровна Воронцов куçĕнчен пăхса илнĕ.

— Ара, эсĕ, Воронцов юлташ, часах урăх май кайса ӳкнĕ-çке?

— Вăл сирĕншĕн текех юлташ мар ĕнтĕ—господин староста.

— Вăл хушнине итлес пулать. Унăн сăмахĕ сирĕншĕн—закон. Ку та ăнланмалла пек,—тенĕ офицер.

Çакна илтсен, пурте тĕлĕнсе кайнă. Воронцов çине чалăшăн-чалăшăн пăхса илнĕ.

„Сутăннă",—тесе шухăшланă вĕсем.

Офицер урăх нумай калаçса тăман. Халăха саланма хушнă.

— Кам та кам мана хирĕç тăрать, уншăн ĕç начар пулĕ,—тенĕ вăл юлашкинчен.

Колхоз канцеляринчен офицерпа Воронцов юнашар утса тухнă.

—Вăл хĕрарăма пăхăнтарас çук. Совет влаçĕшĕн çирĕп тăракан-скер вăл,—тесе пĕлтернĕ Воронцов Лизавета Егоровна çинчен.

— Пăхăнтарăпăр. Пит пăхăнмасан, мĕн тăвасси паллă,—тенĕ офицер.

Лизавета Егоровна хăраса ӳкмен. Вăл Хĕрлĕ Çар çĕнтерессе çирĕппĕн шанса тăнă.

— Пирĕн колхоз пурлăхĕ улпута ан пултăр тесен, ăна пĕтерес пулать. Кĕçĕр кам мĕн чухлĕ ĕлкĕрет—выльăх-чĕрлĕхсене ăсатăр, тырă-пулсене пытарăр,—тесе пĕлтернĕ председатель колхозниксене.

Колхозниксем хăйсене ертсе пыракан хĕрарăма ĕненнĕ, ăна шаннă, вăл мĕн хушнине пурнăçланă: пĕр каçра выльăхсем темиçе пуç çук пулаççĕ, тырă та çавах çĕр айне варăнать.

Тепĕр кунне офицер Лизавета Егоровнăна хăй патне чĕнтернĕ

— Колхоз выльăхĕсемпе тырри ăçта кайнă?

— Пĕлместĕп. Халĕ ĕнтĕ эпĕ мар, эсĕ хуçа. Хăна кирлĕ пул сан—сыхла,—тесе ответленĕ Лизавета Егоровна.

— Эпĕ—хуçа, эсĕ—манăн тарçă!—кăшкăрнă офицер.—Ман сăмаха итлемесен...

— Çук, эпĕ саншăн тарçă мар!—çирĕппĕн таварнă хĕрарăм.

Офицер хăйĕн салтакĕсене чĕнтернĕ:

— Ан вӗлерӗр. Пӑхӑнтарӑр, çухалнӑ выльӑхсене, тырӑсене туптарӑр,—тенӗ вӑл.

Нимӗç салтакӗсем Лизавета Егоровнӑна темиçе сехет хушши асаплантарнӑ. Лешӗ шӑлне çыртса тӳснӗ. Выльӑхсем ӑçтине те, тырӑсене пытарнине те пӗр сӑмах та каламан.

— Лизавета Егоровна, кала, хӑвнах çӑмӑл пулӗ,—пырса çавӑрӑннӑ ун патне Воронцов.

— Çук, эпӗ нимӗçсен тарçи пулмастӑп. Эсӗ вӗсене сутӑннӑ йытӑ,—ответленӗ лешӗ.

Нимӗç оккупанчӗсем Лизавета Егоровнӑна вӗлермен, унӑн икӗ куçне хӗртнӗ пӑшатанпа тӗксе шӑтарнӑ:

— Халӗ ӗнтӗ кӑларса ярӑр. Ыттисем курччӑр ӑна. Эпӗ вӗсене пӑхӑнма вӗрентем,—тенӗ офицер.

Куççӑрланнӑ Лизавета Егоровна аллисемпе хыпашласа, урисемпе такӑна-такӑна урама тухнӑ.

— Колхозник юлташсем! Пуçтарӑнӑр ман патӑма. Пӑхӑр ман çине. Мӗн турӗ мана çӗнӗ хуçа!—тесе кӑшкӑрнӑ вӑл.

Колхозниксем хӑйсен председательне курсан, тӗлӗнсе каяççӗ. Ӑна ытала-ытала чуптӑваççӗ.

— Пирӗн тар кӑларса пуçтарнӑ пурлӑх çӗнӗ хуçана ан пултӑр! Колхоз витисене, кӗлечӗсене, сарайӗсене вут тӗртӗр. Çӗнӗ хуçана кӗлӗ çеç юлтӑр!—тенӗ Лизавета Егоровна.

Çав каçхине вара пӗлӗт çине хӗрлӗ шевле ӳкнӗ. Колхоз ялӗнчен çӗнӗ хуçа валли кӗлӗ тата çунса пӗтеймен вутпуççисем çеç тӑрса юлнӑ.

— Лизавета Егоровна, ытти колхозниксем ӑçта?—тесе ыйтатпӑр эпир куççӑр хӗрарӑмран.

— Вӗсем пурте вӑрмана тарса пытаннӑ,—тесе пӗлтерчӗ вӑл пире.

Тепӗр çур сехетрен вӑрмана тарса пытаннӑ колхозниксем пурте пирӗн пата пуçтарӑнчӗç. Вӗсем нимӗнсӗр тӑрса юлнӑ пулсан та, Хӗрлӗ Çар çӗнтерсе килнишӗн çав тери савӑнаççӗ.

— Ан кулянӑр, юлташсем! Хамӑр тара кӑларса пуçтарнӑ пурлӑха хамӑр алӑпа пӗтертӗмӗр. Нимӗç оккупанчӗсене нимех те тивмерӗ. Совет влаçӗ сывӑ пултӑр! Пурлӑха ӑна каллех тӑвӑпӑр. Кивӗ ял вырӑнне çӗнӗ ял шӑтса тухӗ,—тесе ӗнентерет колхоз председателӗ Лизавета Егоровна. Вӑл суккӑрланнӑ пулсан та, шанчӑкне çухатмасть. Кирлӗ пулсан, вилсе çӗр айне кӗрипченех тӑшманпа кӗрешме хатӗр.

## IV. Вӑрманта

Эпир Кураков красноармеецпа иккӗн разведкӑран таврӑнатпӑр. Чылай çӗрте пултӑмӑр, мӗн кирлине турӑмӑр.

„Вырӑна çитсен канӑпӑр ӗнтӗ, тӑраниччен çийӗпӗр, ыйӑх туличчен çывӑрӑпӑр", тесе утатпӑр.

Эпир тухса кайнӑранпа шӑп кӑна икӗ талӑк çитрӗ. Çак хушӑра эпир пурӗ пӗрре çинӗ, çывӑрман, ялан утса, упаленсе, хырӑмпа шуса çӳренӗ. Ирӗк пулсан, çакӑнтах йӑванса каясчӗ

те пĕр пĕлмесĕр ҫывăрасчĕ. Ҫук, пирĕн ҫитес ҫĕре вăхăтра ҫитес пулать, командир приказне тĕплĕн пурнăҫлас пулать.

Пирĕн утмалли тата чылай-ха. Вăрман урлă каҫмалла. Унтан штаб вырнаҫнă яла ҫитмелле. Ҫитсен, командира хамăр мĕн курнине, илтнине тĕплĕн каласа памалла. Вара тин пирĕн ҫиес, ҫывăрас, канас вăхăт ҫитет.

Урасем ывăннă, хырăм выҫнă, ҫывăрас килет пулсан та, эпир васкаса утатпăр. Тапак туртса ярасчĕ, ҫук, вăл та пĕтнĕ пирĕн.

Ак вăрмана ҫитсе кĕтĕмĕр. Ҫулпа кайсан, пилĕк километр ҫаврăнăҫ, тӳрĕрен кайсан—ҫавăн чухлĕ ҫывăхрах.

— Мĕн тăватпăр, ҫулпа ҫаврăнса каятпăр-и?—терĕм эпĕ, вăрман хĕрне ҫитсен.

— Мĕншĕн ҫулпа кайса ҫаврăнса ҫӳрес. Атя тӳрĕрен. Компас пур вĕт пирĕн. Аташса каймăпăр. Пилĕк километра сахалтан та пĕр сехет утас пулать,—тет Кураков,

— Йывăҫсем хушшипе, ҫатăркасем урлă утасси йывăртарах та ĕнтĕ... Ун вырăнне пилĕк ҫухрăм ҫывăх,—тесе килĕшрĕм эпĕ.

Вăрмана кĕрсе кайрăмăр. Кураков компасне аллинче тытса пырать. Вăл малта. Эпĕ ун хыҫҫăн пыратăп. Йĕри-тавра кайăксем юрлаҫҫĕ. Тӳлек ҫил вĕрнипе вăрман хуллен кашлать. Васкаса утатпăр пулсан та, малалла хăвăрт каяймастпăр, мĕншĕн тесен ура вăйĕсем пĕтсе ҫитнĕ.

Кураков сасартăк утма чарăнчĕ.

— Куратăн-и?—тесе таҫта малалла тĕллесе кăтартать.

— Мĕскер?

— Мулкач выртать.

Пăхатăп: чăнах та ҫапă айĕнче мулкач вырта парать.

— Персе тытар. Вырăна ҫитсен пĕҫерсе ҫиййĕпĕр,—тетĕп эпĕ.

Кураков автоматне хулпуҫҫийĕ ҫине тытрĕ те кĕрлеттерсе ячĕ.

Ҫапă айĕнче выртакан мулкач ҫӳлелле сикрĕ те каллех ҫĕре чăсăлса ӳкрĕ. Ҫак вăхăтра пирĕн умра такам:

—Ой!—тесе ҫинҫе сасăпа кăшкăрса ячĕ.

Эпир тĕлĕнсех кайрăмăар.

— Ара, мулкач ҫын сассипе калаҫма пуҫларĕ тем? Мулкач мар пулĕ вăл, шуйттан пулĕ,—тесе тăрать Кураков.

Эпĕ те аптраса тăратăп.

Мулкач юн юхтарса выртать, урисемпе тапкаланать. Хăлхисене лашт янă хăй.

Эпир ҫаплах мулкач патне пыма хăраса тăратпăр. Пĕр-пĕринпе сăмах чĕнсе калаҫмастпăр. Кураков ман куҫран пăхать, эпĕ ун куҫĕнчен пăхатăп. Вăл темĕскертен тĕлĕннĕ пек, куҫĕсене мăч-мăч хупать. Хамăн та ҫавах пулĕ, мĕншĕн тесен чĕре сиксе тухасла тапать. Тĕлĕнмелле, фашистсенчен хăраманнине, мулкачран хăраса ӳкрĕмĕр. Ҫитменнине тата персе вĕлернĕ мулкачран. Кам та пулин аякран пăхса тăрас пулсан, ахăлтатса кулмалла.

Ҫак вăхăтра пирĕн умра пĕр хĕрарăм мĕлки курăнчĕ. Тин чухласа илтĕмĕр: ак кам сасă панă иккен. Хĕрарăм. Мĕнле хĕрарăм вăл, фронтăн малти линийĕнче ҫӳрекенскер? Шпион мар-ши?

— Кам эсӗ? Мӗн шыраса ҫӳретӗн пӗччен ҫи вӑрман варринче?—тесе кӑшкӑрса чӗнчӗ Кураков, автоматне хатӗр тытса.

— Эпӗ... Эпӗ...—терӗ хӗрарӑм хӑранӑ сасӑпа.

Хӗрарӑма курсан, эпир мулкач ҫинчен мансах кайнӑ.

— Ан хӑра, кил кунта. Эпир красноармеецсем!—тесе чӗнетпӗр хӗрарӑма хамӑр пата.

— Хӑрамасӑр, хӑвӑр пӑшалпа петӗр те,—тесе тӑрать хӗрарӑм. Пирӗн пата пыма шикленет хӑй, те татах перӗҫ тесе шутлать.

Мулкач каллех аса килчӗ.

— Ҫук, эпир сана тӗллесе пемен, мулкача петӗмӗр. Ӗненместӗн пулсан, акӑ мулкачӗ,— тетӗп эпӗ, вилнӗ мулкача урисенчен йӑтса кӑтартса.

— Эпӗ ыйӑннипе йывӑҫ тункати ҫумне таянса лартӑм, хам та сисмен, тӗлӗрсех кайнӑ. Ҫывӑхра пӑшал сасси кӗрслетнипе вӑранса кайрӑм. Хӑраниге хам та сисмерӗм, кӑшкӑрса ятӑм,—терӗ хӗрарӑм, хӑй ҫаплах шиклене-шиклене пирӗн пата утса пычӗ. Унӑн ҫийӗнчи кӗпи ҫуркаланса пӗтнӗ, ҫара уран, ҫара пуҫӑн. Ҫӳҫӗ мелке пек лапӑстатса тӑрать; вӑрах вӑхӑт выҫӑ пурӑннипе питҫӑмартийӗсем пӗрӗнсе кӗнӗ, куҫӗсем путса аннӑ, сӑнӗ сапсарӑ.

— Кам эсӗ? Ӑҫтисем? Мӗн шыраса ҫӳретӗн кунта?—ыйтатпӑр.

Хӗрарӑм пиртен вӑтанать пулас, хӑй тӑрӑх пӑхкалать, мӗншӗн тесен кӗпи ҫурӑкӗсенчен ӳчӗ курӑнать.

— Эпӗ Тула облаҫӗнчен, Липатиха ятлӑ ял ҫынни. Мана нимӗҫ фашисчӗсем хӑйсем патне ӗҫлеттерме тытса кайрӗҫ. Икӗ уйӑх хушши Германире пӗр ҫӗрулпучӗ патӗнче ӗҫлесе пурӑнтӑм. Малалла чӑтса пурӑнаймарӑм улпут мӑшкӑлне, тухса тартӑм. Иккӗмӗш уйӑх ӗнтӗ эпӗ унтан тарни. Ҫакӑр татӑкӗ ҫисе курман. Ҫак вӑрмана ҫитсе кӗтӗм те аташса кайрӑм. Ниҫтан тухма пӗлместӗп. Вилетӗп пулӗ тесе шутланӑччӗ. Юрать, эсир ҫитсе лекрӗр,—терӗ хӗрарӑм хурлӑхлӑ сассипе.

— Мӗн ятлӑ эсӗ?

— Таня.

— Хушамату?

— Самокурова.

— Упӑшку ӑҫта?

—Вӑл Хӗрлӗ Ҫарта. Пӗлместӗп, те чӗрӗ ӗнтӗ, те вилӗ.

— Самокуров? Самокуров хушаматлӑ красноармеец пур вӗт пирӗн ротӑра?—тетӗп эпӗ.

— Пур. Тен Таня упӑшкиех пуль,—тет Кураков.

Вӑрманта вӑрах тытӑнса тӑма вӑхӑт ҫук пирӗн. Часрах вырӑна ҫитмелле.

— Ну, Таня, айда пирӗнпе. Хӑвна вӑрманта тупрӑмӑр, тен эпир сана упӑшкуна та тупса парапӑр.

— Тӑхтӑр-ха, сирӗн ротӑра Самокуров хушаматлӑ ҫын пур теместӗр-и эсир? Чӑнах-и?—савӑнӑҫлӑн кӑшкӑрса сиксе ӳкрӗ Таня.—Мӗн ятлӑ вӑл?

— Ятне пӗлместпӗр ҫав. Хушамачӗ ҫаплах.

Эпир персе вӗлернӗ мулкача йӑтрӑмӑр, Таньӑна ертрӗмӗр те, вӑрман тӑрӑх утрӑмӑр. Васкатпӑр. Таня, иккӗмӗш эрне ҫӑкӑр ҫисе курман пулсан та, пиртен юлмасть. Пырсан-пырсан ҫеҫ вӑл:

— Час ҫитетпӗр-и-ха?—тесе ыйтать.

— Инҫе юлмарӗ ӗнтӗ, час,—тесе лӑплантаратпӑр Таньӑна.

Кураков ҫаплах компас ҫине пӑхса утать.

Таньӑпа калаҫкаласа пынипе вӑхӑт иртни те сисӗнмерӗ, ҫул та кӗске пулчӗ. Каҫ пулнӑ тӗле штаба ҫитрӗмӗр. Пире курсан, красноармеецсем чупсах ҫитрӗҫ.

— Самокуров юлташ, кил-ха кунта! Паллатни ҫак хӗрарӑма?—тесе чӗнтӗм эпӗ.

Самокуров хӑйӗн арӑмне тӑруках паллаймарӗ. Таня курсанах палларӗ:

— Павел! Паша!—тесе упӑшкине ыталаса илчӗ.

— Юлташсем! Эпӗ урӑх ниҫта та каймастӑп. Хам ирӗкпе Хӗрлӗ Ҫар ретне ҫырӑнатӑп,—терӗ Таня пӑртакран.

Таньӑна красноармеец тумтирӗ пачӗҫ. Вӑл пӗр эрне каннӑ хыҫҫӑн пирӗнпе пӗрле разведкӑна ҫӳреме тытӑнчӗ. Хӗрарӑм пулсан та, арҫынсенчен пӗртте юлмасть. Питӗ те пултаруллӑ хӗрарӑм вӑл, ахаль пулсан вӑл фашистсен аллинчен те тарса хӑтӑлайман пулӗччӗ.

1942 ҫ. Действующи Ҫар.

# ХУРА ÇĂХАНСЕМ

Выç çăхан чĕппе сыхланăн
Çăткăн куçлăн тинкерсе,
Пĕлĕтре хура çăханăн
Явăнаççĕ „Юнкерссем".

Явăнаç хура хĕреслĕ
Çунаттисене сарса.
Пĕлĕте карса илеслĕн
Ав, килеççĕ çывхарса.

Вилĕм, вут кӳреççĕ мирлĕ
Хуласем-ялсем çине.
— Эх, кĕтсе илмешкĕн кирлĕ
Ку кĕтмен хăнасене!

Кучченеçĕ хатĕр пирĕн,—
Теççĕ шух зенитчиксем.
Батарея командирĕн
Çиллĕн çиçрĕç куçĕсем.

—Ну, ачсемĕр, ĕçĕ паллă,—
Терĕ вăл боецсене,—
Ăшши парăр-ха, ăшаләр
Çав хура çăхансене!

Боецсем ĕçлеç вăр-варрăн,
Ĕçне хăнăхнă вĕсем.
Кĕç ак харăссăн, хаяррăн
Кĕрĕслетрĕç тупăсем.

Снарядсем çитсе шартлатрĕç
„Юнкерссен" йĕри-тавра.
Пĕрине çапса салатрăç,
Тепĕрне çулăм çаврать.

Самантрах персе антарчĕç
Умлăн-хыçлăн иккĕшне.
Ыттисем тарса пытанчĕç
Хулăм пĕлĕт хушшине.

—Çыпăçуллă!—терĕ тахĕш.
—Тĕрĕс!—терĕç ыттисем.
Ак çунаççĕ акăш-макăш
„Юнкерссен" юлашкисем.

Ав, вĕсем çинче çӳренĕ
„Асс" текен чуниллисен
Йаванаççĕ лӳчĕркеннĕ
Çунчăк, ирсĕр виллисем.

Боец пычĕ, тĕрĕслерĕ
Хăй ĕçне, ↑ашт тĕлĕнсе.
—Йытта—йыт вилĕмĕ!—терĕ,
Сурса иртрĕ йĕрĕнсе.

Нихăш те çăлăнса юлмĕ
Çав боецăн судĕнчен!
Фашистсемшĕн пурнăç пулмĕ
Пирĕн ирĕк çĕр çинче!

1943

# ТӐВАН ХАЛӐХА

Сана, тӑван халӑх, ман сӑввӑм, ман сассӑм,
Пӗр саншӑн тапать ман чӗре;
Пӗр саншӑн—шел мар пурнӑҫа; амансассӑн,—
Юнпа хӗрететтпӗр ҫӗре.
Ҫиҫет анлӑ Атӑл—ҫап-ҫутӑ, ыр питлӗ,
Вылять, прахута чӳхесе,
Санра, тӑван халӑх, ҫак юхӑм пек, пит те
Мӑн вӑй пуррине пӗлтерсе.
Сан иртнӗ куну, кӗрхи каҫ пек, сӗм-тӗттӗм.
Ҫуратчӗ ӳте саламат,
Чаратчӗ мӑръесӗр пӳртри йӳҫӗ тӗтӗм
Тӗнче ҫине ирӗк пӑхма.
Ялти куштансем, ҫӳрулпучӗ, тиекӗ
Хытарнӑ асап сӑнчӑрне.
Мӗнпур харампыр юн ӗҫмешкӗн тиеннӗ
Сан чӑтӑмлӑ ҫурӑм ҫине.
Эс тӑтӑн, каларӑн: мана—ҫӗр, ҫут ирӗк!
Эс тухрӑн хаяр вӑрҫӑна.
Кӗрлерӗ Октябрь. Ҫул уҫӑлчӗ... иртрӗ
Киревсӗр, тискер самана.
Ҫӗршывӑмҫӑм манӑн ҫӗнелчӗ, вӑйланчӗ,
Ҫӗршывӑмҫӑм ман ҫеҫкере.
Ҫанталӑк уяртрӗ. Ҫынсем ҫамрӑкланчӗҫ.
Май ирӗ пек, пурнӑҫ хитре.
Ҫулпуҫ ҫырнӑ аслӑ Саккунӑн тивлечӗ—
Аван вӑл пуриншӗн пӗр пек.
Ак мӗншӗн паян ҫапӑҫаҫҫӗ пӗрле тек:
Чӑвашӗ, тутарӗ, узбек...
Алхастӑр тӑшман, тискер кайӑк пек, уртӑр,—
Шеллевсӗр, хӑрушӑ, тискер.
Ҫулпуҫӗ тавра ҫакӑ йывӑр кун пурте
Тата ҫирӗпрех пӗрлешер!
Ҫул вӑрӑм-ха пирӗн. Ҫилленнӗ чун канмӗ.
Кам чарӗ ӑшри ҫилӗне?
Пӗр эс, походра вӑй-хӑват паракане,—
Ҫӗршывӑм, ҫуратнӑ анне.
Сан пек ӑш сӑмах тӗнчере урӑх пур-ши?
Ҫавал, Шупашкар, вӑрмансем...
Фронт тӗтӗмӗ витӗр, пин-пин ҫухрӑм урлӑ

Курнаççĕ тăван вырăнсем.
Чăн-чăн юрату ылттăнтан та паха мĕн;
Пурин те хăй хакĕ пурах.
Пĕр эс, тăван халăх, сан пурнăçу—хамăн
Юнпа пурнăçран хаклăрах.
Сан ирĕк—ман ирĕк, юрру сан—ман юрă.
Эп манмăп шывпа çăкăрна.
Ак мĕншĕн ман сăвă, ман сас, манăн пурнăç—
Пĕр саншăн, пĕр саншăн кăна!

1943. Действующи Çар.

---

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

# ВУТ ЧУЛĔ

*Уйăп Мишшине*

Хĕвелпеле шăраннă Атăл урлă
Эпир ишеттĕмĕр ăмăртмалла.
Чăматтăмăр, тĕпне çитсе вут чулĕ
Эпир кашни илеттĕмĕр алла.

Чулпала чул çапсассăн хире-хирĕç
Сапатчĕ чул хаяр вĕри хĕмне.
Анчах та пирĕн çав чулран та çирĕп
Пулмаллине эпир ун чух пĕлмен.

Ак çитрĕ вăхăт вутлă çил-тăманăн,
Пире пурне те тĕрĕслет çĕршыв.
Халь пирĕнтен çирĕпрехххи, тăванăм,
Çак тĕнчере кам та пулин пур-ши?..

1942.

# СУНАРÇĂ

*(Калав)*

Нумаях пулмасть пĕр хаçатра эпĕ çакăн пек заметка тупса вуларăм.

> „**Действующи Çар**.... 18-мĕшĕ. Стародубов юлташăн чаçĕнчи лейтенант-эвенк Чильбориков Зангин пĕр эрне хушшинче кăна тăшманăн икĕ самолĕтне персе антарчĕ. Отечественнăй Аслă вăрçă пуçланнăранпа Чильбориков юлташ пурĕ 123 нимĕç салтакĕпе офицерне тата 6 самолĕт пĕтернĕ".

Çак пĕчĕк заметка мана Инçетри Хĕвелтухăçне, вунă çул ĕлĕк пулса иртнĕ тĕлпулусене аса илтерчĕ.

Чильбориков ятлă ватă сунарçă йăхĕнчен тухнă Никичена, каярахпа Зангин тесе чĕнме пуçланă çамрăк сăвăçа эпĕ питĕ те лайăх паллатăп. Зангин—эвенксен тата нивхсен чĕлхипе хитре сăмахсемпе калаçма пултаракан çын, юмахçă, юрă ăсти тенине пĕлтерет.

Зангинпа паллашасси акă мĕнле пулса иртрĕ.

1932 мĕш çулхине эпĕ Хабаровскри педтехникумра вĕренеттĕмччĕ. Çуллахи каникул вăхăтĕнче хампа пĕрле вĕренекен пер юлташпа, Уссури шывĕ тăрăхĕнче пурнакан кореец ывăлĕ Хегай Алексейпа тайга тăрăх курса çÿреме шутларăмăр. Хегай пăшал илчĕ, эпĕ ытти хатĕр-хĕтĕрсене туянкаларăм. Вара ятарласа тунă каска кимĕ çине лартăмăр та, Амур тăрăх аналла юха патăмăр.

Çула тухнăранпа виççĕмĕш эрне çине кайсан, çĕтĕлсе пĕтнĕскерсем, эпир Тутар проливĕн хĕррине çитсе тухрăмăр. Тайгара тытса хатĕрленĕ хир сыснипе косуля какайне пăрахса хăварма тиврĕ. Эпир ăна çăкăр вырăнне кунне виç-тăватшар хут пĕçере-пĕçере çисе те пĕтерейменрĕмĕр.

Тин çеç хĕвел тухса сарăлнă. Аякра-аякра чайкăсем найкăшни илтĕнет, тинĕс шавлать. Тайгара сулхăн та çăмăл. Çĕрĕпе кимĕ çинче ирттернĕскерсем, эпир канмалли вырăн пăхкаласа, пĕр сĕвек сопка тăррине утатпăр.

— Ку таврашра çынсем пулма кирлĕ,—тет Хегай, малта туратсене сиркелесе утаканскер. — Тайгари халăхсем юртисене шывшур таврашнелле тума юратаççĕ. Çулла вĕсем — пулăçсем, хĕлле сунарçăсем...

Чăн та, сопка тăррине те хăпарса çитейменччĕ, малта такам юрлани илтĕнме пуçларĕ. Унта уçланкă иккен. Пĕр енне виçĕ

каска вĕлле лартнă. Лутра катăркас тĕми патĕнче ӳпле евĕрлĕскер курăнать. Ун айккине пĕр илемлĕ йĕкĕт таянса ларнă та шухăша кайса тем çинчен юрласа ларать. Ура сассисене илтсен, вăл майĕпен çĕкленчĕ те пирĕн çине сăнаса пăхса илчĕ. Шикленмелли нимех те тупăнмарĕ пулас, каллех вырăнне кайса ларчĕ, пире те юнашар ларма сĕнчĕ.

— Пирĕн паян уяв тăваççĕ-ха,—терĕ вăл.— Кăштах сыпмалли те хатĕрленĕ никак. Хĕллехи юртăсенчен куçса килнĕ ятпа пирĕн кашни çулах çапла уявлаççĕ... Эпĕ-и? Кичем пек туйăнчĕ те, çакăнта килсе ларас терĕм... Аякри курăнать кунтан.

Ӳнтан кăштах чĕнмесĕр тăнă хыççăн:

— Кайса курас теместĕр-и пирĕн юртăсене?

Эпир каярахпа кайма пултăмăр.

Йĕкĕт эпир камне те, ăçталла çул тытнине те ыйтса пĕлмерĕ. Ара, сахал-и тайга тăрăх çӳрекенсем! Курать—вăрă-хурахсем мар, унпа та тавтапуç...

Апат çинĕ хыççăн эпир канма выртрăмăр.

Мана илемлĕ юрă сасси вăратрĕ. Хĕвел шăп кăна пирĕн пуçсем тĕлне çитнĕ. Сывлăшра сухăр шăрши кĕрет. Шăрăх.

Çамрăк эвенк халь трусик евĕрлĕ кĕске сăран шалаварпа кăна. Тумтиррисене хывса хăй айне сарнă та вăл, тӳпенелле пăхса юрă шăрантарать.

„И-и-и...

„Инçе çул чĕрене сивĕтмест.

„Эсĕ кĕт мана, чунăмçăм, кĕт. Пăлан çĕрле хăйĕн мăшăрĕ патне тавăраннă пек, эпĕ те сан пата килĕп, вăхăт çиттĕр кăна...

„И-и-и...

„Инçе çул чĕрене сивĕтмест.

„Иртнĕ куншăн нихçан та ан хуйхăр.

„Яланах эсĕ пăх малалла!

„Çĕре мар, эс тинкер тӳпене. Чĕрӳнте санăн пултăр—савни. Вăрă каяс çулу та сан пулĕ—кĕске. Йывăр ĕç те туйăнĕ хăй ăссĕн пулнă пекех.

„И-и-и...

„Савнă тусăм, тинкер малалла!

„Чĕрере яланах çиçтĕр шанчăк, ĕмĕт пултăр ялан чĕрере.

„Вăра темле йывăр пулсан та, тĕрлĕ чăрмавсем сике-сике тухаççĕ пулин те, ĕшеннĕ пулсассăн та,—ĕнен, эс çĕнтерĕн, эс пулăн герой!

„И-и-и...

Ĕмĕт пултăр ялан чĕрӳнте...

Юрăçă ури патĕнчех чĕрĕп мĕшĕлтетет. Вăл çара урисене ачашшăн илкелесе пусать те, сăмси таврашĕнче хуртсем сĕрлеме тытăнсанах шăртлă çăмха пек чăмăр пулса шăпланать. Пар-

такран унӑн пуҫӗ, унтан урисем курӑнаҫҫӗ. Вӑл, сысна ҫӳри пек, пуҫне чалӑштарса итлесе пӑхать те, ҫинҫе урисене паҫӑрхи пекех хӑюссӑррӑн пускаласа, тӗмӗсем хушшинелле кӗрсе ҫухалать. Пӗр вӑхӑт вӑл енчен ҫаплах-ха пӗлтӗрхи типӗ ҫулҫӑсем кӑштӑртатни илтӗнсе тӑрать.

— Куртӑн-и?—тет юрӑҫӑ, эпӗ ҫывӑрманнине асӑрхаса.—Ман хуралҫӑ вӑл. Йытӑ пекех ӑсласкер. Вӗлле тавраш енчи хурткӑпшанкӑсене тасатсах тӑрать.

Ӑнсӑртран тӗл пулнӑ юрӑҫӑ, тӗлӗнмелле юрӑсем, чӗрӗп, тайга... Пӗр самант хушши эпӗ хам ӑҫтине те манса каятӑп. Темӗнле юмахри ҫӗршыва кайса тухнӑ пекех туйӑнать...

— Питӗ те илемлӗ юрлатӑн эсӗ,—тетӗп эпӗ, юрӑ ӑсти ҫумне пырса ларса.—Чӗрене тивеҫҫӗ вӗсем сан, шухӑшсене хускатаҫҫӗ...

Никиченӑн (ҫамрӑк эвенк ҫапла ятлаччӗ) тӗксӗм пӑхӑр тӗслӗ ӳчӗ ҫине пӑтӑр-пӑтӑр тар пӗрчисем тухса ларнӑ. Йӑмӑх хура ҫӳҫӗ автан хӳри пек кукӑрӑлса ҫамки ҫинче усӑнса тӑрать. Куҫӗсене хӗстернӗ.

— Сана та кӑмӑла каяҫҫи вӗсем?—тет те зангин, унӑн кӑштах тӑрхаларах пичӗ ҫинче кӑмӑллӑ кулӑ паларать.—Ҫулла юрласа савӑнатӑп вара. Хӗлле юрлама ҫук вӗт пирӗн. Сунарта ҫӳренӗ чух яланах шӑп пулас пулать... Йтлес килет-и, сана хир сыснисем ҫинчен юрласа парам?

Пуҫланса кая ть вара тайга пекех анлӑ та ирхи шухӑш пек илемлӗ юрӑ. Зангин кӗҫех хӑй ҫумӗнче ларакан ҫына та, чӗрӗпе те, сӗрлекен хуртсене те манса каять, курми пулать. Унӑн куҫӗсем кӑтраланса тӑракан тайга ҫийӗпе таҫта аяккалла, ӑрша карса илнӗ кӑвак инҫетелле тинкереҫҫӗ. Акӑ сопка. Ӑна лаппипех хӗрлӗрех-кӑвак курӑк хупласа илнӗ. Анчах курӑк пӗр вырӑнта тӑмасть, хуллен аялалла, ҫырма хӗрринелле шума тытӑнать. Аякранах нӑрхлатни тата хӑшӑлтатса сывланисем илтӗнеҫҫӗ. Ҫук, ку курӑк мар, ку—хир сысни кӗтӗвӗ. Сыснасем шыв ӗҫме анаҫҫӗ. Юрӑҫӑ вӗсен ҫивчӗ ҫурӑмӗсене те, ҫӗр ҫуммипе йӑпшӑнса пӑхакан тӑрӑхла куҫӗсене те лайӑх курать. Ак сыснасем шыв ӗҫме тытӑнаҫҫӗ. Вӗсен ҫулъертӳҫи, пӑру пек пысӑк аҫа сысна, ҫӳллӗ тӗме ҫине тӑрса юлнӑ.

Вӑл—хуралта.

Чӗр илемлӗхе юратма пултаракан ҫын, пӑхсам эсӗ ун ҫине! Мӗн пек чаплӑн та манаҫлӑн тӑрать вӑл тӗме ҫинче! Унӑн шупка-хӗрлӗ шӑрчӗсем хаяррӑн йӑшӑлтатаҫҫӗ, курӑнман тӑшман ҫине тарӑхнипе ҫурӑмӗ чӗтрене-чӗтрене илет. А куҫӗсем тата! Ытти чухне пӑтранчӑк тӗтре карса илнӗ куҫӗсем халь вут та хӗм сирпӗтсе тӑраҫҫӗ...

Пырса лек-ха эсӗ ҫак самантра сыснасем патне. Тӑхӑрвун тӑхӑр татӑк туса хурать санран вӗсен ҫулъертӳҫи, пӑру пек пысӑк аҫа сысна.

Хуралҫӑ хӑйӗн кӗтӗвӗ ҫине хуҫалла пӑхса илсе нӑрх! тӑвать те тӳсеймесӗр асавӗпе чула кӑтӑртаттарса кышлать. Ытла та нумай тӑраҫҫӗ паян сыснасем шыв хӗрринче!..

Ак пӗр сысни шыв ҫинчен пуҫне ҫӗклерӗ, унтан—тепри,

виççĕмĕшĕ... Вĕсен сăмсисем вĕçĕнчен чĕркĕмĕл пек таса шыв çине мерчен тумламĕсем ӳкеççĕ.

Тепĕр вунă минутран хир сысни кĕтĕвĕ тайгана йăраланса кĕрсе каять.

Малта каллех—паçăрхи хуралçă, вĕсен çулъертӳçи.

Зангин юрлать. Сăмахпа каласа пама çук хитре те ăшшăн, чĕре панчи вĕри туйăмпа юрлать вăл тайга çинчен, унти ансăр сукмаксемпе утма çулсем, чăтлăхсемпе шурлăхсем çинчен. Хăй мĕн курать, мĕн илтет, мĕн ĕмĕтленет—пурте юрă пулать унăн чĕринче.

Вĕçĕ те, хĕрри те çук тайган. Пăланпа та тухаяс çук ун тăрăх, йытăпа та каçаяс çук ун урлă. Ирĕк те лайăх пулассăн туйăнать унта ват сунарçă Чильборик йăхĕнчен тухнă зангин Никичен пек йĕкĕтсене.

Анчах апла мар иккен.

— Эпĕ нумаях пулмасть пĕр пулăçа куртăм,—тет Зангин, аякра такам юрланине тăнланă май.—Вăл Хабарски текен стойбищĕре пулса куртăм тет.

— Хула,—тетĕп эпĕ.—Хабаровск—хула... Пы-ысăк...

Сопка çинчен тайга йĕри-тавра мĕн чухлĕ курăнать—алăсемпе çавăрса кăтартатăп.

— Çавăн пысăккĕш...

Юрăçă пĕр вăхăтрах тĕлĕннĕ пек те, савăннă пек те пулать.

— Апла эсир?..—Вăл пуçĕпе çывăракан Хегай еннелле кăтартать.

— Çаплах,—тетĕп эпĕ.—Эпир унпа иксĕмĕр те çав хуларан. Нимех те мар... Ыйт... Хам та калама манса кайнă.

Зангин сасартăк тем пирки тăп-тăрă тӳпенелле пăхма пуçларĕ. Унтан васкаса ӳплене чупса кĕчĕ те, пăшал илсе тухса, тĕллемесĕрех тенĕ пек, çӳлелле кĕрслеттерчĕ.

Уçланкă варрине çерçи хурчăки персе анчĕ.

Хальхинче ĕнтĕ манăн тĕлĕнес пулчĕ.

— Ара, унта нимĕн те курăнмасчĕ-çке?

— Вăл хуртсене сăхать,—терĕ Зангин, эп хăй тĕл перес мастерлăхне мухтанине илтмĕш пулса. Вăл кайăка уçланкă тулашнелле илсе пăрахрĕ те каллех ман çумма пырса ларчĕ.

— Иксĕр те çав... Хабаровски текеннинчен-и?

— Иксĕмĕр те çав хуларан.

— Çав иртсе кайнă пулăçă каласа тĕлĕнтерчĕ. Темĕн те куртăм тет. Çавăн хыççăн хамăн та кайса курса çӳрес килекен пулчĕ. Пĕрмай тайга та тайга... Чуна тăвăр пек туйăна пуçларĕ.

— Вĕренес теместĕн-и?

— Вĕренме кĕресчĕ тетĕп çав. Атту... Илтетĕн-и?—сасартăк ман еннелле çавранса ларчĕ юрăçă.

Айлăмра хĕрсем юрлаççĕ. Анчах мĕнле тăрăшса итлесен те сăмахĕсене уйăрса илейместĕп эпĕ.

— Ман юрра юрлаççĕ,—тет çамрăк сăвăç. Вăл хумханнине сиксе тăрать те вăтаннă пек пулса каллех ӳпле çумне хутланса ларать, васкаса кĕпине тăхăнма тытăнать.—Ман юрра юрлаççĕ

ĕнтĕ хăйсем. Анчах мĕншĕн сăмахĕсене улăштараççĕ-ши вĕсем кашнинчех? Пурне те астуса юлма çук, теççĕ. Тенек астăвать-çке?

Эпĕ ăнланатăп çамрăк сăвăçăн пăшăрхануне. Чĕре патĕнче ăшăтса хывнă юрра-сăвва пăснине камăн юратас килĕ?

— Вĕренесчĕ çав манăн,—тет Зангин.—Вара юрăсене эпĕ хут çине çыра-çыра хурăттăм. Ыттисене те вулама-çырма вĕрентĕттĕм... Ара, мĕн усси пулĕ вĕçĕмсĕрех вырăнтан вырăна куçса çÿренипе?

— Тĕрĕс!—тет халĕ çеç вăранса тăрса ларнă Хегай.—Атя пирĕнпе пĕрле. Хабаровск хулинех çитерсе ярăпăр.

Зангин шухăша кайса пуçне пăркалать.

— Çапла васкасах-и?... Хам çеç пулсан эпĕ... Ярасшăнах мар-ха мана хăшĕсем...

— Мĕскер унта!—тет Хегай.—Кутамккуна апат-çимĕç тултар та,—паянах çула тухатпăр... Никама та ан пăх эс.

Анчах вăл кун та, тепĕр кунне те эпир каяймарăмăр: чĕреслеттерсех çăмăр çума тапратрĕ те пĕтĕм çĕре ислетсе пăрахрĕ. Виççĕмĕш кунне тин çанталăк кăштах йĕркене кĕчĕ: тÿпене талккишпех карса илнĕ пĕлĕтсем сирĕле пуçларĕç, хĕвел йăлтăртатса курăнчĕ, çил хускалчĕ.

Утарти ÿплере выртса йăлăхнăскер, эпĕ уçăлма тухрăм. Кашни утăмрах пуç çине йывăççем çинчен шыв йăтăна-йăтăна анать. Часах ман çире пĕр типĕ вырăн та юлмарĕ.

Юртăсем патне çитес чух хамран инçех те мар çынсем калаçни илтĕнчĕ. Пĕр ик йывăç урлă çеç Зангинпа вунултă-вунçичĕ çулхи хĕрача тăраççĕ иккен. Юраçă инçе çула каймаллах тумланнă. Унтăсемпе, кĕске дохапа. Çурăмĕ хыçĕнче—кутамкка. Берданкине аллине тытнă.

Хĕрĕ çине шăхсан, турех Драйзерăн „Сăнчăрсем" ятлă калавĕнчи Иделль аса килчĕ. Пурнăçра кун пек чуна тĕлпулсан,—вăл кирек мĕнле кăмăллă пултăр,—эсĕ ăна ниепле те манаймастăн. Унăн çунса таракан йăмăх хура куçĕсем, çинçе те чăмăр пÿ-сийĕ, çавракa какăрĕсем—тĕлĕкре те, ахаль чух та—куç умĕнче...

Зангинăн сăмахĕсем аса килчĕç:

„Ярасшăнах мар-ха мана хăшĕсем?"

Тенек! Ак кам иккен вăл „хăшĕсем".

Эпĕ çаврăнса каялла утрăм.

Часах Зангин та пычĕ.

Эпир пĕр сăмах чĕнмесĕрех çула тухрăмăр. Чылай утсан çеç, Зангин ассăн сывласа илчĕ те çухине вĕçертрĕ.

— Паян темле сывлама йывăр,—терĕ вăл, каялла çаврăнса пăхса.

Çапла çав, тусăм, йывăр. Ăна эпĕ эсĕ каялла çаврăнса пăхмасан та лайăх сисетĕп. Ăçтан çăмăл пултăр ĕнтĕ чун савнипе уйрăлма?..

Виççĕмĕш кунне каçпа эпир Николаевск хулин портне пырса çитрĕмĕр. Анчах пирĕн çĕнĕ юлташ мĕнле ӳкĕтлесен те пароход çине лармарĕ. Йĕри-тавра пăхкаласа çӳрерĕ-çӳрерĕ те вăл кутамккине салтас вырăнне ăна тата çирĕпреххĕн юсаса çыхрĕ.

— Ку çурт эпĕ ăçталла утас тенĕ çĕрелле кайма пултараймасть,— терĕ вăл, каллĕ-маллĕ чупакан пассажирсене сăпайлăн çул парса.—Эпĕ çуранах утатăп. Леш Хабаровски текеннинче куратăп пулĕ-ха эпĕ сире?

Анчах Хабаровск хулине вăл темшĕн пымарĕ. Виçĕ çул иртсен тин Чильбориков Зангин Ленинградри хĕвелтухăç халăхĕсен институтне вĕренме кĕнĕ тенĕ хыпара илтрĕм. Вара каллех чылай вăхăт хушши ун çинчен пĕр сас-хура та илтĕнмерĕ.

1941-мĕш çулхи çуркунне письмоносец ман пата кĕтмен çĕртен посылка пырса пачĕ. Кедр мăйăрĕпе кайăк тирĕсем айĕнчен хулăм кĕнеке сиксе тухрĕ. Унăн симĕс хуплашки çине **„Зангин Чильбориков. Тайга юррисем“**, тесе çырнăччĕ.

Ак халь Зангин—Отечественнăй Аслă вăрçăн фронтĕнче фашистсене хирĕç çапăçать иккен, хăйĕн тайга юррисене çырнă чухнехи пекех, пысăк та хисеплĕ ĕç тăвать.

Ĕлĕкхи сунарçă, вăл фронтра та хăйĕн ĕçнех тăвать: тискер кайăксене пĕтерет.

# ШУРЛĂХРИ ВИЛĔМ

*(Калав)*

„У нас даже камни стреляют“.
**И. Эренбург** статьинчен.

... Хăйне леçсе хăварнă самолĕт сасси илтĕнми пулсанах красноармеец форми тăхăннă Отто Шульц парашютне йывăç тĕмĕ айне кайса пăрахрĕ.

„Çапла çеç-и?—тĕлĕнчĕ вăл хăй ăшĕнче.—Эпĕ—вырăс çĕршывĕнче... Капла ытла та простă-çке...“

Чăн та, вырăс çĕршывĕ Шульца пĕртте хăй шутланă пек туйăнмарĕ. Вăл кунта килме хатĕрленнĕ чух темĕнле романтикăллă çапăçусем çинчен ĕмĕтленнĕччĕ... Пуш-пушă та, çап-çара хирсем. Ку çаплах ĕнтĕ, обязательно пушă та çара. Таçтанхăяматран сенĕклĕ çынсем сиксе тухаççĕ. Вĕсем пурте урисене сăпата сырнă, сухалĕсем—кăкăр таран. Вăт шăп çакăнта ĕнтĕ Шульц шухăшĕпе кĕске çапăçу пулса иртмеллеччĕ. Вăл пурне те çĕнтерет те хăйĕн ĕçне тума тухса каять. Кайран—килти телейлĕ тĕлпулусем, экзотикăллă çĕршыв çинчен каласа памаллисем. Унтан... Ара, сахал-и пурнăçра шухăшламаллисем, ĕмĕтленмеллисем!

Çаплах пулмасан та, çакăн евĕрлĕ шухăшланăччĕ килте чухне çамрăк авантюрист Отто Шульц, хĕрлĕ çӳçлĕ нимĕç офицерĕ. Çавăнпа ăна Совет çĕрĕнчи ирхи шăплăх малтанах хăратнă пек те пулчĕ. Конешнă кĕтӳллĕ шăплăх вырăнне пĕр-пĕр... карчăк е старик тĕлпулас пулсан,—авантарахчĕ те ĕнтĕ...

Апат çиес те утас тесе, Шульц чăтлăхалла кĕме тытăннăччĕ кăна,

каялла çавăрнса пăхрĕ те, шухăш çинех, хăйĕн парашючĕ патĕнче пĕр старик чакаланса тăнине асăрхарĕ. Ку япала ăна пĕр самантра урăлтарса тӳперен çĕр çине антарса тăратрĕ.

Тӳррипе каласан, шăплăхĕ вăл, хăвна никам та вăрттăн сăнаса тăманнине пĕлес пулсан, пĕртте япăх марччĕ-ха та...

„Ăçтан татăлса анчĕ вара ку çын?—шухăшласа илчĕ Шульц, йĕри-тавра пăхкаласа.—Кăмпа татма килнĕ-ши?.. Е пĕр-пĕр хуралçă пулĕ. Эй, урăх камах пултăр тата...“

Старик çаплах парашют патĕнче аппаланать.

Шульц васкарах утрĕ. Тепĕр тесен, романтикăллă çапăçусемпе айванланма халь ун вăхăт та, кăмăл та çук. Тата шиклĕ те: ку вăл—совет вăрманĕ, вырăс çынни. Хăйсен çĕршывĕнче, Германире пулнă пулсан, мĕнлеччĕ те унта...

Шульц чăтлăха çитсе кĕчĕ, шурлăхлă айлăма анса, тылла-пуççисем çийĕпе чылай карĕ.

Сывлăмлă вăрман çийĕпе хĕвел тухас умĕнхи шĕвĕ тĕтре чĕлтĕртетсе тăрать, „упа сурчăкĕ“ пек, пите-куçа нӳрететет. Шульц пĕр лапсăркка йывăç айне кĕрсе ларчĕ. Анчах хутаç çине çурăм хыçĕнчен вĕçертсе илме кăна ĕлкĕрнĕччĕ, айлăмăн тепĕр енче турат хуçăлни илтĕнчĕ. Пăхрĕ те Шульц пуçне çĕклесе, каллех çав старикех курчĕ.

„Мĕн шыраса çурет вара ку ватсупнă? Мана йĕрлемест пулĕ те вăл?“

Вăл биноклье илсе старик еннелле пăхма пуçларĕ. Туя тытнă шурă сухаллă мучи темскер çухатнă пек час-часах çĕрелле пĕшкĕнет, вăрăм куçхарши айĕпе тĕпчевлĕн те çивĕччĕн йĕри-тавра сăнаса пăхать.

Старик хăйне килĕнчи пек ытла та хуçалла тыткалани нимĕçе тарăхтарса ячĕ. Вĕт вĕсем çине вăрçăпа килнĕ. Бомба, оруди, миномĕт, пулемĕт кĕрлевĕсемпе такам та ухмаха ермелле пек ĕнтĕ. А вĕсем пур—хăнк та тумаççĕ иккен.

Шульц вăрмана пĕр-ик çĕртен чĕртсе ячĕ те пысăк кукăр туса каллех паçăрхи чăтлăха тухрĕ. Ку енче, инçех мар, С. хули тата чугун çулĕ пулма кирлĕ. Хушнă ĕçе туса пĕтерсен, вăрман тăрăх та сулланса çӳреме пулĕ, халлĕхе васкас пулать-ха унăн...

Çывăхрах шĕшкĕ турачĕ шăтлатса хуçăлчĕ, такам тăвăррăн сывлани илтĕнчĕ. Шульц сасартăк кăвакарса карĕ. Старик! Каллех çав старикех.

„Ман йĕрпе килет,—тинех тавçăрса илчĕ вăл.—Нимех те мар пулĕ вăл? Утмăл-çитмĕл çулхи старик те—Гамбургри спортсмен. Ăçтан тытма пултартăр вăл мана?..“

Çавах та, кăмăлĕ ун пăсăлчĕ-пăсăлчех. Шӳт-шӳт те, пĕр евĕр шӳт те юлашкинчен йăлăхтарса çитерет иккен. Вăл пĕр тĕллемесĕрех шĕшкĕ тĕми еннелле револьвертан ик виçĕ хут персе ячĕ те вăрман варнелле чупрĕ.

Хыçалтан та пăшал сасси кĕрслетрĕ, Шульцăн хул тăррине çивĕччĕн пĕçертсе илчĕ...

Унтан малта та шăй-шăйсем хускалчĕç, йытă вĕрме пуç-

ларĕ. Аптраса ӳкнĕ Шульц сылтăмалла пăрăнчĕ. Ăш-чикне тăвăрлатса, ун питне туратсем çапăнаççĕ, урисене йытпырши çыхланать. Бинокль таçта татăлса ӳксе юлнă. Вăл каллех бензинлă çĕтĕк-çурăксене тивертсе йывăçсем хушшине ывăтрĕ...

Çур сехете яхăн кайсан, малта пысăк уçланкă курăнчĕ. Офицер чĕтрекен аллипе çамки çинчи тарне шăлса типĕтрĕ те чылайччен итлесе тăчĕ. Вăрманта шăп, ытла та шăп! Çавăнпа Шульц вырăнтан та хускалмарĕ. Кунта кам та пулин пурах, мĕншĕн тесен, çын пулмасан, кайăк-кĕшĕк те пулин юрлĕччĕ...

Çав самантра уçланкă леш хĕрринче 5—6 çулхи хĕрача курăнчĕ. Апла Шульц пĕр-пĕр ял çывăхне пырса тухнă пулать-и-ха? Мулкач хӳри пек икĕ кĕске çивĕтне вылянтарса, хĕрача чечек татса çӳрет, темĕнле юрă ĕнĕрлет. Уçланкăра шăна-пăвансем сĕрлеççĕ, хĕрачан пуçĕ тавра, пĕчĕк хут татки пек, шурă лĕпĕш явăнса çӳрет.

Шульц йăпшăнса пырса, хыткан аллисемпе хĕрачана сасартăк мăйĕнчен пăвса лартрĕ, йăвантарса чĕркуççипе пӳсрĕ. Унтан алчăраса кайнă куçĕсемпе тем шыраса йĕри-тавра пăхкаласа илчĕ. Астурĕ: ара, вăл темиçе çĕрте те вăрмана вут тĕртсе хăварнăччĕ-çке. Мĕншен ниçта та çунмасть? Нивушлĕ каллех çав старик?..

Çинçе те вăрăм нимĕç хăвăрттăн каялла çаврăнса пăхрĕ, усал тĕлĕкрен хăранă пек пĕтĕм тăлпăвĕпе чĕтресе, çĕр çумне лăпчăнчĕ. Хăрăк тунката хыçĕпе чăнах та старик пуçĕ курăнать. Усалсемпе тĕрлĕ ăпăр-тапăрсене ĕненекенскер, Шульц хальхинче сехре хăпнипе револьверне кăларма та манса карĕ. Çĕлен пек хырăмпа шуса пычĕ-пычĕ те вăл старик курăнми пулсанах сиксе тăрса чăтлăхалла вирхĕнчĕ.

Тарас! Кирек мĕнле пулсан та, çав старикран тарса хăтăлас. Вăл темле майпа каллех паçăрхи чăтлăха çитсе çаврăнчĕ, хĕрача вилли патне пырса тухрĕ. Вара, капкăна çакланнă тискер кайăк пек вĕтеленсе, тӳп-тӳрĕ сукмак çине ӳкрĕ.

Пĕррехинче кăшт çеç ут çулакан хĕрарăмсем патне пырса кĕмерĕ вăл. Юрать, вăхăтра чарăнма ĕлкĕрчĕ. Хĕрарăмсем тем пирки хыттăнах кулса ячĕç. Ку япала нимĕçе шалтах тĕлĕнтерсе пăрахрĕ. Вăл аптраса кайса чупса çӳренĕ вăхăтра—мĕнле кулма пултараççĕ пуль çынсем? Акă ĕнтĕ уншăн пур çĕрте те вилĕм, ăçта пырсан та хăрушă старик тĕл пулать,—çынсем çаплах кулма пултараççĕ иккен.

Вăл каялла çаврăнчĕ. Чĕтренсе тăракан шурлăх хĕррине çитеспе хыçалта такам юрласа ячĕ. Çук, ку кулакан та юрлакан çынсенчен хăтăласах пулать. Эх, майĕ пулсан, Шульц вĕсене пурне те вĕлерсе, çунтарса тухĕччĕ те вĕт... Шурлăх урлă каçас-и е тавра каяс-и тесе пĕр самант иккĕленсе тăнă Шульц кĕскен те çав тери çăмăллăн пускаласа малаллах карĕ. Мĕн пулин пулать!

Малтанах ăна сапаланса выртакан хăрăк туратсем те пулăшрĕç. Пĕтĕм ӳт-пĕвне çăмăллатса, урисене хăвăрттăн иле-иле пуснипе вĕсем ура сыппи таран çеç путма ĕлкĕреççĕ. Анчах

кайнӑҫем шурлӑх шӗвелсе пыра пуҫларӗ. Туратсем те сайралчӗҫ. Унтан пӗтсех те ларчӗҫ. Диверсант шурлӑх варринчи шапа пӑттипе ҫеҫ витӗннӗ тӗле ҫитсе тӑчӗ. Чӑтайӗ-ши вӑл ҫын кӗлеткине? Малтан тӗрӗслесе пӑхас тесе, хӑрах урине ҫеҫ ҫӗкленӗччӗ Шульц, тепӗр ури айӗнчи турат сасартӑк хуҫӑлса карӗ. Вӑл тирӗнсе кайса пилӗк таранах шӗвӗ пылчӑк ӑшне кӗрсе ларчӗ. Тӗрев шыраса урисене хускатни усӑсӑр пулчӗ. Аялта пӗр хытӑ япала та ҫук, вӗҫӗмсӗр пылчӑк кӑна. Шульц путса анса каясран аллисене саркаласа хучӗ те пулӑшу шыраса йӗри-тавра пӑхкалама тытӑнчӗ. Сасартӑк ун ҫӳҫ-пуҫӗ вирелле тӑрса карӗ, ҫанҫурӑмне сивӗ тар персе тухрӗ. Шурлӑх хӗрринчи тунката ҫинче каллех паҫӑрхи старик ларать. Ҫӑварне чӗлӗм хыпнӑ та вӑл, ним пулман пекех, темскер патакки якатать. Те юнама хӑтланса, те кӑшкӑрас тесе,—ӑна вӑл хӑй те ӑнланса ӗлкӗреймерӗ,— Шульц аллине тӑратрӗ те пӗр самантра пылчӑк ӑшне путса анса кайрӗ.

Пӑртакран вӑл путнӑ вырӑна каллех шапа пӑтти карса илчӗ. Старик те тунката ҫинчен тӑчӗ. Вӑл аллинчи туйи ҫине тата тепӗр карт—пиллӗкмӗш карт—касрӗ те вӑрӑм куҫхарши айӗпе шурлӑх ҫинелле пӑхса илчӗ. Унӑн ватлӑхпа пӗркеленнӗ пичӗ ҫинче кӑмӑллӑ кулӑ палӑрчӗ.

„Таса ӗҫ!"—терӗ пулас вӑл хӑй ӑшӗнче.

Паҫӑр тарса пытаннӑ вӗт-шакӑр кайӑксем каллех шурлӑх таврашӗнчи йывӑҫсен ҫине тухса ларчӗҫ те юрра шӑрантарма пуҫларӗҫ.

1942 ҫ.

# ЯЛАВ

Варкăшать ялав,
Пĕтĕм площăде
хĕрлĕ тĕс çапса чӳхенет.
Вĕр, çурçĕр çилĕ, вĕр!
Варкăш, ялав,
хĕрлĕ ялав!
Сана
Париж коммунарĕсем пĕветнĕ
хĕрлĕ юнпа,
баррикадă çинче ыталанă
сывă пултăр Революци, тесе.
Сана çĕкленĕ Питĕр,
ик пуçлă ăмăрт сехĕрленнĕ.
Эс тухрăн тăвăл витĕр,
вут-хĕм витĕр...
А эсĕ çаплах чӳхенен,
çĕре ӳкмен.
Сана
ылханнă,
вăрçнă,
хаяр çилсем туланă,
шăтарнă пуля...
А эсĕ çаплах
авăнми шĕччӳ çинче
варкăшатăн,
хĕрлĕ тĕс сапатăн.
Сана
„Аврора" матросĕсем йăтнă,
ялкăштарса,
Керенскине тытнă та ывăтнă
министр тенкелĕ çинчен.
Ак чĕрĕк ĕмĕр вĕçрĕн,
çиçрĕн,
чĕнтĕн,
хавхалантартăн,
Хасанпа Халхингол,
Фин вăрманĕ таран
хĕрлĕ тĕс картăн,
хумхантăн.

Варкăш, ялав,
хĕрлĕ ялав,
вирлĕн çӳре,
хĕрлĕ тĕс сан!
Варкăш, ялав!
Эсĕ салтак аллинче—
гвардеец аллинче.
Çит,—
ялтан яла,
хуларан хулана,
чи çӳлĕ çурт çине хăпар,
тарт нимĕçе, тарт!
Хумхан, ялав,
хĕрлĕ ялав—
Совет çĕрĕн чапĕ,
чысĕ,
мухтавĕ!
Таптантăр хури—
фашист аллинчи,
йăвантăр йăвинчен эрешменĕ,
ан лартăр вăл шĕччи çинче,
вăл ӳктĕр çĕре,
ан пултăр чуралăх эмблеми.
Варкăш,
хумхан,
чӳхен,
Ленин çĕкленĕ ялав!
Варкăш,
хумхан,
Сталин йăтса пыракан ялав!

## АН. АНАТ

# ТĂВАН ÇĔР

## I.

„Çĕр çине выртса, ăна тăнла,—
Тетчĕ вăл,—мăнаçлă çĕр сывлать...“

Çамрăк агроном-хĕрпе пĕрле
Уй-хире тухаттăм эп çĕрле.

Эп выртаттăм нӳрлĕ çĕр çине,
Эп тăнлаттăм çĕр сывланине.

Ман çумра сывлана пек çав хĕр,
Çăмăллăн сывлатчĕ ирĕк çĕр.

Ăша çил вĕрсессĕн чӳхенсе,
Калаçса илетчĕç пучахсем.

Сарлака колхозăн уйĕнче
Чун киленнĕ çĕр кăкри çинче.

## II

Çĕр çинче сĕм суккăр каç тăрать.
Эп выртатăп тарăн окопра.

Хура бархат сарнă тӳпене
Ялкăшса ракета çĕкленет.

Тупă ӳхĕрчĕ таçта инçе—
Сывлăша çурса снаряд вĕçет.

Вăрçă каçĕ пысăк улăп пек
Калаçать хăрушă чĕлхепе...

Шухăшсем чупаççĕ вĕçĕмрен—
Юнлă вăрçă кунĕсем çинчен...

Тĕттĕмре юлташăм юнашар
Татрĕ манăн тарăн шухăша:

„Эс ним те илтместĕн-и, иптеш?
Ак итле: çĕр йынăшать. Итле.

Йынăшать вăл, пулăшу ыйтса—
Сахал мар çĕр тӳснĕ-çке асап...“

Эп чĕнмерĕм. Çавă каçхине
Эп те илтрĕм çĕр йынăшнине.

Действующи Çар, 1943 çул.

# ТĔЛПУЛУ

*(Калав)*

Шурă пароход Атăл шывне илемлĕн çурса тăвалла улăхнă. Балкон çинче, яланхи пекех, шавлă пулнă: пассажирсенчен чылайĕш каялла-маялла утнă; хăшĕсем çатан пукансем çинче пĕр-пĕринпе калаçса ларнă, кулнă; теприсем çавăнтах, сĕтел тавра пухăнса ларса, домино карчĕсемпе шаклаттарнă. Анчах çав таçталла каякан çынсем хушшинче пĕр çамрăк хĕр уйрăмăнах палăрнă. Ун çинче мăй таврашĕнчен кăкăр умнелле кăшт уçă анакан çӳхе батист кофта пулнă. Тулли мăйĕ, нимĕнпе те витĕнсе тăманран, чăлт шурă курăннă. Чăмăр кĕлеткин ик енĕпе вырнаçнă кăкăрĕсем, куç ӳкесрен вăтаннă пек, пытанса каранса тăнă. Çан çурăмĕ пилĕк тĕлĕнче çинçелсе илсе, аялалла татах пĕр тикĕс тата вăхăтлă сарăлса кайнă. Унтан, тинкеререх пăхсан, ку тĕлте шăмшакĕ унăн кăшт кăна каялла авăнса илнине туйма пулнă. Çав майпа çӳхе хура-кĕрен юбка хыçне ĕретĕн лартса тухнă шултра тӳмисем уйрăмăнах çуттăн курăнса тăнă. Урисем те çавнашкалах илĕртӳллĕ пулнă: пурçăн чăлха витĕр унăн урисем чăпчăмăр курăннă, утнă чух тата сыпăран çӳлелли те пĕр самантлăха куç тĕлне ытармалла мар яп-якан курăнса кайнă. Хăй вăл блондинка, сăн-пичĕ çавракa. Куçĕсем кăшт пĕчĕкрех, анчах йăваш. Çӳçĕсем, варринчен уйăрса икĕ еннелле турaса хунипе, çамка çийĕн кăшт куç харшисене хупласа тăнă. Пуçĕ çара, аллине пĕчĕк çул чемоданĕ тытнă, шĕлепки, тен, унта пулĕ.

Шутласан, çав тери чипер хĕре тахçанах çул мăшăрĕ тупăнмала темелле. Тепĕр тесен, çамрăк çынсем те тем таранах, хăй таврах утаççĕ вĕсем. Анчах халĕ вăл пĕчченех-ха, балкон йĕритавра ерипен утса çавăрнать. Акă, пароход сăмси вĕçне утса çитсе чарăнчĕ те, малалла пăхрĕ.

Вырăн калама çук эрешлĕ. Икĕ енĕпе вăрман. Сылтăмра— хыр вăрманĕ çыран хĕррипе уйрăм йывăççенчен пуçланса лерелле, инçетелле пĕр тикĕс, пĕлĕт пек, симĕсĕн-кăвакăн курăнса çухалать. Сайра хутра унталла кайăк кăвакалĕсем, кӳлĕсем шыраса пулас, вĕçсе иртсе каяççĕ. Илемлĕ вăрман çыран хĕрне пĕтĕмпех йышăнмасть, шыв хĕррипе çутçанталăк хăех алласа тасатса панă хăйăр пĕр касă хĕвел çуттинче ылттăн пек йăлтăртатса выртать. Хăшпĕр тĕлте, пароход çаврăнса ун çумĕпех иртсе пынă чух, ирĕксĕрех ун çине анса шыва кĕрес е хĕвел çинче пиçĕхес кăмăл килсе каять. Сылтăм енче вăрман тĕллĕнтĕллĕн кăна, вĕсем хушшипе, тусем çинче, ялсем курăнаççĕ,

час-часах тата шуралнă уйсем тĕлпулаççĕ те, пăртак кайсан каллех вăрман кассисемпе улшăнаççĕ.

Яланхи пекех, ялсем тĕлĕнчен иртсе пынă чух çыран хĕрринче çынсем курăнаççĕ. Хăшĕсем вĕсенчен сулăсем çинчен вăлтасем пăрахнă, хăшĕсем шыва кĕреççĕ, пур тата ахаль пăхса тăрса алăпа сулса ăсатакансем те. А пароход хăй çулĕпе, бакенсем хушшипе, çав-çавах лăпкăн малалла шăвать. Сайрахутра ун çулне урлăн инçетрен пăч-пăч хура курăнакан кимĕсем татса тухма васкаççĕ. Анчах пароход вĕсене сасă парса пăрăнма ыйтсан, нумай та иртмест вăхăт, кимĕсем юнашарах хум çине пулса юлаççĕ.

— Илемлĕ Атăл!—шутларĕ хĕр хăй ăшĕнче.

Пароход ку скорый пулнă. „Ильич" ятлă, урапи унăн хыçалта, пынăçемĕн хумĕсем унăн хыçалтан питĕ вăйлăн тухса пыраççĕ. Пуринчен ытла тин кăна çуралса тухакан хумĕсем эрешлĕ: пăл! пăл л! сасартăк кăпăклăн вĕресе тухаççĕ те, умлăхыçлăн аванса илсе, çыран хĕрринелле васкаса чупаççĕ. Унта вара унччен лăпкă юхнă тăрă шыв тем çӳллĕш чăлт! чăлт! туса сирпĕнме тытăнать. Тĕлĕнмелли çук ĕнтĕ, çак илем вăл нумай пассажирсене илĕртет. Кунта, корма çинче те, тата ун çинчи балкон çинче те, вăл хумсене пăхса тем çинчен шухăшша кайса ларакан çынсем сахал мар. Хăшĕсем вăсенчен хумсем кайнине бинокль кăларсах пăхаççĕ.

Чăтаймарĕ хĕр те. Çатан пукана хĕрнерех сиктерсе лартрĕ те, кăпăш çемçе аллисене мăй тĕлне хуçлатса хурса, инçетелле пăхма пуçларĕ.

Чи-ик! Чи-иик! Таçтан чайкăсем пуçтарăнса килсе, пароход хыççăн ӳкен юхансене шыраса вĕçеççĕ. Сывлăшра шурă çунаттисемпе лăп-лăп-лăп! туса илеççĕ те, сисмен хушăранах шĕвĕр сăмсисемпе хумсем çине чăмаççĕ. Акă пĕри корма çумнех чăмса илсе, çăварне те çакăр татăкĕ, те чăнах та пулă хыпса, айккалла хăвăрт вĕçсе кайрĕ. Ун хыçĕнчен, тупăша пайлама васкаса, ыттисем те хăвалама тытăнчĕç.

Хĕр, çаксем çинчен кусне илмесĕр пăхса ларнă хыççăн, пĕчĕк чемоданне уçса темĕн шыранă пек пулчĕ те, шап-шур татăк Атăлалла вĕлт! ыткăнтарчĕ. Чи-ик! Чи-иик! Чайкăсем татах нумайăн вĕçсе килчĕç.

— Савăнăр, кайăксем!

Хăй ăшĕнче çапла шутласа илсе, хĕр татах умлă-хыçлă темиçе татăк ыткăнтарчĕ. Чии-ик! Чи-и-икк!

Хĕртен инçех те мар, çавнашкалах пукан çинче, кăвак сăрпа сăрланă сĕтел хушшинче лейтенант хаçат вуласа ларнă. Çул шучĕпе вăл çамрăк пулнă, шăм-шакки яка тата çирĕп курăннă. Хура çӳçĕсем те унăн илемлĕн йăлкăшса выртнă. Анчах сăн-пичĕ вара ăна пĕтĕмпех пăснă: çамки çинче туратлă çĕвĕ, питне пĕр тĕлтен, çăпан тухнă пек, бинтпа çыпăçтарса хупласа хунă, аялти тута хĕрринчи тӳрленсе çитеймен суранĕ тата тутине хăрах еннелле кăшт чалăштарса янă.

Лейтенант хĕре тахçанах сиснĕ, хаçатне вăл вăхăчĕ-вăхăчĕпе

кăна вуланă, пуринчен ытла ун çинелле пăхнă.

— Ай-ай, мĕн тери хитре вăл вырăс хĕрĕ!—шутларĕ лейтенант хăй ăшĕнче,—эх, манăн та çавăн пекех чипер пулинччĕ!

Анчах хĕр патне пырса ларма унăн хăюлăх çитеймерĕ.

II.

Каçхине пассажирсем репродуктор тавра Совинформбюро пĕлтерĕвне итлеме пухăнчĕç.

„Ирхине тăшман икĕ пехотлă тата пĕр танклă дивизипе Сталинград хулин кăнтăр енче çĕнĕрен наступлени тума тытăнчĕ. Пирĕн боецсем, тăшмана çывăха ярса, орудирен тата миномĕтран персе 64 танк çĕмĕрсе тăкнă. Тăшман çапăçу хирне икĕ пин çын вилли хăварса каялла чакрĕ.

„Сталинград хули çинче сывлăшра вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Тăшман кунне пиншер самолĕт кăларса ярать...-мĕш числара 78 самолĕт персе антарнă".

Нумайăшĕ хĕрхенсе илчĕç.

— Мĕн тери хитре хулаччĕ!

— Тăрайĕ-ши тытăнса?—иккĕленчĕç çавăнтах теприсем.

Лейтенант тӳсеймесĕр часах калаçăва хутшăнчĕ:

— Што касается... хитре хула, вăл тĕрĕс, çук ĕнтĕ, анчах эпир Сталинград пур, пурăнать, нимĕçсем ăна нихçан та илеймĕç!

— Эсир унтан-и вара?—ыйтрĕ васкаса, темĕнле майпа юнашар пулнă хайхи хĕр.

— Унта çуралман, но... унтан!

— Унта вăрçăра пулнă?

— Да, хам та вăрçнă; пĕлетĕп, ыттисем мĕнле вăрçнине те курнă: Сталинградăн, тен, çурчĕсем те юлмĕç, анчах Сталинград яурпĕр юлать!

Сăмахласа кайнă май сисмесĕрех иккĕшĕ юнашар балкон çинелле утса тухрĕç. Сывлăш уçă, ту енчен каçхи лăпкă çил вĕрет. Анчах вăласлă Атăла хумхатаймасть: çиелтен кăна ачашласа иртсе каять. Шывĕ çав-çавах кăвакăн-симĕсĕн курăнса выртать. Варринче ăна бакен хунарĕсем çутатса тăраççĕ. Çӳлтен сулă юхса анни курăнать, ун çинче каçхи тĕттĕмре Атăл юрри кăшт кăна, ху-уллен илтĕнет. Сулахайри утрав çинче тата, хăва тĕммисем хушшинче, вутă хĕмленсе çунни курăнать. Ав, пароход вăл еннелле пăраннă майĕпе, çыннисем те палăрма пуçларĕç. Вĕсем йĕпе, нумаях пулмасть пулăран таврăннă пулас, хуран ăшĕнче сиксе вĕрекен пулă яшки тавра типĕнсе лараççĕ.

Вĕсем тенкел çине юнашар ларчĕç.

—Хитре Атăл!—терĕ лейтенант, аллисемпе сулса илсе.—Вĕт фронт инçех те мар, а вăл шутламасть хумханма, нимĕн пулман пекех!

— Калăр-ха, лейтенант юлташ,—Сталинграда чăнах илеймесçи вĕсем?

— Разве эпĕ улталатăп? Атăла кам та пулсан илнĕ-и вара хăçан? Вĕт вăл вырăс шывĕ, пирĕн Атăл! Пăхăр эсир,—аллипе

инçетелле тӗллесе кӑтартрӗ лейтенант,—мӗн тери илемлӗ, вӑйлӑ, э?

— Вӑл тӗрӗс, анчах нимӗçсем финсем мар, вӗсемпе вӑрçма хӑрушӑ пулмалла.

— Мӗнле калас сире!..

Лейтенант тута хӗрри çинчи суранне аллипе хупласа тытрӗ те, нимӗн пулман пекех, лӑпкӑн калама пуçларӗ:

— Эпӗ вӑрçӑра пӗрремӗш хут. Вӑрçӑччен, Совет Союзӗнчи ытти граждансем пекех, манӑн та пысӑк ӗмӗтсем пулнӑ. Эпӗ пединститутра вӗреннӗччӗ, преподаватель пулса яла, чи лӑпкӑ вырӑна кайма хатӗрленнӗччӗ. Пӗлетӗр-и, мӗн чул паха вӑл ялти учитель пулма? Эпӗ вӗт хамӑн учительницӑна Варвара Петровнӑна пӗлетӗп, халӗ те пурӑнать пулас-ха Анат Кӗнерте. Çамрӑк хӗрле тӗттӗм яла килсе кӗрсе, вырӑнтан куçмасӑр пурӑнать. Мӗн хушнӑ ӑна çавӑн пек ялта чарӑнса тӑма, кам чарнӑ хулана куçма? Вӗт сӑнран халӗ те паллӑ, хӗр чух ытарма çук пулнӑ пулас! Гражданла совесть, тӳрӗ кӑмӑл... Çын хӑй умне ырлӑх акас задач лартнӑ и... çав çулпа хӑюллӑн малалла пынӑ. Астӑватӑп эпӗ те, пире вӑл çынна юратма, ырӑ тума кашни утӑмрах вӗрентсе пыратчӗ. А результат? Мӗнчул унӑн ученикӗ пулнӑ инженерсем, врачсем, учительсем, даже... Совет Союзӗн Геройӗсем те пур!

— Чимӗр-ха—чарчӗ хӗр, халиччен пӗр сӑмах чӗнмесӗр итлесе ларнӑскер,—Эсир хӑвӑр çинчен пуçланӑччӗ, мӗншӗн тӑрук айккалла пӑрӑнатӑр?

— Каçарӑр, кӑшт çеç. Ну вот, манӑн ӗмӗт—çынна ырӑ кӳрекен ӗçре кӑна ӗçлесси пулнӑ. Ача чух, астутартӑм сире, ӑна тума Варвара Петровна вӗрентнӗ, çитӗнсен вара... произведенисем те сахал мар вуланӑ ку тӗлӗшпе.

— Вара, малалла мӗн?

—Çав шухӑшпах эпӗ вӑрçа лекрӗм. Хӑрушӑ пулчӗ, çынна вӗлермелле-çке!..

— Эсир вӗлернӗ-и?

— Питӗ хӑвӑрт, питӗ хӑвӑрт хӑнӑхрӑм. Мӗншӗннине ӑнлантарма шутламастӑп, мӗншӗн тесен фашистсем камне эсир хӑвӑрах лайӑх пӗлетӗр; пӗр сӑмах кӑна калатӑп: вӗсенчен тискер, усал чӗрчун тӗнчере урӑх çук. Пӗрремӗш çапӑçура,—хӗрсе кайса калама пуçларӗ лейтенант,—автоматран вӑтӑр пилӗк усала шаккаса хутӑм, иккӗмӗш атакӑра,—тошӑ кая мар. Эх! аван вӑл тӑшмана чӗре тӗлӗнчен штыкпа чиксе вӗлерме! Пулнӑ конешнӑ, танксемпе çапӑçни те. Кунта уш ху пурнӑçна ан шелле. Вилсен вил, анчах тӑшман танкне хӑвӑнтан ан ирттер. Ман шут çинче, чӑн, нумай мар, но... ултӑ танк пур! Сталинград фронтӗнче кашни боец çавӑн пек е ытларах çапӑçать. Шутлӑр ӗнтӗ хӑвӑр, ӑçтан илме пултараççӗ вӑл хулана нимӗçсем? А снайпӗрсене, танкистсене, лётчиксене илсен, вӗсем—кашни герой!

— Ман шутпа,—çумнерех сиксе ларчӗ хӗр,—есир тошӑ...чӑнчӑн герой, каçарӑр та ыйтнӑшӑн, сирӗн хушамат, ят мӗнле?

— ...Хм!.. Шустрый! Хм... Иван Иванч! А сирӗн?

— Эпĕ Тоня ятлă.

— Молодец, Иван Иванч,—татах йăпшăнчĕ çумнерех Тоня,— питĕ телей сирĕнпе паллашма!

— Сахал, Тоня, сахал, ман вăйпа татах вĕлерме кирлĕ вĕсене! А, пĕлетĕр-и эсир, мĕн тери лайăх вĕсене вĕлерме,— мăкăмăллăн савăнса илчĕ лейтенант.—Пĕрне персе ÿкерсен, тепĕрне тата ытларах сисĕмлĕ çĕртен тивертес килет. Çавнашкал умлă-хыçлă темиçе çын... йĕрĕнчĕксене пĕтерсе хурсан вара, чĕре патĕнче простă çăмăл, пуçра уçă пек туйăнать. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен, хăвăрах шутлăр, хальхи вăхăтра мĕнпур урăх этемлĕхе ырă туни фашиста вĕлернисĕр пуçне? О, мĕн тери ырă! Епĕ пĕр фашиста вĕлернĕ, значăт, эпĕ вуншар мирлĕ çынсене вилĕмрен çăлса хăварнă; эпĕ вĕлернĕ тепĕр фашист—значăт, хамăр ялсене вутра çунса каясран çăлса хăварнă, эпĕ вĕлернĕ виçĕ фашист—значăт, сĕткенлĕ тырă уйĕсене, хура вăрмансене, Атăл пек юханшывсене, тинĕссене сыхласа хăварма пулăшнă. Мĕн чул ырă! Çук-çук! Кун пек ырă ĕç эпĕ этемлĕхе хам ĕмĕрте нихçан та тăвайман, урăх тăваяс та çук!

— Маттур, питĕ тĕрĕс, Иван Иванч!—çемçе-çемçе аллине лейтенант хулпуççи çине сисмесĕр хурса каялла вĕлт! кăна илчĕ Тоня.—Пуçласа куратăп эпĕ сирĕн пек тарăн та тĕрĕс шутлакан çынна!

— Ну-ну...Манăн ку чăнах мухтаннă пек пулса тухрĕ пулас, каçарăр!

— Çу-ук, эсир пурне те тĕрĕс каларăр, эпĕ сирĕнпе паллашма тÿр килнĕшĕн хама хам çав тери телейлĕ тесе шутлатăп. Каçарăр, ăçта çитиччен каятăр эсир? а, ку мĕн?—çемçе аллине пичĕ патнелле кăнтарчĕ Тоня, электричество ламписем тăрук çутăлса кайсан,—сире амантнă, да?

— Пăртак кăна, анчах ытларах та пулма пултарнăччĕ, юрать пĕр япала пулăшрĕ .А халĕ... эпĕ отпуска каятăп!

— Сирĕн çемье пур-и?

— Пулмалла пек, çавăнпа васкатăп çитмешкĕн, а эсир, инçе каятăр-и?

Тоня вăрăмăн сывласа илчĕ.

— Манăн тошă Сталинград фронтĕнче пулнăччĕ...

— Кам, упăшка-и?

— А-ха, упăшка. Юлашки çырура вăл мана аманса госпитальре выртни çинчен пĕлтерчĕ, эпĕ вара кукăльсем пĕçерсе ун патне васкарăм...

— Курса калаçма-и? Аван, аван! Хамран илсе калатăп сире, аманнă çыншăн сирĕн ачашлăх—чи лайăх эмел!

— Анчах,—Тоня кĕсъинчен шурă тутăр кăларса куçĕсене шăлса илчĕ пекки пулчĕ,—телейсĕр эпĕ, тупаймарăм ăна: те урăх çĕре куçнă, те çĕнĕрен фронта тухса кайнă, хыпар çук.

— Шел! Шел! анчах кулянса ÿкме ир, вăхăт та мар халĕ!

— Мĕн тăвас тетĕн? Тÿсме тивет, халь ĕнтĕ каялла киле каятăп, мĕн пулĕ, кĕтсе пăхăп...

Каçхи апат сывхарса килнипе вĕсен уйрăлмалла пулчĕ. Лей-

тенант столовăя кайрĕ, Тоня хăй каютине кĕчĕ.

— Мĕн тери ырă çын!—шутларĕ Тоня диван çине ларса.— Манăн мăшăрта çавăн пек пулинччĕ! Вĕçĕ-хĕррисĕр чуптуна пулăттăм вара эпĕ ăна!

III.

Пароход халĕ У. хули тĕлĕнчен иртсе пырать. Илемлĕ хула вăл: пĕтĕмпех пахча айĕнче ларать. Пиçсе çитнĕ панулмисем чие çырлисем кунтанах хĕп-хĕрлĕн курăнса тăраççĕ.

Лейтенант вĕсем çине ытараймасăр чылайччен пăхса ларнă хыççăн, кĕсъинчен кĕмĕл портсигар кăларса, йал! кулса илчĕ те вăрахăн пирус туртса ячĕ. Да, интереслă вăл портсигар историйĕ, кашни кăлармассеренех аса илет ăна лейтенант. Ĕç малтанхи çапăçу хыççăн пулнă. Кĕрешӳ кăшт лăпланнă вăхăтра батальон командирĕ ăна, ун чухне аслă сержанта, чĕнсе илсе хĕрлĕ хутаçлă парне тыттарнă. Унта, ытти япаласем хушшинче, çак портсигар тата ун ăшĕнче лайăх йышши пирус, тепĕр татăк çыру пулнă. Тĕрĕссипе вăл çырура ытлашши нимĕнех те пулман пĕр хĕр—Антонина Ивановна Суслина „мĕскĕн“ парнене йышăнса, тăшмана хытăрах, вăйлăрах çĕмĕрме ыра суннă. Унтан, кирлĕмĕн пуласран (çаплах çырнă çырура) çыру айне хăй адресне çырса янă. Сержант, çийĕнчех, тавтуса хирĕç ответ янă, кĕскен хăй çитĕнĕвĕсем çинчен пĕлтернĕ. Лешĕ те чарăнса тăман илсенех тепĕр çыру çырнă. Çапла вара, пĕр-пĕрне курмасăрах паллашса кайнă икĕ çамрăк, карточкă та ярайман Сержантăн çумĕнче пулман, хĕр малтан пуçарма вăтанарах тăнă. Çак хушăра, вăхăт иртсе пынă май, сержант татах çĕнĕ çапăçусенче пулнă. Вĕсенчен, пĕринче хăй те лайăххăн астумасть мĕнле пулнине, портсигар сулахай енчи кăкăр кĕсъине лекнĕ пулнă. (Вăл васкана вăхăтра пулнă пулас). И вот, кĕтмен çĕртен снаряд çурăлса кайсан, унăн ванчăкĕсен пĕр пайĕ сержанта пырса тивнĕ. Пичĕ суранланни çавăнтан килнине чухлать ĕнтĕ пулĕ вулакан. Анчах пысăкрах ванчăкĕ пите мар, чĕре тĕлне лекнĕ. Вăт вара портсигар питĕ выранлă пулнă. Осколок унăн хăрах хупăльчине шăтарнă, тепĕрне çук, авăнтарса кăна илсе аякалла сирпĕнсе кайнă. Çакăн хыççăн, вилĕмрен çăлăнса юлсан, сержант хĕр патне вăрăм çыру çырнă, хăй черечĕпе хĕрĕ те, ку хутĕнче, хăй шухăшĕсене урăх ниепле те пытараймасăр мĕн пуррине пĕтĕмпех уçса панă. Халĕ, портсигар кăларнă майăн, лейтенант ку çыру çинчен çĕнĕрен аса илсе татах (миçĕмĕш хут ĕнтĕ! вулама тытăнчĕ:

„Савнă тусăм! Санăн геройла ĕçӳ мана (эпĕ халĕ оборона заводĕнче ĕçлетĕп) çитĕнӳсем тума çав тери хаваслăх парать. Çыру илсен, виçĕ кун киле таврăнмасăр ĕçлерĕм, нормăна виçĕ хут ирттерсе тултарнăшăн завод дирекцийĕ урлă тав илме тивĕç пултăм. Тусăм! Эсĕ курас килет тесе çыратăн. Тĕрĕс, эпĕ те питĕ курасшăн сана. Май пулсан, вăхăт килсе тухсан, ыйтатăп килсе курма. Пирĕн кунта кичем мар, хамăрăн пахча пур. Хушăран тупатăп вăхăт унта валли те. Ĕнер акă хыçала-

рах, çырласем çăра пулнă вырăна, сĕтел тухса лартрăм, тенкелне асатте сулăнса лармалла туса пачĕ.Кайăк та пур кунта, çулçăсем хушшинче кулленех юрă шăрантарать. Халь ĕнтĕ эпĕ каçсенче час-часах çак вырăна тухса шухăша кайса ларатăп, хушăран чĕре те темĕнле васкаса тапма тытăнать. Чунăм, эпĕ сана чухлатăн пулĕ тесе шутлатăп. Ну, чунăм, ăнланатăн эсĕ мана, да? Килсе кур, чунăм, татах ыйтатăп, хытă кĕтетĕп!"

Лейтенант куçĕсене юлашки строкасем çинчен чылайччен илеймесĕр тăчĕ. Унтан, çырăва ерипен хуçлатса кăкăр умĕнчи кĕсъине чиксе хучĕ те, каяллах çыран хĕрринчен пуçланса сăрт тӳпинелле, çуртсем хушшинелле, улăхса каякан пахчасем çине пăхрĕ.

— Ах, илемлĕ!—шутларĕ вăл хăй ăшĕнче,—мана та вĕт çавăн пекех тутлă улмасем, пылак çырласем кĕтеççĕ. Хĕрĕ тата, хĕрĕ! Вăл, паллах, ман çумма ларĕ, хитре çӳçлĕ пуçне ман кăкăр çине хурĕ, и-и... вара!.. Эпĕ ăна ачашлатăп, ачашлатăп! А кайăк? Вăл пирĕн савăнăçа çĕклентерсе вĕçĕ-хĕррисĕр юрлĕ, юрлĕ!

Хăшпĕр чух пулать вăл çакăн пек вăхăт: пĕр-пĕр тĕрлĕ поза йышăнса ларсан, савнă тусăм, юратнă чĕрем хăвăнтан инçе те мар пек туйăнать. Лейтенант та ĕнтĕ, çав шухăшсем айне путса, пĕр тапранмасăр, хытса кайнă пек пулса, ларчĕ. Урисем унăн çурмалла тăснипех юлчĕç, куç хупанкисем кăшт хупăнчĕç, сылтăм алли, такама ыталаса илме хатĕрленнĕ пек, хулсыппи тĕлĕнчен хуçланса илчĕ.

— Ыра кун!

Лейтенант хăй умĕнче Тоня тăнине курчĕ.

— А-а... пожалстă, ларăр!

— Эх, çанталăк! Ырă паян, ăшă,—терĕ Тоня çамки çинчи тар тумламĕсене шăлса илсе,—а вырăнĕсем тата... хитре!

— Россия! Россия!

— Тĕрĕс, Россия! Паян татах хитре Россия! Юратса пăхас килет ун çине!

— Тата пулăшас килет,—хушса хучĕ лейтенант,—çĕклес килет унăн вăйне, пултаруллăхне!

— Тĕрĕс. А, калăр, тархасшăн, Ваня, каçарăр, Иван Иванч, У. хулинче хăçан та пулин пулса курнă-и эсир?

— Пулайман çав.

Тоня сисрĕ: лейтенант паян ĕнерхи пек мар, хытăрах калаçать. Тоня ăна вăрăм калаçăва кĕртсе ярасшăн, лейтенант, хыттăн мар пулин те, кĕскен кăна татса хурать.

— Каçарăр,—ыйтрĕ Тоня юлашкинчен,—мĕн çинчен шутлатăр çак эсир? Тен, чăрмантаратăп эпĕ!

— Пĕлетри, мĕн çинчен? Фронтра шутламан, пароход çине ларнă чух тошă шутламан...

— Халь?

— Халь... Çул çывхарса килнĕ май, пуçа шухăшсем килме пуçларĕç.

— Мĕн çинчен апла?

Лейтенант пĕр хушă, такам тытса чарнă пек, чĕнмесĕр ларчĕ.

— Мĕнле шухăшсем апла?—ответ илменнине çĕнĕрен астутарчĕ Тоня.

— Ну, юрĕ, пытарма юратмастăп эпĕ,—терĕ лейтенант уçса пама килĕшсе,—мана свидани кĕтет! Маншăн совершенно çĕнĕ япала?

— Акă мĕн иккен, сире савăнăç кĕтет апла?

Лейтенант сăмах тупаймасăр каллех шухăша кайса ларчĕ.

Тоньăна та ĕнтĕ текех чăрмантарма аван мар пек туйăнчĕ.

— Эх!—терĕ вăл сăлтав тупса,—эпĕ каютăна питĕрмесĕрех тухнă.

— Ăçта эсир?

— Каçарăр чăрмантарнăшăн.

## IV.

Ку кун куç умне урăх курăнмарĕ Тоня. Анса юлман-ши вăл? Хăйне хăй тĕрĕслесе пăхас шутпа, тепĕр кунĕнче лейтенант, унăн каюти умĕпе иртсе кайнă чух, юриех чўречи витĕр пăхрĕ. Мĕн хушрĕ-ши ăна кун пек тума? Вĕт ĕнер çеç урăхлаччĕ унăн кăмăлĕ: свидани, свидани! часрах хăй савнине курас туртăм! Урăх никама та пĕлмен, никам çинчен те шутламан ĕнер лейтенант. Мĕн хушрĕ ăна паян Тоня чўречи витĕр пăхма? Тен, Тоньăн чăнах ытарма çук хитре сăнĕ? Тен, пĕрле кайма хăнăхнăран, çул кĕске туйăннăран? Тен, ĕнерхи кăмăл минутлăха кăна пулнă? Тахăшĕ тĕрĕс, хăй те пĕлмест лейтенант. Анчах сисет лайăх: Тоньăсăр ăна темĕн çитмен пек туйăнать. Акă, курать лейтенант, Тоня чўречи пăртак уçă, шалта çурма сасăпа калаçни илтĕнет:

— Йăнăшатăр эсир!

— Тĕрĕс калатăп, пурнăçра та йăнăшса курман,—тет арçын сасси,—эсир—чĕрем, ну... тўсме çук урăх!

— Сĕнместĕп сире ун пек тума,—тет малалла Тоня сасси,—эсир ман характера пĕлместĕр вĕт!

— Мĕн ку?—ыйтрĕ хăй ăшĕнче лейтенант.—Юрату?

Да, такам Тоньăпа калаçать. Мĕн тери хумхануллă вăхăт! Калаçакан çыннишĕн те, хĕрĕшĕн те. А виççĕмĕш çыншăн, вăл хĕрне çавнашкалах кăмăл тăвать пулсан? Кам та пулин сан савнипе юнашар ларса юрату çинчен калаçнине курнă-и, е, тата (саншăн кĕтмен çĕртен) ăна урăх çын чуптунине тĕл пулнă-и эсĕ, вулакан? О, мĕнле кансĕр япала! Чĕтрет пĕтĕм шăм-шак, чĕре тухса ўкес пек кăртлатать. Çакăн пек ларутăрăва лекрĕ те ĕнтĕ лейтенант. Анчах вăл хăйĕн нервисене хăнăхтарма вĕреннĕ çын, часах тупрĕ тĕрĕс май.

— Мĕн тума мана çын юратăвĕ?—шутласа илчĕ вăл çухалса каймасăр.—Мана вĕт хамăн савни кĕтет!

Тĕрĕс турĕ: чўрече умĕн васкаса иртсе кайрĕ те, хăй каютине кĕрсе кĕнеке вулама тытăнчĕ. Çакăн пек чылай вăхăт иртрĕ. Кăнтăрлахи апат хыççăн тин вара, канма хатĕрленме кайнă чух, Тоньăна ăнсăртран тĕлпулчĕ. Ку хутĕнче лейтенант сисĕнмесĕр,

аякран иртсе кайма тăчĕ (курăнать, унăн кĕвĕçесси сÿнмен), анчах Тоня хăй чĕнсе илчĕ:

— Мĕн пулнă сире? Здоровă та тумастăр!

— А-а... Здрасте!

— Ăçта çухалса пурнатăр, Иван Иванч?

— А эсир? Эпĕ сире анса юлнă тесе.

— Эпĕ кунтах, эсир вăт курăнмастăр!

— Эпĕ те кунтах, татах икĕ талăк...

— Ну, мĕн тăватăр, вăхăт мĕнле иртет?

— Халĕ нимех те тумастăп-ха, апатчен кĕнеке вуларăм.

— Апла пулсан, кĕрĕр пожалстă ман пата,—каюта алăкне уçса сĕнчĕ Тоня,—эпĕ пĕчченех пурнатăп.

Тоня каюти пĕр выранлă. Стена çумне диван çыпăçтарса лартнă, пукан çук.

— Ларăр, тархасшăн!—хăйпе юнашар сĕнчĕ Тоня.

Чÿрече витĕр кăшт çил вĕрет. Сайра хутра, кассăн-кассăн пухăнса килнĕ вăхăтра, вăл иккĕшне те пичĕсенчен лăпкăн шăлса илет. Çав майпа, хăшпĕр минутра Тоньăн çемçе çÿçĕсем лейтенант питне ачашшăн кăтăкласа илеççĕ. Атăл çинчен, варкăшпа пĕрле, илемлĕ, хитре юрă вăрахăн илтĕнет:

..И не пить им из Волги вод-ы.

— Итлĕр-ха, итлĕр!—терĕ Тоня, чÿрече кантăкне ытларах уçса хурса.—Мĕнле ырă юрă илтĕнет!

— Эх, красота!

Хумханнă пек пулса, лейтенант пирус кăларчĕ. Анчах портсигартан мар, пачкă ăшĕнчен. Шăтăк портсигарне хĕр умĕнче кăларма простă вăтанчĕ лейтенант.

— Эсир туртатăр-и?

— Çук, вăл япала хĕрарăма килĕшмест.

— А кам?—ыйтрĕ лейтенант, сÿннĕ спичкине хума тăнă чух пепельница çинче пирус тĕпĕсем выртнине курса.

— Каçарăр, пуçтарма ĕлкĕреймерĕм,—терĕ Тоня, сĕтел çине васкаса шăлса илсе,—пĕр командировкăна каякан çын пулсаччĕ кунта.

— Вăл сирĕн пата... çÿрет-и?

— Хи-и!—кулса илчĕ Тоня,—эсир, тен, кĕвĕçме шутлатăр?

— Чăн пулсан...

— Мĕн эсир? Мана ун пек тесе ан шутлăр, чăннипе ăшра манăн вут çунать. Пелместĕп вĕт эпĕ хам мăшăра: тен, вăл халиччен вилсе выртнă. Анчах пĕччен хуйхăрса ларма карчăк мар эпĕ, çынсемпе калаçсан, вĕсем хушшинче ытларах пулсан, çăмăл пек туйăнать, шухăш сÿрĕлет!

— Вăл чăн, Тоня!

— Калăр, тархасшăн, эсир вăрçăра пулса курнă çын, пĕтекенсем пирĕн енчен те нумай-и?

— Вăрçă тени çухатусăр пулмас ь

— Неушлĕ пĕтрĕ вăл?—хуйхăрса илчĕ Тоня.—Çав тери лайăх çын! Ох, çыру хăть пулинччĕ!

Лейтенант умĕнче Тоня хăй мăшăрне хăйне çăмăл тăвас

шутпа асăнчĕ. Сахал мар пулать вăл кун пек чух: çын, тен, курнă; тен, ахалех йăваш сăмахсемпе ĕнентерме пултарать. Анчах лейтенант чуна вырттарма ыррине нимĕн те каласа пама пултараймарĕ, мĕншĕн тесен „вăрçă тени çухатусăр пулмасть". Тоньăна ку сăмахсем ытларах кăна кӳрентерчĕç. Вăл пĕр вăхăт тапранмасăр ларса, куçĕсемпе тулалла, таçталла тĕллесе пăхрĕ.

— Неушлĕ çук вăл?

Тоньăн куçĕсем шывланма пуçларĕç, анчах çил касси килсе кĕрсе типĕтсе илме ĕлкĕрчĕ. Çак вăхăтрах лейтенант Тоня çӳçĕсем ăна питрен çĕнĕрен шăлса илнине туйрĕ. Пĕр енчен — шел Тоньăна, тепĕр енчен—хитре вăл. Ой! ытарма çук ăна.

— Лапланăр, Тонечка!—терĕ лейтенант, ăна аллинчен кăшт кăна тытса,—ан кулянăр!

Калас пулать, лейтенант хĕр аллине хăçан тытса курнине те астумасть. Питĕ çемçе, ытармалла мар туйăнчĕ ăна вăл. Пурçăн тес, пурçăн мар, мамăк тес, мамăк мар. Темĕнле ăшă йăваш вăл, анчах тытнă тĕлте кăна мар, пĕтĕм хул тăрăх чĕре патнелле çемçетсе улăхакан ăшă. Ой, ырă! Лăстăр-р! каять шăм-шак. Кам чаранса тăма чăтĕ ĕнтĕ ку пуçламĕш тапхăр çинче? Лейтенант, тӳсме çукран, шăлса, ачашласа илчĕ. Унтан, Тоня хирĕç пулманран,аллине çӳлерех илсе хучĕ, и... хăй те сисмерĕ, Тоня çӳç пĕрчисем тепĕр хут сĕртĕнсе илнĕ вăхăтра, ăна пĕтĕм пĕвĕнченех ыталаса илме тăчĕ.

— Юрамасть!—тăрук тытса чарчĕ Тоня.—Манăн упăшкам пур!.. Вăт тамаша! Анчах Тоня çине мар, хăй çине тарăхса кайрĕ лейтенант. Тоня мĕн? Ăна, вырăс хĕрне, çутçанталăк тивĕçлипе панă хитрелĕх, А вăт такам (хăй упăшкам текен çын) никамран малтан тытса илме ĕлкĕрнĕ ăна. Досаднă малтан тĕл пулманшăн.

— Ах, вăл çынсене!—хăй ăшĕнче тарăхса илчĕ лейтенант.— Пăсаççĕ хĕрсене! Ку та навернă Тоня чиперĕ тăшне тăмасть, какой-нибудь... прохвост.

— Мĕн эсир?—ыйтрĕ Тоня, вăл кăмăлсăрланнине кура.— Çиллентĕр-и мĕн? Каçарăр, усал турăм пулсан...

— Эпĕ хам айăплă, Точечка, каçарăр хăвăр!

— Ан ӳпкелĕр, Иван Иванч, сиренпе эпĕ хама хам яланах ырă туятăп. Çаваннпа çӳрĕр ман пата, ан вăтанăр, анчах ун пек шухăшсемпе... тархасшăн ыйтатăп, ун пек шухăшсемпе ан кĕрĕр алăкран!

## V.

Татах тепĕр кун иртрĕ. Çул çывхарса килнĕ май (хăй шучĕпе паян каçхине е çерле çитме шутлать), лейтенант хăйне хăй тирпейлеме тытăнчĕ. Ака вăл аяла анса, парикмахерскинчен хыранса тавранчĕ те, тӳрех сăн витĕр пăхрĕ. Çук, юрамасть кун пек тĕл пулма, хăрушрах. Чемоданран крем, пудра кăларса пит çинчи çĕвĕсене, сурансене сĕрме тытăнчĕ.

— Сывă-и? Ăçта кун пек хатĕрленетĕр?

— Здрасте, Тоня! Ҫитетпӗр пулас, хатӗрленетӗп веҫ, свидани!

— Хӑҫан анатӑр апла?

— Кӗҫӗр ҫӗрле. А эсир?

— Апла пулсан, уйрӑлатпӑр эпир, эпӗ ыран тин анатӑп.

— Ну, штош, сире эпӗ ырӑ сунма кӑна пултаратӑп!

— Урӑх кӗрсе тухма шутламастӑр-и? Калаҫмалли тупӑпӑр!

— Шантарма пултараймастӑп, Тоня, хӑвӑрах куратӑр, нимӗн те пуҫтарма ӗлкӗреймен эпӗ, а тен... алӑ пама кӗрӗп те...

Анчах лейтенант Тоня патне кӗмерӗ. Чӑн, кун ҫуттинче Тоня ӑна хӑй те кӗтмерӗ, мӗншӗн тесен ир тесе шутларӗ. Анчах каҫхи апат хыҫҫӑн, хӗвел ансан, ниҫта тухмасӑр ларчӗ. Акӑ, коридор тӑрӑх шалт! шалт! туса такам утса килни илтӗнчӗ. Тоня васкаса ҫӳҫӗсене тураса илчӗ. Унтан, хирӗҫ пулса илме алӑк еннелле ҫаврӑнса тӑчӗ. Кӑрт! кӑрт! сикме пуҫларӗ чӗре. Мӗншӗн? Вӗт пӗлет Тоня, ӑна унӑн мар, урӑх хӗр чӗри кӗтет; лейтенант хӑйне хӑй уншӑн мар, урӑх хӗршӗн хитреленет; хӑй те вӑл, Тоня, пушӑ мар, унӑн та пур мӑшӑр. Анчах, кирек мӗнле пулсан та, пулӑшмаҫҫӗ вӗсем лӑпланма. Уйрӑлма вӑхӑт ҫитсе килнӗ май, сисет Тоня: ӑшра унӑн тӑвӑл пуҫланать. Мӗншӗн апла? Тен, совет ҫӗршывӗшӗн, Российӑшӑн, халӑхшӑн, юлашкинчен „Тоньӑн хӑйӗн телейӗшӗн те тӑшмана хирӗҫ маттур кӗрешнӗ, ҫапӑҫура хӑй сывлӑхне, хитрелӗхне ҫухатнӑ лейтенант тӑрук кӑмӑла килсе кайнӑран? Тен, унтан, ырӑ ҫынтан, уйрӑлма ахаль йывӑр пулнӑран? Пӗлмест Тоня хӑй те.

Анчах ура сасси чарӑнмарӗ, таҫталла иртсе кайса ҫухалчӗ. Тоня сылтӑм аллинчи пӗчӗк сехет ҫине пӑхса илчӗ. 10-мӗш сехет, лейтенант ҫавах ҫук.

— Кӳрентермерӗм-ши эпӗ ӑна паҫӑр? — тарӑхса илчӗ Тоня хӑй ҫине. — Ҫук-ҫук! — туйса илчӗ ҫавӑнтах малалла, — эпӗ тӗрӗс тунӑ, мӗнле-ха ун пек? Ҫук, пултараймастӑп эпӗ!

Чӗри хӑйӗн ҫав-ҫавах кӑртлатать. Кӗтет вӑл хӑй ҫумне ларакана,..

— Мӗн ку? Ой, пултараймастӑп эпӗ!

Тоня тӑрса уткаласа пӑхрӗ. Унтан чӳрече умне пырса тӑчӗ, ун витӗр хирӗҫ пулнӑ пароход чӑлкӑшса кӑна иртсе кайни курӑнчӗ.

— Кӗтсе пӑхам татах.

Ҫӳҫне ҫӗнӗрен тураса илсе, диван ҫине ларчӗ. Савнине кӗтекен хӗре кам курнӑ? Пичӗ унӑн (часрах тӗл пулманшӑн) кӑшт кӑмӑлсӑр, анчах ырӑ; куҫӗсем ывӑннӑ пек, анчах йӑваш. Тинкеререх пӑхсан тата, сулахай кӑкӑрӗ айӗнче хӗрӳллӗ чӗри таппине те туйса илме пулать. Ҫакӑн пек пулса, чылай кӗтрӗ Тоня.

— Шак-шак-шак! — туни илтӗнчӗ таҫтан.

— Пожалстӑ, пожалстӑ! Юрать!

Тоня сиксе тӑрса, алӑка уҫса пӑхсан, пӗр вӑрӑм ҫын хирӗҫ каюта алӑкне шаккаса тӑнине курчӗ.

— Мĕншĕн килмест-ха вăл?

Тоня татах шухăша кайса ларчĕ. Юлашкинчен, йывăр шухăшсем пуçа пусса килнипе, саланмасăрах тĕлĕрсе кайма пуçларĕ.

— Ту-у-у...—илемлĕ, саспа кăшкăрса ячĕ пароход. Тоня чĕтренсе илсе, ура çине сиксе тăчĕ.

— Халь ĕнтĕ анать вăл!

Пароход пристань çумне пырса чарăнчĕ. Çынсем кускалама пуçларĕç: пĕрисем тухаççĕ, теприсем лараççĕ. Çавăнтах матроссем те таварсем йăтса каялла-маялла утма пуçларĕç. Тоня çӳлтен пăхса тăрать, сăнать кашни тухакан çыннах. Аллинче унăн шурă тутăр, лейтенант курăнсанах сулма шутлать. Анчах вăл курăнмарĕ. Пĕр свисток, иккĕ... виççĕ, лейтенант тухмарĕ.

— Ăçта вăл, неушлĕ сывăрать?

Кайса пăхрĕ унăн каюти патне. Çутă çук, сасă та илтĕнмест. Пĕччен пурăнманран шаккама хăяймарĕ, кăмăлсăр пулса каялла çаврăнса угрĕ.

— Ну-у! Хуллен эсĕ!

— Любочка, чунăмçăм, тепĕр хут кăна!

Тĕттĕм çĕрте, тепĕр енчи кĕтесре, иккĕн йăпшăнса лараççĕ, арçынни çар тумĕпе.

— Лейтенант! Иван Иванч! –таçтан Тоня пуçне пырса кĕчĕ шухăш.

А, мĕн тери йывăр испытани! Хĕрарăмсем тӳсеймеççĕ ăна, вĕсемшĕн вăл чăн та ĕнтĕ апоплекси ударĕ, пекех.

— О-ой!

— Мĕн? Мĕн сирĕнпе, гражданка?

Çар çынни чупса пырса, картлашка çине йăванса кайма тăнă Тоньăна ярса тытрĕ.

— Мĕн пулчĕ?

— Ничево, иртет!—терĕ хуллен Тоня хăй умĕнче ют çын тăнине курсан.—Каçарăр, эпĕ йăнăшнă.

— Тен, ăсатса ярас сире?—хулĕнчен тытрĕ çар çынни.-Хăш каютăра пурăнатăр эсир?

— Ничево, хамах çитетĕп эпĕ!

Намăс пулнăран Тоня васкаса саланчĕ те, утиялне пуç урлах витĕнсе выртрĕ. Йĕри-тавра шăп. Пароход урапи кăна пĕлмест чарăнма, пĕрмаях шывпа кĕрешсе, сасă кăларса пырать.

— Çук ĕнтĕ,– шутларĕ лăпланма хăтланса Тоня,—унăн вĕт хăйĕн пур, мĕн ухмахланатăп-ха эпĕ? Мĕнле кĕвĕçӳ ку?

Кĕвĕçӳ, хĕр кĕвĕçĕвĕ чăнах та вăйлă вăл. Пытарăнчăк, вăрттăн туллашать пулин те, çивĕч тĕлĕшĕнчен ăна çитекенни тĕнчере урăх çук. Сӳнмест, ниепле те сывăрса кайма памасть вăл Тоньăна. Тен, килет? А тăрук килет? Чĕре татах хăвăрт тапма пуçларĕ. Вăт каналйĕ! Аптранипе Тоня кăкăр айне минтер хуçлатса хучĕ. Çук, пулăшмасть.

— Кам-ши вăл, унăн савни?—тарăхса илчĕ Тоня,—Пĕр-пĕр...

---

1/ Апоплекси ударĕ тесе медицинăра мимĕри пĕр-пĕр юн тымарĕ çурăлса кайса, юн шала юхса тухнипе çын тăрук тăнран кайса ӳкнине калаççĕ.

аскăн хĕр пулĕ çав... Мĕн тери ырă çынна çавăрать, ых, ăна!

Кирек кам пулсан та, лейтенант Тоня патне килмерĕ. Тоня вара, ăшра туллашса ывăннă хыççăн, кăвак çутă килеспе тин çывăрса кайрĕ.

VI.

Ш. хулине пароход ирхине çитрĕ. Тоня тухма пуçтарăнса аялти хуталла анчĕ. Кĕтмен çĕртен, çынсем анса юлма кĕпĕрленсе тăнă çĕрте, вăл лейтенанта тĕлпулчĕ. Пичĕ унăн халĕ, тирпейленĕ майĕпе, якарах курăнать, анчах суранĕсем çав-çавах палăраççĕ. Çар тумĕ çĕнĕ, тин кăна тăхăннă. Çутă тŷмеллĕ гимнастеркăн сулахай енче, кăкăр тĕлĕнче, Ленин орденĕ тата ылттăн çăлтăр йăлкăшса тăраççĕ. Аттисем хром, нăтăрт! нăтăрт! тутараççĕ.

—Здравствуйте, Иван Иванч!—пырса алă тытрĕ Тоня.—Эсир юлман иккен, значăт,—пирĕн хулара анатăр, ырă, ырă!

— Эсир те çак хуларанах-и?

— Кунтан, самăй çак хуларан!

Картлашка çийĕпе утса пынă чух таçтан лейтенантăн ури шуса илчĕ. Тоня çийĕнчех ăна хулĕнчен ярса тытрĕ те вĕçертме манса кайрĕ.

— Kaçарăр!—аллине илме тăчĕ лейтенант.—Аван мар, курма пултарать!

— Кам?

— Мана кĕтекен хĕр!

— Калăр, тархасшăн, кам вăл? Кунти хĕрсене пурне те пĕлетĕп эпĕ, тен, тĕлнех ертсе кайăп!

— Антонина Ивановна Суслина!

— Мĕн?—хытса кайрĕ Тоня.—Мĕн калатăр эсир?

— Да, да! Антонина Ивановна Суслина.

— Ой! Ой! мĕн калатăр эсир?!

Пĕр вăхăт иккĕшĕ те чарăнса тăчĕç.

— Вĕт вăл... вăл—эпĕ, эпĕ—Суслина!

— Эсир!—тĕлĕнсе пăхрĕ лейтенант.—Эсир... Суслина?

— Эпĕ, анчах эсир мĕнле?

— Эпĕ—аслă сержант пулнă, халĕ лейтенант Владимир Петрович Майский!

— Эсир—Володя? Эсир—Майский? Мĕншĕн апла паçăр Шустрыйччĕ?

— Чăн чăн Майский!—татах ĕнеnмелле татса каларĕ лейтенант.—Шустрый вăл ман фронтри хушамат, такам ўрекшĕн панăччĕ ăна, а Иван Иванч.. .Çар çыннисене шўт тунăшăн каçарма ыйтатăп!

— Володя! Чунăм!—кăкăрĕ çумне çыпçăнчĕ Тоня.—Вĕт эпĕ сире шыранă, упăшкам вĕт манăн... эсир, эсир—Совет Союзĕн Геройĕ!

— Манăн савни те эсир, эсир—стахановка Суслина!

Тоня аллипе лейтенанта кăкăрĕнчен, ордĕнран пуçласа çўлелле ачашласа хăпарчĕ те, пичĕ тĕлне çитсен, шывланакан куçĕсемпе пит йăвашшăн пăхса илчĕ.

— Ну, чунӑм! чунӑм!

Тоня ӑна халӑх умӗнчех хытӑ чуптуса илчӗ. Сурансенчен вӑл йӗрӗнмерӗ. Наоборот, ӑна вӑл уйрӑм хаваслӑхпа, халиччен курман ҫӗкленчӗкпе чуптурӗ, мӗншӗн тесен ӑна савнипе пӗрлех Россия суранне чуптунӑн туйӑнчӗ. Хайне хӑй пысӑк кӑмӑллӑ, калама ҫук телейлӗ шутларӗ лейтенант та, мӗншӗн тесен савни кӑмӑлӗ, унӑн ӑшши ӑна халӑх Хӗрлӗ Ҫара парса тӑракан пулашу пек туйӑнчӗ.

Инҫетри Хӗвелтухӑҫ. 1943.

# ЧĂВАШ АЧИНЕ

Чăваш ачи! Илемлĕ тухăç—
Сан савнă çĕршыву, ялу;
Вăл—чĕрӳнти ыр ĕмĕт-шухăш,
Вăл—санăн кулленхи йăлу.

Унта аннӳ сана çуратнă,
Ӳстернĕ шанчăка хурса;
Унта малтанхи хут юратнă
Эс пĕр хĕре, чунна парса.

Çурхи кунра эс акнă тырă,
Шăрăх килсен шăварнă сат.
Хура кĕрте юрланă ыррăн,
Алла сăра курки тытса.

Çуллен çул йăтăнатчĕ çимĕç.
(Хавхаланса ĕçле кăна!)
Анчах юна вĕреннĕ нимĕç
Хураххăн хапсăнчĕ ăна...

Чăваш ачи! Вутра тăратăн,
Сан аллунта хĕрӳ пăшал.
Эс çулăмлă Сталинградăн
Кăвар урамĕнче-и халь;

Е, шухă каччăмăр, хăюллăн
Паян эс лăпкă Дон тăрăх
Юнланнă пăрпа хутăш çулăм
Ялкăштаратăн кăнтăра;

Е, паттăр йĕкĕтĕм, вăр-варрăн
Кĕрен Смоленск сĕм вăрманне,
Хĕртетĕн, шартлама январĕн
Çилли пек, нимĕç сехрине,—

Ăçта пулсан та, саншăн шуçăм
Тухать кăвар пек тухăçран;
Чун-чĕрӳне ăнлан эс, тусăм:
Тăван çĕршывшăн çапăçан!

Эппин, пире ӳстернĕ халăх
Пиллетĕр пирен вăйхала.
Паян, ĕмĕр асăнтармалăх,
Тăшмансене эс хăвала!

Чăваш ачи! Çапăç маттуррăн!
Йывăрлăхра хавассăн тăр,—
Мухтав çинчен хайланă юрă
Чăваш ятне те асăнтăр!

Действующи çар, 1943 ç.

# ПРОЗĂЛЛĂ СĂВĂСЕМ

## I. Лантăш

Чечекĕн чунĕ çук. Ăнланмасть вăл этемĕн хуйхине-суйхине. Ваштăр-ваштăр лăпкă çил кăна хумхатать унăн шухă кăмăлне.

Ак ман умра çурхи шурă лантăш. Анчах унăн ешĕл çулçисем юнпала вараланнă. Кам юнĕ вăл?

Аллăмсем чĕтреççĕ, куçăмсем шывланаççĕ. Лантăш чечекĕ çинчен сывлăм шăпăртатса тăкăнать... Çук, сывлăм мар пуль вăл, этемĕн таса куççулĕ пуль!

Ма йĕретĕн ес, мĕскĕн лантăшăм? Е сана вăхăтсăр вилсе выртнă салтакăн юта тухнă мăшăрĕ шеллĕ-и, е унăн тăлăха тăрса юлнă ачи-пăчисем аса килчĕç-и?

Йĕри-тавра снарядсем ахлатса çурăлаççĕ. Çĕр кисренет. Окопри салтак хăйĕн юлташне юлашки хут ыталаса чуптăвать.

— Сывă пул, тăванăм! Эпир санпала иксĕмĕр сăвапла вилĕме çĕнтерӳ чечекĕ парнелеме васкатпăр!

## II. Пурнăçпа вилĕм

Ватă старик хĕвеланăçĕнчен хĕвелтухăçнелле утнă. Вăл çав тери ывăнса халран кайнă. Пĕкĕрĕлсе тухнă çурăмĕ çинче унăн пир кутамкка çакăнса пынă, сылтăм аллинче чĕрĕ туя пулнă.

Старик нимĕн çулсăр-сукмаксăрах, тӳрех, хир-хир урлă, варсем урлă васкаса утнă, мĕншĕн тесен ăна хыçалтан хăрушă вутлă тăвăл йĕрленĕ. Унăн, ватти çитнĕ пулин те, вилесси килмен.

Акă вăл пĕр юханшыв хĕррине килсе тухрĕ те канма ларчĕ. Кутамккине çурăм çинчен хывса хăй умне салтса хучĕ, анчах унта кăвакарса кайнă çăкăр татăккисĕр пуçне нимĕн те тупаймарĕ. „Ах, пурнăçăм, пурнăç. Ăçта-ши ун пуçламăшне вĕçĕ? пăшăлтатма пуçларĕ старик, ассăн сывласа.—Пайтах çулсем пурăнтăм эп çак çĕр çинче, пайтах йĕрсем йĕрлерĕм, çапах хама пӳрнĕ тертĕмрен тарса ӳкеймерĕм. А халĕ акă ман хамăн кунçулăмсем те вĕçленсе çитесçĕ. Мĕн хăварăп эп хам вилнĕ хыççăн çак хура çĕр çине? Ни мулăм çук манăн, ни ятăм çук..."

Старик тата тепĕр хут йывăррăн сывласа илчĕ. Унтан ун сӳнме пуçланă куçĕсем аллинчи чĕрĕ туя çине ӳксе самант сутă хĕлхемпе çиçсе йăлкăшса çунма пуçларĕç.

Старик аса илчĕ. Аса илчĕ вăл епле кашни çул çуркуннепе чĕрĕ йăмра тураттисене каса-каса йăсе юханшыв хĕррине лартса тухнине, аса илчĕ епле çав йăмра тураттисем ик-виçĕ кунтанах чĕрĕ хунавсем кăларса шуххăн ӳсме пуçланине. Аса илчĕ те çаксене, хăй аллинчи туйине çак юханшывăн хăйăрлă çыранĕ хĕррине лартса хăварас тесе, ура çине тăчĕ. Анчах хĕвел çинче çутă кĕмĕл пек чĕрпĕкленсе выртакан шыв еннелле пĕр утăм тусанах, вăл шартах сиксе юпа пек хытса тăчĕ. Унта, пуçне шыв çинелле усăнтарса, палламан салтак выртнине курчĕ вăл. Салтакăн гимнастерки пĕтĕмпех юнпала вараланса пĕтнĕ. Сулахай аллине вăл вăйсăррăн кăна малалла кăмтарнă, сылтăммине винтовка чăмăртаса тытнă. Мĕскĕн салтак ахăртнех чи юлашки саманчченех пурнăç сыпписене сыпăнтарасшăн кĕрешнĕ пулас.

Старик ун патне çывăхах пырса тăчĕ, суран асапĕпе нĕрсĕрленнĕ пит-куç çине нумайччен тинкĕрсе пăхса тăчĕ, унтан сасартăк кăкăра çурса тухакан сасăпа ăвран кайнă пек çухăрса ячĕ:

—Ой, ывăлăм!–Ой, пурнăçăм!..

Пайтах вăхăтчен старик палламан салтак патĕнчен пăрахса каймасăр асапланса тăчĕ. Вăл темиçе хутчен унăн сивĕнсе кайнă кĕлеткине хăйĕн кăкри çумне ыталаса чăмăртарĕ, юнпа пĕвĕннĕ çӳçĕсене яката-яката майлаштарчĕ, ик-виçе хутчен ăна тутинчех чуптуса илчĕ. Хĕвел анас умĕн çеç старик кăштах лăпланса хăйне хăй алла илчĕ. Çап-çара алăвĕçĕн кăна вăл хăйăр çине шăтăк чаврĕ те палламан салтакăн ӳтне çав шăтăка вырнаçтарса хăйăрпа витсе хучĕ. Унтан салтакăн винтовкине алла илсе хăйĕн чĕрĕ туйине масар çине чиксе лартрĕ:

— Çывăр лăпкă ыйхупа, ятсăр ывăлăм. Эсĕ хăвăн пархатарлă пурнăçна çапăçу хирĕнче вĕçлерен, а эпĕ вăл пурнăçа тавăру çиллипе чечеклесе илемлетĕп. Юншăн—юн, вилĕмшĕн—вилĕм!

Старик çирĕп утăмсемпе малалла утса кайрĕ. Анчах та вăл хĕвелтухăçнелле мар, хĕвеланăçнелле çул тытрĕ.

## III. Шăпчăк

Ку вырăнта чечекленсе чие пахчи ӳсетчĕ, чие пахчинче кашни каç, кашни ир шăпчăк юрă шăрататчĕ.

Хавасланса тухатчĕ çамрăк хĕр пахчана, лăпкă кӳлĕ хĕррине, шăпчăк юррине итлеме.

Анчах хура инкек килсе çапăнчĕ кĕтмен самантран. Хаяр аслати кĕрлерĕ те çĕр çурăлса вут тухрĕ. Тĕнче тӳпинчен çĕр çине вутлă сăнасем çума пуçларĕç.

Кĕвви татăлчĕ пахчари сарă кайăкăн, урăх илтеймерĕ çамрăк хĕр унăн илемлĕ юррине. Вара вăл алла ашшĕ пăшалне илсе хаяррăн çапла тупа туса çăмах пачĕ:

— Тавăрăп! Хамшăн та, пурнăçшăн та, шăпчăкшăн та тавăрăп!

## IV. Пĕчĕкçĕ хĕрача

Полустанкăра поезд çур минут кăна тăрать. Эпир хĕвелапăçнелле каятпăр. Кашнин çинчех—хĕвелпе тĕссĕрленнĕ шупка гимнастеркăсем, пуçсем çинче—çăлтăрлă шлемсем.

Чугун çулĕ хĕрринче палламан хĕрарăм ларать. Ун умĕнче çӳçе хуллинчен авса тунă пысăк корзинка, корзинкинче—туптулли самай кăна пиçсе çитнĕ хăмла çырли. Тĕссĕр гимнастеркăллă этемсем вакунсем çинчен васкавлăн сике-сике анса хĕрарăм патне чупаççĕ. Вăл вĕсене кашнинех пĕрер-икшер стакан хăмла çырли тултара-тултара парать.

Эпĕ те салтаках, анчах ман пĕр пус та укçа-тенкĕм çук.

Хĕрарăм ăна-кăна пăхмасть, тулли стакана ман еннелле те çавăн пек ăшă кăмăллăнах сĕнет:

— Ме, юлташ, ак ку сана. Тутанса пăх колхозăн ырлăхне!

Поезд вăрăммăн кăшкăртса ячĕ. Шупка гимнастеркăллă этемсем вакунсем еннелле чупрĕç. Манăн хамăн та пĕрешкелех васкамаллаччĕ те шутпа, анчах шăп та шай çак самантра таçтан тĕмсем хыçĕнчен пĕчĕкçĕ-пĕчĕкçĕ хĕрача чупса тухрĕ. Тĕрексĕр аллисемпе хăй тулли стакан хăмла çырли йăтнă. Мана курсанах пĕчĕкçĕ хĕрача хавасланса ӳксе ик аллине те малалла кăнтарчĕ те савăнăçлăн кăшкăрса ячĕ:

— Папа! Па-пăчкă!

Манăн çав пĕчĕкçĕ хĕрачана алла илсе кăкăрăм çумне чăмăртассăм килчĕ, анчах вакун буферĕсем васкавлăн чăнкăртатса илчĕç те манăн поезд çине ларма васкаса чупмалла пулчĕ.

Вакун картлашки çине улăхса тăрсан каялла çаврăнса пăхрăм та эпĕ çакна куртăм: пĕчĕкçĕ хĕрача ман хыçăмран пĕр кана вĕтеленсе чупнă хыççăн сасартăк такăнса ӳкрĕ. Такăнса ӳкрĕ те, çырлине тăкса ячĕ.

— Папа! Ан кай! Па-пăчкă!—илтĕнчĕ унăн çепĕç сасси.

— Ан йĕр, хĕрĕм, ан йĕр,—тесе кăшкăртăм эп ăна хирĕç.—Папă таврăнĕ, папă часах таврăнĕ!

# ЧӐВАШ ХАЛӐХӖН МУХТАВЛӐ ЫВӐЛӖСЕМ

Симӗс сад пек ешӗретчӗ пирӗн ҫӗршыв—аслӑ Совет Союзӗ. Тулли пурнӑҫпа пурӑнатчӗҫ аслӑ совет ҫемьинчи халӑхсем—вырӑссем, украинецсем, белоруссем, грузинсем, армянсем, узбексем, казахсем, тутарсем, чӑвашсем. Аслӑ Октябрь тивлетне пула пурте пӗр тан правалла пулса тӑнӑскерсем, вӗсем хӑйсен аслӑ пиччӗшӗ—вырӑс халӑхӗ ертсе пынипе алла-аллӑн тытӑнса ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑватчӗҫ.

Пирӗн ҫӗршыври мӗнпур халӑхсен пархатарлӑ ӗҫне пула чӗрӗк ӗмӗр хушшинче социализмӑн чаплӑ ҫурчӗ ӳссе ҫитӗнчӗ. Ку ҫуртра пурте пӗр тӑван, пӗр пек телейлӗ. Совет ҫӗршывӗнчи халӑхсене сталинла туслӑх пӗрлештерсе тӑрать. Вӗсем пӗр-пӗрин нациллӗ культурине хисеплеҫҫӗ, пӗр-пӗрне хуҫалӑх енчен те, политикӑпа ҫар енчен те пулӑшса тӑраҫҫӗ. Вӗсем ӗҫре те, кӗрешӳре те, уявра та пӗрле.

Пурнӑҫ илемлӗрен те илемлӗрех пулса пыратчӗ, пирӗн тӳпере Сталинла Конституци хӗвелӗ ҫутӑран та ҫутӑрах ҫутататчӗ. Анчах совет халӑхӗн мирлӗ пурнӑҫне ирсӗр тӑшман—нимӗҫ фашизмӗ килсе пӑсрӗ, пирӗн ҫӗре вӑрӑ-хурахла тапӑнса кӗрсе, вӑл чечекленекен ялсемпе хуласене ҫунтарма, пирӗн ҫынсене асаплантарма, вӗлерме тытӑнчӗ.

Европӑри нумай халӑхсене ҫаратса урса кайнӑ тӑшман ку вӑрҫӑра ҫав тери усал ӗмӗт тытать. Вӑл пирӗн халӑх аслӑ Октябрь революцийӗ пулнӑранпа ҫирӗмпилӗк ҫул хушшинче тунӑ мӗнпур ҫитӗнӳсене пӗтерсе тӑкасшӑн, пирӗн халӑх тарпа тата юнпа тунӑ мӗнпур пурлӑха хӑй аллине ҫавӑрса илесшӗн, пирӗн ҫӗршыври халӑхсене пурне те нимӗҫ помещикӗсемпе баронӗсен чурисем туса хурасшӑн.

Фашистла вӑрӑ-хурахсем пире пӗрре ҫапсах ӑнтӑхтарса ярасшӑнччӗ, аҫа-ҫиҫӗм пек килсе ҫапса ҫӗмӗрсе тӑкасшӑнччӗ. Вӗсем Совет Союзӗнчи халӑхсене пӗр-пӗринпе хирӗҫтерсе, вӑрҫтарса яма, ҫапла майпа пирӗн ҫӗршыва хавшатма, пирӗн ҫӗршыври халӑхсене пӗрерӗн-пӗрерӗн ҫӗмӗрсе тӑкма ӗмӗтленнӗ. Анчах ӗҫ пӗрре те фашистсем ӗмӗтленнӗ пек пулмарӗ. Нимӗҫ бандичӗсен халиччен тӗнче курман авантюри ҫине совет халӑхӗ отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑпа ответлерӗ, аслӑ Сталин чӗннӗ тӑрӑх Совет Союзӗнчи пур халӑхсем те хӑйсен тӑван ҫӗршывне кӑкӑрпа хӳтӗлеме ҫӗкленчӗҫ. Вырӑсӗ, чӑвашӗ, тутарӗ, узбекӗ, грузинӗ—пур халӑхсем те хӑйсен чи лайӑх ывӑлӗсене фронта, ирсӗр тӑшманпа кӗрешме ячӗҫ, вӗсене сӗмсӗр тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкса ха-

мăр çĕршывран кăларса ывăтма приказ пачĕç. Хĕрлĕ Çар воинĕсем тăван çĕршыв приказне чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Хаяр çапăçусенче вĕсем тăшман çарĕн чĕрĕ вăйне, техникине йышлăн пĕтереççĕ, гитлерла вăрă-хурахсене кунсеренех хĕвеланăçнелле хăвалаççĕ. Хĕрлĕ Çар нимĕç оккупанчĕсене нумай хутчен питех те вăйлăн пыра-пыра çапрĕ, нумай пысăк хуласене, облăçсене тăшманран каялла туртса илсе яланлăхах ирĕке кăларчĕ. Хĕрлĕ Çар воинĕ хĕвеланăçнелле тунă кашни утăм пирĕн татăклă çĕнтерӳ кунне çывхартать. Пирĕн халăх умри çĕнтерĕве лайăх курса тăрать, çавăнпа вăл çак чаплă çĕнтерӳшĕн нимĕне те шеллемест.

Пирĕн воинсем отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче тăшмана хирĕç хăйсен пурнăçне шеллемесĕр, тĕлĕнмелле паттăрлăх кăтартса çапăçаççĕ. Кун пек паттăрлăха истори халиччен нихăçан та курман. Ку паттăрлăх вăл—массăллă паттăрлăх. Отечественнăй вăрçăра кашни кунах çĕнĕрен те çĕнĕ геройсем палăраççĕ, вĕсен ячĕсем пирĕн çĕршыв историне, мухтавлă Хĕрлĕ Çар историне ĕмĕрлĕх ятсĕм пулса кĕрсе юлĕç.

Пĕтĕм çĕршыв пĕлсе тăракан мухтавлă геройсем хушшинче чăваш халăхĕн ывăлĕсем те сахал мар. Вĕсен паттăр ĕçĕсемпе чăваш халăхĕ чăннипех те мухтанма пултарать. Пирĕн халăх хăйĕн паттăр ăмăрткайăкне—лётчик Федот Никитич Орлова лайăх пĕлсе тăрать. Федот Никитич Орлов совет влаçĕ пăхса ӳстернĕ чаплă лётчиксенчен пĕри, халăх геройĕсенчен пĕри пулса тăрать. Кун çинчен Орлов юлташ хăй лайăх калать.

„Пуçран пĕр шухăш нихăçан та тухма пĕлмест. Çав шухăш вăл боевой заданисене пурнăçа кĕртсе килнĕ хыççăн кăшт сывлăш çавăрнă чухне те, сывлăшра тăвата моторлă хăватлă караппа вĕçсе пынă чухне те, ку çеç те мар, чи йывăр самантсем килсе тухнă чухне те хĕлхем пек çиçсе илет:—кам, мĕн пулнă пулăттăм-ши эпĕ революци, совет влаçĕ пулман пулсан?—тетĕп вара хама-хам. Мана совет влаçĕ кăна ăмăрткайăкăннисчен те хăватлăрах çунатсем пачĕ-çке-ха. Шухăшлатăп та, куç умне иртнĕ кунсем килсе тухаççĕ“.

Кам пулнă ĕлĕк, Октябрь революци пулаччен, Федот Орлов? Тăлăх ача, кĕтӳç. Вăл хăйсен таврашĕнчи ялсенчи, халь Советски района кĕрекен Чаканарсенче, Кăмашасенче, Мăн Вылăсенче, Анат Сăнарпа Улăх-кассисенче ыйткаласа çӳренĕ. Вăл пĕтĕм ĕмĕрне çапла мăшкăлпа асаплăхра ирттеретĕп пулĕ тенĕ. Анчах Октябрь революцийĕ Федот Орлов пек çынсен пурнăçне пĕтĕмпех улăштарчĕ, вĕсене хăйсен пурнăçĕн хуçи, хăйсен тăван çĕршывĕн хуçи туса хучĕ.

Акă халь Федот Орлов—Хĕрлĕ Çар командирĕ, лётчик, Совет Союзĕн Геройĕ. Вăл ултă тĕрлĕ самолетпа вĕçме пултарать. Вăл сывлăшра пурĕ 500 пин çухрăм ытла вĕçсе çӳренĕ.

„Эпĕ самолётпа 8 çул хушши вĕçетĕп,—тет Орлов юлташ.— Çак сакăр çул хушшинче нумай курмалла пулчĕ. Тăван çĕршыва сĕмсĕррĕн хапсăнакан тăшмансемпе Хасанта, Халхин—Голра çапăçма тӳрĕ килчĕ. Белофинсемпе те вăрçрăм, Эстонире, Лат-

вире, Литвара, Бессарабире пултăм. Хăш чухне шутласа ларсан, хăвăнтан ху тĕлĕнетĕн. Пĕтĕм Кавказа урлă та пирлĕ вĕççе касрăм, Хура тинĕсрен пуçласа Мурманск патне çитиччен кашни яла тенĕ пекех паллатăп. Байкал кӳлли урлă, Вăтам Ази урлă, Ташкентăн-мĕнĕн талккишĕпех вĕççе тухрăм. Памирăн шурă пĕлĕтрен те çӳле каякан хысакĕ урлă темиçе хутчен те вĕççе касма тӳрĕ килчĕ. Тинĕсрен пуçласа тинĕсе çитиччен выртать манăн çул—чăваш ачин çулĕ. Кара-Кум пушхирĕнче, нихăçан та çын пулман çĕрте пултăм эпĕ—чăваш ачи".

Халĕ Федот Орлов тăватă моторлă самолётпа вĕçет. Унăн командирĕ тата учителĕ капитан Гастелло пулнă. Командовани урăх назначени парсан, Гастелло самолётне хăйĕн чи çывăх тусне—Федот Орлова парса хăварнă. Вăлах Гастелло вырăнне отряд командирĕ те пулса тăнă.

Орлов хăйĕн учительне çав тери ăшă кăмăлпа аса илет, вилĕмсĕр герой ячĕпе тăшмана пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерме тупа тăвать. Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа Орлов хăйĕн отрячĕпе фашистсем çине темиçе çĕр тонна бомба пăрахнă, тăшманăнне 92 самолёт, темиçе теçетке автомашина, паровоз, вагон пĕтерсе тăкнă.

— Эпĕ хам сывлăш карапĕпе 144 боевой вăçев тунă,—тет Орлов,—144 хутĕнче те епĕ çĕрле вĕçнĕ. Кăнтăрла вĕçме маншăн пулсан нимĕн те мар. Çĕрле вĕçме йывăр. Нимĕн те курăнмасть. Çапах та сан тĕттĕмре тăшман йăвине шыраса тупас пулать. Çĕрле вĕçме пур лётчик та пултараймасть. Ятарласа вĕренес пулать. Каçхине кайăк та вĕçмест,—пултараймасть, лётчиксем вĕçеççĕ.

Герой хăй çĕрле мĕнле вĕçни çинчен темиçе тĕслĕх илсе парать.

— Çапла мана пĕр аэродрома бомбăсем пăрахса аркатма задани пачĕç. Эпĕ хамăн карапăмпа çĕрле вĕççе кайрăм. Фашистсен аэродромĕ патне çитнĕ чухне мана 9 прожектор хĕссе илчĕ. Куçа вăйлă çутă касать, приборсем çине пăхма та çук. Анчах эпĕ тытнă çултан пăрăнмастăп, тӳрех аэродром тĕлне вĕççе пытăм. Ман йĕри-тавра çутатакан пульăсем çиçеççĕ, вĕсем пурте ман ӳте шыраççĕ. Çывăхрах снарядсем çурăла-çурăла каяççĕ. Хама моторсем ĕçлени те илтĕнмест. Манăн экипаж çĕрелле бомбăсем тăкать, тупăпа, пулеметпа перет. Аялта пушарсем хыпса илчĕç—фашистсен самолĕчĕсем çунаççĕ. Анчах пĕр снаряд ман карапăн пĕр моторне тӳрех лекрĕ те, мотор ĕçлеми пулчĕ. Çав вăхăтрах тата пульăсем икĕ ура хушшипе штурвал çумĕнченех тухса кайрĕç. Ман реглан (пальто) витĕр шăтарса тухрĕç, анчах хама сĕртĕнмерĕç. Самолёт пĕр моторĕ пăсăлнă пирки аялалла анма тытăнчĕ. Теменле йывăр пулсан та, эпĕ хамăр еннеллех таврăнма тăрăшрăм. Çапах та хамăр аэродрома вĕççе çитеймерĕм. Фронт линийĕнчен 8 километр хамăр енне каçса, хамăн аманнă карапăма çĕрле, нимĕн çĕмĕрмесĕр, уйваррине антарса лартрăм. Самолёта юсаса çак вырăнта пĕр талăк ытла ĕçлемелле пулчĕ. Нимĕçсем хайхи çавна сиссе тупăпа

пеме пуçларĕç. Темĕнле хытă печĕç пулсан та, çавах машинăна юсаса çитерсе хамăрăн аэродрома вĕçсе кайрăм.

Çак каçхине эпир ташманăнне 7 самолётне çунтарса янă.

Акă тата тепĕр тĕслĕх, 1941-мĕш çул, декабрь уйăхĕ. Н. хулинче нимĕç офицерĕсем раштав тума шутланă. Çав майпа вĕсем культура дворецне пуçтарăнса банкет тума тытăннă. Паллах, вĕсен ĕçмелли те, çимелли те çителĕклĕ пулнă. Офицерсем вĕт! Вĕсен сĕтелĕ çинче пĕр япала кăна çитмен, вырăссен „тăварланă хăярĕ" пулман. Банкет çинчен пире партизансем систерчĕç. Эпĕ хамăн „хăярсене" çакрăм та вĕçсе кайрăм хайхи. Тивĕçлĕ çурта часах шыраса тупрăм. Палланă хула-çке-ха! Офицерсем ĕçнĕ, шавланă пулмалла. Эпĕ çав çуртăн тимĕр çийĕ витĕр офицерсен раштав сĕтелĕ çине „хăярсем" тăкма тытăнтăм.

— Мейĕр, çийĕр!

Паллах, çуртран нимĕн те юлман. Çав каçхине вара, партизансем каласа панă тăрăх, эпĕ 132 офицера леш тĕнчене ăсатнă".

Хăшпĕр каçсенче пирĕн земляк виçшер, тăватшар боевой вĕçев туса ирттернĕ. Яланах вăл тăшмана тĕл пенĕ, фашистла ирсĕрсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтернĕ. Вĕçеве тухса кайсан вăл нихçан та боевой задание пурнăçламасăр, çурма çултан каялла таврăнман.

— Юрататăп эпĕ тăван çĕршыва, хамăрăн чăваш халăхне, хам çуралнă яла, мана вĕрентнĕ учительсене, пĕрле вĕреннĕ юлташсене. Пĕтĕм чун-чĕререн юрататăп эпĕ совет влаçне, Сталинла Конституцие, Сталин аттене! Тăван çĕршыва никама ат памăп, Гастелло ячĕпе тупа тăватăп. Чăваш халăхĕн маншăн хĕрелмелле пулмĕ,—тет Федот Никитич.

Улатăр районĕнчи „Красный луч" колхоз членĕ Андрей Михайлович Сарсков хăй перекетлесе тупнă 100 пин тенкĕ укçине Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов валли боевой самолет тума пани çинчен пĕлтерсен, Орлов ăна чĕререн тав туса çыру янă. Ку çыру сăмахĕсем тупа тунă чухне калакан сăмахсем пек янăраççĕ:

„Хаклă Андрей Михайлович, сирĕн аллăра хытă чăмăртатăп тата сире тăван аттене сăмах панă пек сăмах паратăп—эсир перекетлесе пухса панă укçапа тунă боевой самолётпа куçсем çĕре курми пуличченех, алсем штурвала тытма пăрахиччченех вĕçĕп. Этем кĕлеткипе çӳрекен нимĕç тискер кайăкĕсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерĕп, гитлерла вăрă-хурахсен пуçĕсем çине вĕсене тĕп тăвиччченех вĕçĕмсĕр бомбăсем пăрахăп, пулемётсенчен тупăсенчен перĕп. Хамăн халăх телейĕшĕн, пирĕн хаклă тăван, çĕршыва малашне те ччек ленмелле тăвассишĕн, юратнă Сталин аттешĕн эпĕ хамăн пурнеăçа та шеллес çук".

Пирĕн республикăри ĕççыннисем çакăн пекех пирĕн земляк лётчик-истребитель Борис Михайлович Васильевăн чаплă ĕçĕсене те лайăх пĕлеççĕ. Ун эскадрильи пурĕ 375 боевой вĕçев тунă. Ку боевой вĕçевсем вăхăтĕнче эскадрилья тата лётчик-истребитель Васильев юлташ нумай паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнă. Хăйĕн примерĕпе хавхалантарса, Васильев хăйĕн юлташĕсене

пĕрре кăна мар тăшман аэродромĕсене аркатма, фашистсен колоннисене вилĕм кӳрекен вутпа çунтарма ертсе кайнă.

1941-мĕш çулхи сентябрĕн 8-мĕшĕнче вăл пĕр звенопа тăшманăн Днепр урлă каçмалли пĕр вырăнне бомбăсем пăрахма кайнă. Бомбăсене тĕл пăрахса Васильев фашистсен пысăк бензоскладне çунтарса янă, 13 стационарлă бензин бакне бензинĕмĕнĕпех пĕтерсе тăкнă. Бомбăсем пăрахнă вырăнта çав тери вăйлă пушар тухнă, ун çути 50 километртанах курăннă. Операци вăхăтĕнче тăшман зенитнăй артиллерийĕ питех те вăйлă ĕçленĕ. Вăл Васильев самолётне темиçе çĕртен лектернĕ. Анчах лётчик маçтăрлăхĕ машинăна çăлса хăварнă, самолёт хăйĕн аэродромне çитсе ларнă.

Тата пилĕк кунтан Васильев ку вырăна тепĕр хут кайса килнĕ, тăшманăн Днепр урлă тунă кĕперне йăлтах аркатса тăкнă. Сентябрĕн 14-мĕшĕнче вăл пĕр станци çывăхĕнчи тăшман аэродромĕ çине бомбăсем пăрахса фашистсен 7 самолётне пĕтерсе тăкнă. Ăна хирĕç çывăхран фашистсен икĕ истребителĕ çĕкленнĕ. Анчах совет лётчикĕ вĕсене хирĕç хăюллăн ыткăннине курсан, вĕсем иккĕшĕ те çапăçава кĕмесĕрех каялла тарнă.

Борис Михайлович Васильев Чăваш республикинчи Советски районра çуралса ӳснĕ. Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа нумай фронтсенче пулса, вăл тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене нумай çынна пĕтернĕ, тăшманăн çар техникине те питĕ нумай аркатнă. Гитлеровецсемпе çапăçнă çĕрте паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн правительство ăна Совет Союз Геройĕн званине панă.

Тăшмана кунĕн-çĕрĕн, çĕр çинче те, сывлăшра та пĕтерекенсем хушшинче чăваш халăхĕн тепĕр мухтавлă ывăлĕ Совет Союзĕн Геройĕ Мирон Ефимович Ефимов пур. Унăн штурмовикĕ фашистсен пуçĕ тăрринчен çиçĕм пек вĕçсе иртет, вĕсем çине вĕçĕмсĕр вут-хĕм тăкать. Вăл фашистсене вĕсен тискер ĕçĕсемшĕн мĕнле тавăрнине çак цифрăсем лайăх кăтартса параççĕ: вăл аэродромсем çинче тăшманăнне 17 самолет çунтарса янă, 12 танк, 200 ытла автомашина, 100 ытла лав пĕтерсе тăкнă, фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 ытла вĕлернĕ.

...Танксем çапăçава кайма хатĕр тăраççĕ. Кашни хурçă машинăн экипажĕ приказ пуласса çеç кĕтет. Танксем патне çӳлĕ пӳ-силлĕ яштак çын пырса тăрать. Ку вăл—танк соединенин командире Вячеслав Петрович Винокуров. Вăл малти машина патне майлăрах вырнаçса ларать те хăй çуралса ӳснĕ хулана—Шупашкара çыру çырать.

„Эсир эпĕ белофинсемпе çапăçнă чухне аманнă хыççăн ман сурансем тӳрленсе çитменни çинчен çыратăр. Анчах ирсĕр тăшман килсе тапăнса тăван çĕршыва суран кӳнĕ хыççăн епле-ха эпĕ хам сурансем çинчен шухăшлама пултаратăп?"—тет вăл.

Танксем вырăнтан тапранаççĕ. Совет Союзĕн Геройĕ подполковник Винокуров ертсе пынипе вĕсем çапăçу хирнелле тухаççĕ.

Танксен Винокуров командир пулса тăракан соединенийĕ нумай хутчен хĕрӳллĕ çапăçура пулнă. Кашни çапăçурах танкистсем хăйсен командирĕ пек геройла кĕрешнĕ, халĕ те геройла кĕрешеççĕ.

Паттăр миномётчик Геннадий Габайдулин вăрçăччен Горькири автозаводра моторист пулса ĕçленĕ. Ку завода вăл 1934-мĕш çулта Комсомольск районĕнчи Тукай Мишер ялĕнчен пынă. Часах вăл заводра икĕ професси илнĕ: шофер тата моторист пулса тăнă.

Отечественнăй вăрçă пуçлансанах Геннадий Габайдулин хăйне часрах фронта ирсĕр тăшманпа çапăçма яма заявлени парать. Хĕрлĕ Çарта ăна минометчик пулма вĕрентеççĕ. Вăл хăйне шанса панă хĕçпăшала лайăх вĕренсе çитет, часах унпа çапăçава кĕрет.

1941-мĕш çулхи хĕлле вăл Мускава хӳтĕлет. Мускав патĕнче вăл ирсĕр фашистсем çунтарса пĕтернĕ ялсемпе хуласенче пулса курать. Тăшманăн мĕнпур тискерлĕхне хăйĕн куçĕпе курнă хыççăн тăшмана тата вăйлăн тавăрма тытăнать. Вăл темле йывăр лару-тăрура та çухалса каймасть, тĕрĕс решени йышăнма пĕлет, тăшмана штыкпа та, гранатăпа та, хăйĕн миномĕчĕпе те пĕр хĕрхенӳсĕр пĕтерсе пырать.

Пĕррехинче Р. хули патĕнче вăл тăракан подразделение тăшмансем хупăрласа илеççĕ. Анчах совет воинĕсенчен никам та хăраса ӳкмест. Хупăрласа илнĕ çĕртен çăлăнса тухас тесе подразделени хăйĕнчен темиçе хут вăйлă тăшманпа çапăçма пуçлать.

Габайдулин разведчик пулса тăрать. Ăна тăшман вырнаçса тăракан çĕре ун вăйне пĕлме яраççĕ. Февраль сиввисем тăнă. 6 боец илсе, Габайдулин разведкăна тухса каять. Вăрманта вĕсем тăвата нимĕç салтакне тĕл пулаççĕ. Вĕсене пĕтерсе тăкса, разведчиксем малалла утаççĕ. Нимĕçсем разведчиксене курса вĕсем еннелле миномётсенчен пеме тытăннă. Разведчиксем хирĕç пеме пуçланă. Вĕсем паттăррăн çапăçнă, анчах вĕсем сахаллансах пынă. Юлашкинчен Габайдулин йышлă тăшмана хирĕç пĕчченех тăрса юлнă. Ун патне 40 фашиста яхăн çывхарса пынă. Габайдулин вĕсене автоматран тĕл персе çула-çула тăкнă. Часах 40 фашистран умра 4 нимĕç салтакĕ çеç тăрса юлнă. Анчах Габайдулин та аманнă. Инкеке тата унăн патронсем те пĕтсе çитнĕ. Гитлеровецсем ун патне çывхарсах пынă. Габайдулин çав хушăра пулемёт патне шуса çитсе унтан персе нимĕç салтакĕсене пурне те пĕтерсе тăкнă. Хĕрсе çапăçнă май вăл хăйĕн патне хыçалтан вăрттăн нимĕç офицерĕ пырса тăнине те сисмен. Вăл çаврăнса пăхнă та хăйĕнчен икĕ утăмра офицер ун çине пистолетне тĕллесе тăнине курах кайнă.

— Рус, сдавайся!—тенĕ вăл. Габайдулин офицертан маларах персе янă. Çав вăхăтрах, халтан кайса çитнĕскер, хăй те персе аннă. Часах паттăр разведчиксем çапăçнă тĕле пирĕн боецсем пырса çитнĕ, вĕсем Габайдулина тупса хăйсемпе пĕрле илсе кайнă. Ун хыççăн совет воинĕсем тăшман хупăрласа илнĕ çĕртен çĕмĕрсе тухса хамăрăн тĕп вăйсемпе пĕрлешнĕ.

Нимӗҫсемпе кӗрешнӗ ҫӗрте командованин заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫланӑшӑн тата вӗсене пурнӑҫланӑ чух паттӑрлӑхпа хӑюлӑх кӑтартнӑшӑн пирӗн земляк Геннадий Габайдулина Совет Союз Геройӗн ятне панӑ.

1942-мӗш ҫулхи сентябрӗн 30-мӗшӗнче нимӗҫсен „Великая Германия" дивизийӗнчи пӗр батальон танксем пулӑшса пынипе пирӗн земляк комсомолец Иван Банбурин тӑракан часть патне ҫӗмӗрсе кӗнӗ. Пирӗн боецсем пурте пӗр ҫын пек тӑшман ҫине ыткӑннӑ.

Ефрейтор-телефонист Иван Банбурин, окопа вырнаҫса ларнӑ та, хӑйӗн винтовкипе нимӗҫсем ҫинелле тӗлле-тӗлле пенӗ. Нимӗҫсем ун ҫине йышлӑн тапӑнса пынӑ, телефониста чӗррӗн алла илес тесе окопа йӗри-тавра хупӑрлама тӑрӑшнӑ. Герой вӗҫӗмсӗр пенӗ. Анчах ун патронсем пӗтсе ҫитнӗ. Фашистсен оберлейтенанчӗ, Банбуринӑн пеме патронсем ҫуккине курса, ура ҫине тӑнӑ та ӑна парӑн тесе кӑшкӑрнӑ.

— Ҫук, чӗррӗн илейместӗн!—тенӗ паттӑр телефонист. Унтан вӑл штыкпа кӗрешме сиксе тӑнӑ. Штыкпа ҫапӑҫма ӑста пӗлекенскер, вӑл офицера ҫавӑнтах чиксе пӑрахнӑ.

Пирӗн боецсемпе командирсем вӑйлӑн хирӗҫ тӑнине тӳсеймесӗр тӑшман каялла чакнӑ. Вӗсем пӑрахса хӑварнӑ ручной пулемӗта илсе ефрейтор Банбурин, Шуваев кӗҫӗн сержантпа пӗрле, таракан нимӗҫсене хыҫалтан пенӗ. Ҫапла вӗсем тата вунӑ гитлеровеца яхӑн пӗтерсе тӑкнӑ.

Ҫак ҫапӑҫура Банбурин хӑйӗн винтовкипе тата штыкпа 20 нимӗҫ салтакне, пӗр офицера вӗлернӗ.

Ҫапӑҫу чарӑнас умӗн ҫыхӑну линийӗ пӑсӑлнӑ пулнӑ. Тупӑсем тата миномӗтсем вӗҫӗмсӗр персе тӑнине пӑхмасӑр, Банбурин 20 минута хушшинче ҫухрӑм ҫурӑ тӑршшӗ линие юсанӑ, 7 тӗлте татӑлнӑ кабеле сыпса хӑварнӑ.

Банбурин тӑракан часть политотделӗ ун паттӑр ӗҫне ырласа ятарласа листовка кӑларнӑ. Ку листовка „Чӑваш халӑх геройне чыс та мухтав" ятлӑ.

„Унӑн паттӑрлӑхӗпе тата хӑюлӑхӗпе пирӗн чаҫри пур боецсем те, пур командирсемпе политработниксем те мухтанаҫҫӗ,— тенӗ листовкӑра.—Унӑн геройла ӗҫӗ кашни совет воинӗшӗн пример пулса тӑмалла. Боецсем! Фашистла путсӗрсене Иван Банбурин пек пӗтерсе пырӑр!"

Хӗрлӗ Ҫарӑн чапла снайперӗсем хушшинче эпир хамӑрӑн мухтавлӑ земляксене, Родион Давыдовпа Захар Востриков пек ӑста снайперсене куратпӑр. Родион Давыдов 355 нимӗҫе вӗлернӗ. Унӑн кӑкӑрӗ ҫинче Ленин Орденӗ тата „За боевые заслуги" медаль йӑлкӑшать. Захар Востриков 64 гитлеровеца леш тӗнчене ӑсатнӑ. Правительство ӑна Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗ парса наградӑланӑ.

Артиллерире пирӗн капитан Федор Васильевич Семенов пек ӑста артиллеристсем пур. Семенов юлташ отечественнӑй вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа нумай ҫапӑҫусенче пулнӑ. Вӑл Севастопольпе Ростова хӳтӗленӗ, Сталинградшӑн кӑкӑрпа тӑрса ҫапӑҫнӑ. Ун

дивизионĕ тăшманăнне кĕске вăхăт хушшинчех 70 танк, 90 бронемашина, темиçе çĕр салтакпа офицер пĕтерсе тăкнă. Правительство Семенов юлташа Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă.

Фронтра çавăн пекех пулеметнăй подразделени командирĕ, вăрçăччен Улатăрта слесарь пулса ĕçленĕ Виталий Александрович Уруков та тĕлĕнмелле паттăрлăхпа хăюлăх кăтартса çапăçать. 1941-мĕш çулхи октябрьте вăл Мускава хÿтĕленĕ, нимĕçсене Ржев патĕнче вăйлă çĕмĕрнĕ. Пĕр çапăçура ун подразделенийĕнчи боецсем халăх пурăнакан тăватă пункта йышăнăм илнĕ, 150 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Виталий Уруков хăй чăн-чăн пример парса çапăçнă. Пулемĕт расчĕтĕнчи çынсем амансан, вăл пулемĕтне хăй аллине илнĕ те фрицсене вилĕ вучĕпе çулма тытăннă. Вăл хăй те аманнă, анчах çапăçу пĕтиччен, нимĕçсене аркатса тăкиччен боецсене пăрахса кайман.

Тăван çĕршыв паттăр командир ĕçĕсене пысăк хака хурать: ун кăкăрĕ çинче Хĕрлĕ Ялав орденĕ çиçет.

Пирĕн республикăри ĕççыннисем фронтран кашни кунах çĕр шер çыру илсе тăраççĕ. Вăл çырусенче пирĕн боецсем пе командирсем хăйсен тăван çĕршывне вĕçĕмсĕр юратса тăни, фашистла вăрă-хурахсене пĕтĕм чунтан-чĕререн кураймасăр тăни питĕ те лайăх палăрса тăрать.

Пирĕн боецсемпе командирсем çырăвĕсенче тылри тăванĕсене хăйсен паттăр ĕçĕсем çинчен, нимĕçсене мĕнле пĕтерсе пыни çинчен каласа параççĕ. Вĕсем хушшинче пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс çар флочĕн пур тĕрлĕ çар пайĕн представителĕсем те пур. Вĕсем хушшинче орденоносецсем те сахал мар. Пирĕн земляксенчен 1900 çынна ытла правительство СоветСоюзĕн орденĕсемпе медалĕсене панă. Чăваш халăхĕн мухтавлă пилĕк ывăлĕн кăкăрĕсем çинче Совет Союз Геройĕн ылттăн Çăлтăрĕ çиçет.

Пирĕн халăх хăйĕн паттăр воинĕсен кĕрешĕвне тимлĕн сăнаса тăрать. Тылра пĕтĕм вăйран тăрăшса ĕçлесе вăл фронта кунĕн-çĕрĕн кирлĕ çар хатĕрĕ, апат-çимĕçпе тумтир ярса тăрать. Хĕрлĕ Çар воинĕсем тĕрлĕ фронтра çĕнĕрен те çĕнĕ çĕнтерÿсем туни, усал тăшмана пĕр чарăнусăр хĕвеланăçнелле хăваласа пыни тылри боецсене фронтшăн тата тăрăшарах ĕçлеме хавхалантарать.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар валли танксен колоннисем тума 80 миллион тенкĕ ытла укçа пухса панĕç. Вĕсем хăйсен пархатарлă ĕçĕпе халăхсен аслă çулпуçĕнчен ССР Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен Верховный Главнокомандующийĕнчен Сталин юлташран саламлă телеграмма илме тивĕçлĕ пулчĕç, Сталин юлташ пирĕн республикăри ĕççыннисене Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав турĕ. Кун хыççăн пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем, рабочисемпе работницăсем тата служащисем фронта тата ытларах пулăшма пуçларĕç.

Хĕрлĕ Çар, фашистла йытă кĕтĕвĕсене çапа-çапа çĕмĕрсе, ăнăçлăн наступлени туса пырать. Вăл нумай хуласемпе ялсене ялан лăхах ирсĕр тăшманран хăтарчĕ. Мĕн кураççĕ-ха пирĕн

воинсем нимĕççен аллинче пулнă ялсемпе хуласенче? Мĕн хăвараççĕ гитлерла çынçиенсем хăйсем хыççăн? Вĕсем хăйсем хыççăн тĕлĕнмелле хăрушă юнлă йĕр хăвараççĕ. Вĕсем вăхăтлăха тытса илнĕ ялсемпе хуласенче чăн-чăн каторга туса хунă. Унта совет çыннисене этем тӳсмелле мар асап кăтартаççĕ. Хĕрлĕ Çар хĕснипе каялла чакнă чухне нимĕççем пĕтĕм япалана ишсе, çĕмĕрсе, çунтарса хăвараççĕ.

Çакна курса совет воинĕсем фашистла пӳтсĕрсене пуриншĕн те тавăрма тупа тăваççĕ. Гитлер чуниллийĕсен аллинче асапланакан ачасемпе ват çынсемшĕн, нимĕççен мăшкăлне тӳсекен хĕрарăмсемшĕн, кĕл пулса юлнă хуласемпе ялсемшĕн—пуриншĕн те!

Совет воинĕн чĕри курайманлăхпа тулнă. Тăшмана чĕререн кураймасăр тăракан совет воинĕ тăван çĕршывшăн юлашки юн тумламĕ юличчен кĕрешме хатĕр.

— Этем еверлĕ нимĕç тискер кайăкĕсене мĕн куççем çĕре курми пуличчен, мĕн алсем штурвала тытайми пуличчен пĕтерсе пырăп,—тет Совет Союзĕн Геройĕ Орлов. Ку вăл Федот Орлов сăмахĕ çеç мар, мĕнпур совет воинĕсен сăмахĕ.

# ХУРКАЙĂКСЕМ

## I

Карти-карти кикак-кикак хуркайăк
Кĕлленнĕ Белгород çинче, çӳлте
Йĕре-йĕре çулне шыранă майăн,
Пăхатăп тĕтĕмленнĕ пĕлĕте.

Вăрçă уйхирĕнчен салам сана
Яратăп, инçетри чăваш çĕршывĕ!
Донец чӳхерĕ манăн сурана,
Хăнасене чӳхетĕр Атăл шывĕ.

Хуркайăксем! Окопăмран тухса,
Салтак, чăваш поэчĕ, эп—Ухсай
Автомата тытса тупа тăватăп:

Тăшман лаши ĕçеймĕ сан шывна,
Итлеймĕ куккукна, хăватлă Атăл,
Кураймĕ нимĕç кусĕ сан хумна!

1943.

## II

Чĕре хытсассăн та, кикак хуркайăк,
Йĕрес килет, сире пăхса илсен.
Эх, ярăнса эсир иртеттĕрччĕ нумайăн,
Шилетчĕçĕ чăпар çунатăрсем.

Анчах шуйттан илесшĕ „Мессершмитт"
Сасартăк пĕлĕт хушшинчен тискеррĕн
Тухса сире пулеметран тĕллерĕ.
Хуркайăксем, сире шеллерĕм пит!

Аманнă тусăрсем, тĕккисене
Тăка-тăка, хура чулсем çине
Йăваннине курса чунран ылхантăм.

Тавăрăпăр! Тăшмансене пĕр май
Çулса хаяррăн кĕрлĕ автоматăм,
Тата çиллеслĕ пулăп эп, Ухсай.

1943.

III

Карти-карти кикак-кикак хуркайăк,
Яка мĕн çулăр симĕс пĕлĕтре
Тархасшăн пулăр хӳхĕм Силпире,
Аннемшĕн юрласа иртсе çеç кайăр.

Кăвар хуплана Белгород çинчен
Эсир пăртакçă каласа хăварăр:
Силпи ачи çӳрет вут ăшĕнче,—
Тесе эсир, хуркайăксем, хыпарлăр!

Ачи аманнă, тейĕр, юхнă юнĕ,
Анчах та, тейĕр, сывă, яштака,
Çĕршывшăн, тейĕр, кăварта та çунĕ.

Тăшман çине тăхлан тăка-тăка
Сире калатăп эп, Силпи чăвашĕ,
Тăрса юлатăп пуç тайса ачашшăн.

1943

IV

Урал ту-чакăлĕ пусланнă вырăн,
Чăнкă çыран, кăштах кăлканлăскер.
Унти тăпра чăвашшăн чаплă, ырă:
Поэт масарĕ, пĕчĕк тĕмеске...

Чăваш ачи хăюллă пултăр!—тенĕ
Мухтавлă Иванов, тăван пичче,
Куççуль тăкса поэма кĕвĕленĕ
Телейсĕр, харсăр геройсем çинчен.

Хуркайăксем! Унтан иртес пулсассăн,
Тăшман çине чăваш пыни çинчен
Пĕлтерĕр, кĕрлесе янравлă саслăн.

Калать сире Ухсай, чăваш салтакĕ.
Сухарипе пĕрле хутаçĕнче—
„Нарспи" поэма та чăваш такмакĕ.

1943.

# ФРОНТРИ ЮМОР

## Тĕлĕнтереймĕн

— Куртăн-и, Джузеппе, мĕнле пысăк бомбардировщик сывлăша çĕкленчĕ?

— Вырăссен-и? Вăл мĕн! Пĕркун пирĕн Неаполь хулинче пĕтĕм авиазавод сывлăша çĕкленчĕ.

(„Боевая красноармейская").

## Ăнмасть

— Ăçта кайма хатĕрлентĕн, Иванов?

— „Чĕлхе" тытма.

— Халь илсе килни мăнле?

— Хăлхасăр.

— Каллех хăлхасăр-и? Ăнмасть иккен сан, Иванов.

— Манăн мар, Гитлерĕн ăнмасть.

(„Патриот Родины").

## Хăшĕ мал еннипе хăшĕ хыçал еннине ăнланма çук

— Ăçталла перетĕн, Фриц?

— Малалла, господин лейтенант.

— Курмастăн-и мĕн, сысна пуçĕ, халь пирĕн мал ен хыçалтине?!

(„Патриот Родины").

## Шута илмен чăрмав

ГИТЛЕР. Сирĕн вырăссем аркатнă дивизийĕре кĕçех ура çине тăрататпăр.

ГЕНЕРАЛ. Анчах мăн дивизири салтаксенчен çурри ытла урасăр тăрса юлнă-çке?

(„В бой за родину").

## Вырăс çанталăкĕ

Совет Информаци бюровĕ Смоленск облаçĕнче „Шартлама сивĕ" ятлă партизансен отрячĕ çӳрени çинчен пĕлтерет.

ГЕНЕРАЛ. Çăва тĕпне, обер-лейтенант! Ара, халь январь уйăхĕ мар-çке, эсир çаплах чĕтретĕр?

ОФИЦЕР. Путсĕр çĕршыв! Пире кунта июнь уйăхĕнче те „Шартлама сивĕ" тинкене кăларать,

(„В бой за родину").

## Шутламасӑрах паллӑ

НИМӖҪ ОФИЦЕРӖ (ватӑ колхозникрен): Сирӗн ялта миҫе партизан?

ВАТӐ КОЛХОЗНИК: Пирӗн ялта, ваше благородие, ватӑр килӗ, ватӑрӑшӗ те пушӑ. Миҫе партизанне хӑвӑр шутласа кӑларӑр.

(„Во славу родины").

## Ҫурхи калаҫу

— Господин обер-лейтенант, ку ҫурҫӗрти ҫырма тепрер эрнерен километра ытла сарӑлса каять, тет.

— Пирӗн салтаксем ишме пӗлеҫҫи? Ишме пӗлмеҫҫӗ пулсан, х алӗрех каялла чакас. Атту вырӑссем хӗсме пуҫласан пурте ш ыва путса вилӗпӗр.

## Пӗр финн салтакӗн юлашки сӑмахӗ

— Финн салтакӗ пуличчен,
Хӑрӑк турат пулас та
Кӗрхи ҫилпе вӗҫсе ӳкес,
Ҫурхи шывпа юхса каяс,
Арман пӗвине пӗвенес,—

тесе каларӗ, тет, пӗр финн салтакӗ хӑйне красноармеец чиксе пӑрахнӑ чух.

## „Паттӑр" салтак

— Вӑрҫӑра пулнӑ-и эс?—тесе ыйтрӗ тет аманнӑ румын салтакӗнчен фельдшер.

— Пулнӑ.

— Большевиксене курни?

— Курман. Эпӗ каяллла ҫаврӑнса пӑхмасӑр тартӑм.

(„За отечество").

## Нимӗҫсем вӑхӑтлӑха тытса илнӗ хулара

— Ури вӑрӑм, куҫӗ чармак...
Урлӑ-пирлӗ уткалать;
Урнӑ йыт пек туллашать,
Вӗрет, сурать, пусмӑрлать,
Кӑтӑкласа вӗлерет.
Лаша кӳлсе ларать те
Ҫӗр ҫӗмӗрсе чуптарать,
Ҫӗр чӗтретсе кӑшкӑрать...

— Эсӗ Н. хулинчи нимӗҫсен бургомистрӗ пирки калатни? Халь лӑпланчӗ вӑл. Ӑна ӗнер партизансем персе пӑрахнӑ.

## Берлин урамӗнче

— Мюллер хушаматлӑ изобретатӗле пытараҫҫӗ.

— Сӗт эрзацне шутласа кӑларма хӑтланаканнине-и?

— Мар, урӑххине. Ку изобретатель ҫӑкӑр эрзацне тупас тӗлӗшпе ӗҫленӗ. Кӑшт ҫеҫ шутласа кӑларайман, тет.

— Вара?

— Вара-и? Кӗтмен ҫӗртен вилсе выртнӑ. Выҫӑпа.

(„За Родину").

## Юмах мар

— Пӗр нимӗç карчӑккипе старикки пурӑннӑ, тет. Вӗсен виçӗ ывӑл пулнӑ, тет.

— Малаллине хамах пӗлетӗп. Пӗр ывӑлне, фронталла килнӗ чух, вырӑс партизанӗсем персе пӑрахнӑ, тет. Иккӗмӗшне пирӗн летчиксем персе ӳкернӗ. Виççӗмӗшне Сталинград патӗнче тыткӑна илнӗ.

## Юлашки кӑмӑл

— Фриц, вырӑс çӗрӗнчен эсӗ тата мӗн илсе каясшӑн?

— Пуçа.

## Вырӑсла вӗренекен

Икӗ салтак калаçса тӑраççӗ:
— Эсӗ мӗн ӗçлетӗн, Вилли?
— Вырӑсла вӗренетӗп.
— Мӗнле сӑмахсем вӗрентӗн?
— Халлӗхе пӗр сӑмах çеç-ха.
— Мӗнле сӑмах вӑл?
— „Сдаюсь".

## Вӑйлӑ средство

(Румыни салтакӗн çырӑвӗнчен)

... тата сана çакна пӗлтеретӗп: вырӑссем пире хирӗç питӗ те асаплантаракан, варвӑрла меслетсемпе усӑ кураççӗ. Вӗсен окопӗсем енчен кашни кунах шарикленӗ какай тата Украина борщӗн шӑрши кӗрет. Çав шӑршпа пирӗн пуçсем çаврӑнаççӗ, сӗлекесем юхса анаççӗ. Çак асапа чӑтса ирттереймесӗр салтаксенчен чылайӗшӗ вырӑссене тыткӑна парӑнаççӗ.

(„Фрунзовец").

## Шӑтӑк пирки

— Каллех блиндаж валли шӑтӑк чаватни?

— Ним тума та çук, господин фельдфебель. Ӗнерхи шӑтӑка Робке капитанпа Гопке обер-лейтенант йышӑнчӗç... Вырӑс мини пырса ӳкрӗ те иккӗшне те хупласа хучӗ.

## Малтанах паллӑ

(Нимӗç салтакӗсен амӑшӗсем хушшинче)

— Эсӗ траур валли хура хӑю илтӗн мар-и? Кам вилнӗ вара сирӗн?

— Халлӗхе никам та вилмен-ха та... Анчах ман Отто ывӑлӑма ӗнер Хӗвелтухӑç фронтне ӑсатнӑ терӗç те...

(„Удар по врагу").

## Нимĕç салтакĕсем хӳшшинче

I

Нимĕç салтакĕ офицертан ыйтать:

— Калăр-ха, господин обер-лейтенант, тата нумайччен тытса тăмалла-и пирĕн ку пункта?

— Фюрер приказĕ тăрăх—пĕр салтак юлмичченех тытса тăрас пулать.

— Апла нумаях кĕтмелле мар иккен.

II.

—Фриц, çитсе курайăпăр-ши эпир хăçан та пулин Мускава? Мускава мар, малашне Берлина çитсе курассине те шанмастăп эпĕ.

III.

Икĕ салтак калаçса тăраççĕ.

— Эсĕ мĕн ĕçлетĕн, Эрнст?

— Хама валли виле шăтăкĕ чаватăп

— Мĕншĕн?

— Капитан хушрĕ. Кĕçех ку вырăнтан чакатпăр, хăвăра валли малтанах позицисем хатĕрлесе хурăр, терĕ.

IV.

### Чи кулăшла анекдот

— Пĕр-пĕр кулăшла анекдот каласа пар-ха, Вилли.

— Чи кулăшлине-и? Эпир çĕнтеретпĕр.

## Ваттисен сăмахĕсем

Паттăр Ăраман—фашистран хăраман.
Вилли вилли—çăхан валли.
Фашист паян полковник, ыран—покойник.
Совет пульли—фашист валли.
Фашист паян ура çинче, ыран—çăва çинче.
Усалăн тирне утмăлăн сĕвеймен пулсан та, пирĕн пĕр снайперах утмăл фашиста пĕтерне, тет.

# ФРОНТРИ ПОЧТĂРАН

*Редăктор юлташ!*

Эпир, инçетри Çурçĕрти пĕр утрав çинче пурăнакан чăвашсем, нумаях пулмасть Шупашкартан чăвашла кĕнекесем илсе вуларăмăр. Вĕсене Действующи флотри моряксем валли 2-мĕш №-лĕ вăтам шкулти вĕренекенсем ярса панă. Çак посылка пире тем пекех савăнтарчĕ, мĕншĕн тесен эпир икĕ çул ытла ĕнтĕ пĕр чăвашла кĕнеке те вуласа курманччĕ.

Эпир илнĕ кĕнекесем хушшинче *„Илемлĕ литература“* альманахăн хăшпĕр номерĕсем те пур. Унта пичетленнĕ произведенисенчен пуринчен ытла пире *П. Хусанкайăн „Таня“* ятлă поэми тата *Л. Агаковăн „Партизан Мурат“* повеçĕ килĕшрĕç. Вĕсем пире тăшмана хурайми пулма, ăна хирĕç тата хаяртараххăн çапăçма вĕрентеççĕ.

Вăл произведенисене эпир каннă вăхăтра хамăр вуласа тухрăмăр, юлташсене те вулама сĕнтĕмĕр.

Пурăнатпăр эпир питĕ инçетри шыв варринче, Пысăк Çĕртен аякра. Çул çӳреме кансĕр пулнă пирки пуштă та вăхăтра килсе тăмасть. Çапах та тăван халăхран эпир уйрăм мар. Çапăçусем кунта та кашни кунах пулса иртеççĕ. Фашистла захватчиксене хирĕç вырăс, тутар, грузин, армян халăхĕсемпе пĕрле чăваш халăхĕн ывăлĕсем те паттăррăн çапăçаççĕ.

Редактор юлташ! Пирĕн пата кĕнекесем ярса парса пире чăваш литературин юлашки вăхăтри хăшпĕр произведенийĕсемпе паллаштарнăшăн Шупашкарти 2-мĕш №-лĕ вăтам шкулти вĕренекенсене пирĕн ятпа тав тума ыйтатпăр.

Действующи флот

*М. Назаров,*
*Шильдяков.*

ПП 40788.